К 84.09(=Чув)
Е91
Ч-40346

ГЕОРГИЙ ЕФИМОВ



# ШУХĂШ ПАЙĂРКИСЕМ

Национальная библиотека ЧР
4-040346

К Ф
К84ч9(=Чув)
Е 91

## ГЕОРГИЙ ЕФИМОВ

# ШУХĂШ ПАЙĂРКИСЕМ

Сăвăсем
Поэмăсем
Шухăш пайăркисемпе
аса илу тĕпренчĕкĕсем

Кр.

Шупашкар
2005 çул

УДК 881. 512 – 111
ББК 84 (2 Рос-Чув) – 5
Е 91

Ефимов Г.А.
Е 91 ШУХĂШ ПАЙĂРКИСЕМ. Сăвăсем, поэмăсем, аса илӳсем. Шупашкар. Чăваш писателĕсен “Калем” издательстви. 2005 ç. – 240 с.

ПРОВЕРЕНО
2010 06 ОКТ 2017
Ч - 40346
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

“Калем” издательство
© Ефимов Г.А.

* * *

Ыталашаҫҫӗ, чуптӑваҫҫӗ,
Юратура пур вӑй-хӑват.
Кайран калаҫса татӑлаҫҫӗ:
Ҫавӑрмалла – йӑва.

Ак, ҫырӑнма каяҫҫӗ,
Туй шыльӑкӗ кӗр-кӗрлет.
Унтан кӗлете хупаҫҫӗ,
Савӑшмалла пӗрле.

Савӑшу – вӑл ҫамрӑк ӗмӗр,
Савӑшу – ҫын телейлӗ ялан.
Вӑл – чун канӑҫӗ,
Вӑл – чун хӗмӗ, –
Пӗтӗ йӑх
Савӑшу пулмасан...

*1.03.04.*

* * *

Куçран пăхатăп та – куçу
Тарать инçетелле хуллен.
Эс пăхнинче ăшăлăх çук...
Пĕлменлĕхĕм ÿсет куллен.

Чĕре те кăлтлатса тапать:
Улшăнăва сисет пулас.
Манпа вылясшăн-тăр шăпа? –
Апла малашшăн вăй пухас.

*5.06.04.*

* * *

Кашнин пур хăйне майлă кун:
Пĕрин – сар кайăк, теприн – куккук.
Ун чух пырсаччĕ Сан патна,
Эп куртăм чыслă сăпатна, –
Ĕлĕкхи марччĕ, çирĕпленнĕ,
Çунатне сарнă та çĕкленнĕ:
Мĕн калăн? – çамрăк та ачаш, –
Упраннă асăмри чăваш, –
Ман яшлăха эс алă патăн,
Иксĕмĕр вĕçрĕмĕр хăлатăн.
Ни кĕмĕл, ылтăн кирлĕ марччĕ,
Çĕн туйăмăм йÿçсе хăпарчĕ...
Хĕрун чуптурăн та мана,
Пуçланчĕ çĕнĕ самана!..

*1.02.04.*

* * *

Куҫпа куҫ калаҫнине
Асӑрханӑ пулӗ тетӗп.
Вӑл вара ик ҫын чунне
Ҫирӗп ҫыхнине пӗлетӗп.

Алла-аллăн тытăнсан,
Алăсем те калаҫаҫҫӗ.
Ҫепӗҫҫӗн ыталасан,
Ӳт-пӳ ăшшине туяҫҫӗ.

Урасем те хăйне май
Кӗвӗллӗ сăмах тупаҫҫӗ:
Пуҫласан тăпăртатма
Хӗрсех ташлама тухаҫҫӗ.

Ялан хатӗр хăлхасем
Ыррине ҫеҫ итлемешкӗн.
Чăнах савнине пӗлсен,
Вăл хистет унта ҫитмешкӗн.

Тутасем, ах, тутасем –
Хăйсемех-ҫке туртăнаҫҫӗ, –
Юрату хӗмне сиссе
Пӗрлӗх пичетне ҫапаҫҫӗ.

Ахальтен йăрăс ӳт-пӳ
Ҫамрăк-кӗрӗме памаҫҫӗ.
Хӗрӗ – акăш, эс – ӗмпӳ, –
Иккӗн еткере упраҫҫӗ.

*1.03.04.*

* * *

Лере кайсан яланах хура,
Ни хӗвел, ни ҫӑлтӑр ҫук.
Выртатӑн пӗччен – килӳнте – тупӑкра
Сӑра е эрех ӗҫес чух.

Эп тӗттӗме хӑнӑхман,
Ҫутӑ кун
Илӗртсе, йыхӑрса тӑнӑран,
Кунтан кайӗ-ши ман чун? –
Каятех пулӗ ҫав, – мӗн тӑван.

Эп пурнӑҫа юратнӑ, – ҫавӑнпа
Хӗвел умне пӗр куна
Кӑлар мана, шӑпа.
Вӑрттӑн сӑнам тӗнчене:
Тен, шутласа тупнӑ
Мӗн те пулин ҫӗннине?

*1.03.04.*

* * *

Чӑваш ҫӑлтӑрӗ, ҫун-ха, ҫун,
Тух тӗтре хыҫӗнчен.
Пуҫланмалла ҫӗнӗ кун
Мӗнпур шевлесен вӑйӗнче.

Нушана, хурлӑха сирсе
Чӗн, эс, ман чӗрене уҫлӑха.
Эп типтерлӗн те ҫирӗп пӗлсе
Чӑнлӑха
Калӑп хам халӑха.

*1.03.04.*

* * *

Хăш-пĕр чухне эп шăпама шанатăп,
Вăл çуммăнах утать пек туйăнать.
Анчах пит тимлесе пăхатăп та –
куратăп:
Ăрша çеç хумлăн-хумлăн вăй вылять.

Пылне те, эрĕмне те тутанатăп,
Ĕçетĕп çăл куçри тăп-тăр шыва.
Яшлăхăма эп аллăма паратăп,
Чунра вылять асамлă çĕн хăват.

*5.06.04.*

* * *

Анне, астăватни, вăл вăхăтри çăкăра,
Çĕр улмипе, мăянпа çăрнăскере,
Çирĕм эп сан умра,
Макăра-макăра, –
Çăлăнăç тупнă эпир çавах тĕнчере.

Çав кунран эп вăрçа
Курас марччĕ тесе тупа тунă.
Ĕмĕр-ĕмĕр тăнăç пурнăçа,
Хывса никĕсе, пуласлăхшăн çуннă.

Леш тĕнчере халĕ эсĕ, анне, –
Сăмах чĕнейместĕн, – ăс панине
Ас тăватăп яланлăх, – тасан.
Эс калана пекех,
Тĕнче чăнлăхне
Пурăнатăп чунра упраса.

*1.03.04.*

* * *

Пăлханусăр пурăнаймĕ ĕçлĕ чун,
Хура пĕлĕтпе хупланчĕ çутă кун.
Çиçĕм çиçĕ те сас парĕ аслати,
Чĕкеç килчĕ, – çĕре анĕ ăшă тин.
Хурлăх килĕ, – йĕрсе ярăн вăтанса,
Кам-ши илĕ куççуле ун чух шăлса?
Хĕн-хур витĕр, нуша витĕр тухмасан
Аслă пурнăç тутине мĕнле туян?
Çын пурне те курмалла та пĕлмелле,
Çавăн чух хакла пуçлатăн хĕвеле.

*18.02.04.*

* * *

Вун саккăрта чи ырă вăхăт мар-и?
Эс кайăк евĕр ирĕклĕн вĕçен.
Пĕрре çӳл ту çине пырса эс ларăн,
Тепре вăрманăн-улăхăн çӳрен.

Çумăр çусан та хĕвеле куратăн,
Пусать те тунсăх – сирĕлет тĕтрен.
Хĕр пăрăнса кайсан кăшт хурланатăн,
Çавах та çăвĕ ирĕлмест чĕрен.

Сан тавралла хăй майлă ырă ирĕк,
Ĕç йывăр-и? – пачах пуçа усман.
Ир пуçланни хуйха-суйха йăлт сирĕ, –
Шăпа пирки пĕрре те шутламан.

Вун саккăр хăйне майлă хыçа юлчĕ,
Вăл иртсе кайрĕ ăшă çумăр пек.
Çапах та вăл кун-çулшăн никĕс пулчĕ,
Халь ун вăйне куллен туятăп эп.

*20.02.04.*

* * *

Ăсатнă чух та йĕреççĕ,
Тĕл пулнă чух та макраççĕ.
Кайнă пулсан та килеççĕ,
Кайнă пулсан таврăнаççĕ.

Çапах та кашнин телейĕ
Пĕр пек мар, куран.
Пĕри килне килеймĕ,
Теприн тӳрленет суран.

Виççĕмĕшĕ çӳреймĕ
Çĕр тăрăх утса. Пытарнă
Ăна инçетри çĕре.
Асăнмалăх çыру хăварнă.
Вăл упранать йăх-тĕпре.

Тăшманĕ питĕ хаярччĕ:
Аркатрĕ ял-хулана.
Тăнăç кун-çул хакла ларчĕ, –
Çĕнтертĕмĕр тăшмана.

Çавах та тĕк мар-ха Çĕршывăм,
Ураççĕ аташнă çынсем.
Эпир пурăнатпăр-ха сыввăн,
Хытман-ха пирĕн чунсем.

Пурнатпăр, – çуртсем тăрлатпăр,
Ача сас парать тĕнчере.
...Ăсатаççĕ – киле таврăнатпăр,
Суранлă пулсан та чĕре.

Суранлă пулсан та чĕре
Ыранхине куратпăр.
Ма тесессĕн шанчăк çӳрет –
Пысăк шанчăк! – апла пурнатпăр.

*23.02.04.*

* * *

Ӑҫта эс ҫамрӑклӑх? Ӑҫта ҫӳрен?
Ма тӑратса хӑвартӑн тӑр пӗччен?
Йӑлтах сан халӗ урӑх йыш иккен,
Ӗлӗкхиллех ташлан вӑйӑсенче.

Ӗлӗкхиллех хӗре эс ӑсатан,
Чи ӑслӑ, ырӑ сӑмахсем калан.
Хирте ҫӗмӗрттерсе кӑна ӗҫлетӗн,
Вӑй-халупа пурне тӗлӗнтеретӗн.

Ҫӑварнире пар лашапа чуптарнӑ,
Мӗнле-ши купӑс чӑтнӑ алӑра?
Вӗҫтернӗ май
Юртан хӗм ҫеҫ кӑларнӑ
Янранӑ ахӑрса йӗс шӑнкӑрав.

Эй, кам шутланӑ пуласса ҫапла.
Ҫӳретӗп эп туяпала хуллен.
Эп мар, урӑххисем юрӑпала
Тухаҫҫӗ Атӑл хӗррине куллен.

Ҫамрӑклӑха улӑштарать-мӗн ватлӑх:
Пырас пулать йӑх-тӗпӗн ҫӗнелсе.
Ҫӗнелӳре никам пӗлмен хӑватлӑх
Этем ятне тек тӑтӑр ҫӗклесе.

Аталану чуна савӑнтарать,
Ҫапах шеллетӗп хам ҫамрӑклӑха.
Пӗлетӗп: кунпа ҫӗр ылмашӑнать,
Килес ыран – хӑй евӗрлӗ паха.

*23.02.04.*

* * *

Çуркунне хăват парать мана
Çут хĕвел шевлипе выляса.
Таврана чĕрĕлӳ вăл сунать
Ешĕл тĕсĕпеле сăрласа.

Çуркунне ялан тăрĕ асра
Çĕнтерӳ ялавне çĕклесе.
Тĕнчере пĕтĕм ял-хулара
Пурнăç пырĕ ялан çĕнелсе.

Çуркунне – вăл пуласлăх, малаш,
Юрă-ташă, чечек вăййисем.
Сухаланă та акнă чăваш,
Уй-хире кĕртнĕ тулăх илем.

Çуркунне пурнăçа юратса
Çиçтерет салютпа таврана.
Юрату кĕввине шăратса
Çĕнĕ вăй хушать харсăр çынна.

*24.02.03.*

## ХĔРЛĔ ÇĂМАРТА ПИРКИ

Мария Магдалина каять Рима
Христос чĕрĕлнине хыпарлама.
Тиберий патша пӳлĕмне кĕрет,
Ыр хыпара сăпайлăн пĕлтерет:
"Христос чĕрĕлнĕ!.." Ун умне
Хурать хăюллăн чăх çăмартине.
Патша курать: шап-шурă çăмарта...
Куçне чарса пăхать вăл çавăнтах.
"Этем вилсен, нихăçан та чĕрĕлмест,
Куна пултараймастăп эпĕ ĕненме!
Шур çăмарта ялан шурă юлать..."
...Ак шурă çăмарта куç умĕнчех
Хĕп-хĕрлĕ тĕспе витĕнет çийĕнчех.
"Иккен вилсессĕн те чĕрĕлме пулать!.." –
Шутлать патша, – сăмах чĕнеймест,
Çăмарта хĕп-хĕрлĕ... тивет ĕненме.

Çакă кунран Мăнкун çăмартине
Хĕрлĕ тĕспе сăрлаççĕ çулленех.
Ара, çăмартаран чĕпсем тухаççĕ,
Çĕнĕ чунсем çуралса савăнаççĕ, –
Ахальтен мар саркайăксем юрлаççĕ...
Çапла, – пурнăç пуçламăшĕ çăмарта!..
"Чăн чĕрĕлнĕ!.." калатăп кăмăлтан.

*24.02.04.*

* * *

Пулса-и эсӗ пуҫлӑх ӗҫкинче?
Унта ларатӑн эсӗ чура пек.
Мӗскер пытаннӑ унӑн черккинче? –
Ӑна пӗлменшӗн питӗ хӑрап эп.

Сӗтел сӗтел пекех... Ирӗклӗх ҫук.
Тӳрех калас килет, – чӗре хӑрать.
Йӑпӑлтисен чӗлхи юхтарать ҫу,
Ҫавӑ чӗлхе ҫукран-мӗн пур тӑвать,
Хыт ҫӑкӑра кулач пек тыттарать.

Епле пулас-ха манӑн икӗпит?
Пӗр шит – кирек хӑҫан та вӑл пӗр шит.
Пуплес килмест – калаҫасах пулать.
Кӗтетӗн канӑҫ – тар юхтармалла.
Ташласчӗ те юрласчӗ ӗмӗре, –
Сыхлаççӗ-ҫке... Сыхлаççӗ куҫкӗрет...

Чире перен...
Каятӑн хӑнаран, –
Ху пур, ыранхи куншӑн та хӑран.

Анчах йӑпӑлтатманшӑн,
Пуҫ тайманшӑн
Хама калатӑп: "Ҫӗнтерӳ ку маншӑн!.."

*1994 ç.*

## КĔÇĔН ÇЫН

– Ав, каять кĕçĕн çын шыв ăсма.
– Ай, ытла та чиперрĕн утать!.. –
Кантăкран, ак, пуçлаççĕ пăхма:
Çын çынна тĕсеме юратать.

Кĕçĕн çын ут-пĕвне, стайлăхне, –
Çара пуçăн е тутăр çыхса, –
Вăл каять шыв кӳме çăл патне, –
Самантрах йăлт параççĕ татса.

Кĕвенте хулпуççи çийĕнче.
Ку урам – кĕçĕн çыншăн çĕнни.
Кайран пĕтĕм кун-çул тăршшинче
Асра тăрĕ ял-йыш сăнани.

Йывăр, йывăр яла килĕшме.
Шĕкĕлчеççĕ кăна майăр пек.
Пăхаç майăрĕ шăтăк теме...
Танлаштарчĕç кĕçех чечекпе.

Калаçу эрне ирттĕр – йăнать.
Кĕçĕн çын – ял çынни шутĕнче.
Малашне унăн ăнтăр кăна,
Ачапча
Патăр сас килĕнче.

*1995 ç.*

## ЮРАТНИНЕ ПУЛА

Юратнине пула,
Юратнине пула
Хурӑн ҫумне таянтӑм.
Пӑшӑлтатаҫҫӗ ҫулҫӑсем.
Ачаш та ырӑ сӑмахсем,
Юратнине пула – ӑнлантӑм.

Юратнине пула,
Юратнине пула
Ҫырла пахчи илемлӗ.
Пылак та тутлӑ ҫырлисем,
Савни тути пекех вӗсем,
Юратнине пула – телейлӗ.

Юратнине пула,
Юратнине пула
Сӗм каҫ та пирӗн ҫутӑ.
Утатпӑр алран-ал тытса,
Куҫран ытарайми пӑхса,
Юратнине пула – ыр туртӑм.

Юратнине пула,
Юратнине пула
Тӗнче те ирӗк, аслӑ.
Таса, хастар кӑмӑлпала
Иксӗмӗрӗн пурӑнмалла,
Юратнине пула – пӗр саслӑн.

*1997 ҫ.*

## АХ, САВНИҪӖМ...

Сарă ҫулҫă, кӗрхи ҫулҫă
Вӗҫсе ӳкрӗ ман ума.
Туйăнчӗ каланăн уҫҫăн:
"Сире вăхăт уйрăлма".
Ах, савниҫӗм, ыр савниҫӗм,
Ан ҫунтар ман чӗрене.
Ҫăвӗ ҫумăр, ҫиҫӗ ҫиҫӗм,
Уйăраймӗҫ чунсене.

Ҫын сăмахӗ, сив сăмахӗ
Ӳкрӗ пулӗ пуҫ ҫине.
Пурпӗрех кун-ҫул ахахӗ
Тӗсне ямӗ ӗмӗрне.
Ах, савниҫӗм, ыр савниҫӗм...
Ан ҫунтар ман чӗрене.
Ҫăвӗ ҫумăр, ҫиҫӗ ҫиҫӗм,
Уйăраймӗҫ чунсене.

Пурнăҫ пулӗ, пурнăҫ килӗ
Тăрăшсассăн аванах,
Пире ҫирӗплӗх вăл пиллӗ
Ҫутă куншăн яланах.
Ах, савниҫӗм, ыр савниҫӗм...
Ан ҫунтар ман чӗрене.
Ҫăвӗ ҫумăр, ҫиҫӗ ҫиҫӗм,
Уйăраймӗҫ чунсене.

Сарă ҫулҫă, кӗрхи ҫулҫă
Ыррине сунсам мана.
Ҫурхи ҫил те вӗрӗ уҫҫăн,
Ешӗллетӗ вăрмана.

Ах, савниçĕм, ыр савниçĕм...
Ан çунтар ман чĕрене.
Çăвĕ çумăр, çиçĕ çиçĕм,
Уйăраймĕç чунсене.

*1997 ç.*

## С.В.ЭЛКЕРЕ АСĂНСА

Ушкăн çăлтăрсен пуçĕ –
Элкер
Вăл талантсемшĕн çул уçнă, –
Пултару, ĕçлеме вăй çитер.

Чăваш сăвăçĕсен хушшинче
Элкер пурăнĕ ĕмĕр-ĕмĕр.
Унăн ячĕ – чăваш чĕлхинче,
Пурнăçра ун чĕрин хĕмĕ.

Çеçпĕлпе пĕр вăхăталла
Элкер те чăвашшăн çуннă.
Поэт
Çăлтăрсен ушкăнне малалла
Сĕм каçра ялтăрмашкăн суннă.

Çирĕпленчĕ чăваш чĕлхи,
Пĕтмешкĕн памастпăр ăна.
Унра – паянхи, ыранхи,
Çамрăк йыш çирĕп пултăр кăна!..

*23.05.04.*

Ч-40346

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

* * *

Пурӑнса ирттернӗ кун
Маншӑн чи паха парне:
Ма тесен тӗшши пур ун,
Вӑл ыраналла чӗнет.
Ҫавӑнпа та, хӗвел, ҫун,
Пехил пар тӑван ҫӗре.
Сахал пултӑр хура кун
Тӑрӑшуллӑ тӗнчере.

*27.05.04.*

* * *

Ах! тесен капланнӑ кӑкӑр
Уҫӑлса каять тӳрех.
Ҫӑмӑллӑн сывла пуҫлатӑп,
Тикӗссӗн тапать чӗре.
Ах тени те пулӑшаймӗ
Пур чухне те чунӑма.
Ал сулса иртсе каяймӑн
Чӑнлӑх тухрӗ-тӗк ума.
Ах та ах!.. – мӗнех тӑвайӑн
Утас ҫул тӑвӑрлансан?
Ҫирӗп тӑр! –
Хама калатӑп,
Нишлӗхе сиреп умран
Тӑрӑшсах...
Ҫавах сисетӗп:
Ах! тесе хуллен илетӗп.

*27.05.04.*

* * *

Ăс-хал та чăнлăх, юрату
Алран-алла тытса пырсан,
Намăса тухмĕ сан яту,
Çухатмăн чыслăхна нихçан.

Çавах асăрханни кирлех.
Усалĕ тăрĕ хыçалтах:
Пĕр систермесĕр вăл йĕрлет, –
Ăçта ан пыр – унта, кунта...

Çывăх çĕрте е инçетре
Упра пĕрмай юратăва,
Ăс-халĕ, чăнлăхĕ пире
Тек парса тăрĕç вăй-хăват...

*4.03.04.*

* * *

Паян та чĕррĕн куç умне
Мĕнпур иртни тухса тăрать.
Аса илсен юррисене
Куçа куççуль хăех тулать.

Пур хавасли те, пур хурли,
Юрă-сăввийĕсем аван:
"Ай, татса çирĕм çĕр çырли,
Тути тута çинче ялан..."

Эй, нушине те савнăçне
Халь тепĕр хут чăтас пулсан,
Тен, ларăн чĕркуççи çине
Çĕклем ытла та йывăртан.

Мĕн пулнине, мĕн иртнине
Сивлессĕм çук эп нихăçан.
Курма тивет курмаллине, –
Кам хăтăлайĕ шăпаран?

Шăпа тесе пуçа усман,
Упраннă шанчăкĕ чунра.
Кам çăпата хуçса курман,
Пушмак пулман тет урара...

*4.03.04.*

* * *

Кашни çыннăн пур хăй саркайăкĕ,
Кашни çыннăн пур хăйĕн айăпĕ.
Сарă кайăка вĕçертсен аларан
Тек тытаймăн.
Хăтăлаймарăн пулсан айăпран
Ыррăн пурнаймăн.

*2.05.04.*

* * *

Çитмĕл урлă та каçрăм,
Сакăрвуннă тултарăп.
Эп хамăн кун-çула
Халăха ялан парăп.

Урăхла мĕнле пултăр?
Вĕрентнĕ йăх-тĕпĕм.
Халăхпа пулмасан
Ятсăр-шывсăр эп çĕтĕп.

Çавӑнпа чӑвашшӑн
Ӗмӗре ӗмӗрлетӗп.
Ун телейӗшӗн ӑшшӑн
Сӑвӑсем кӗвӗлетӗп.

*4.05.04*

* * *

Вӑл панӑ сас палли
Пире ӑс-хал пухма.
Тӗнче умне тухма,
Шкул уçнӑ вӑл нумай.

Вӑл курнӑ хӗн-хурне,
Вӑл тупнӑ телейне.
Апла мӗн ӗмӗре
Яковлевӑн ятне
Упрар чун-чӗрере.

*19.04.04.*

* * *

Тинӗсе çумӑр çӑвать,
Шыв çине шыв тӑкӑнать.
Мӗншӗн çапла-ши?
Тинӗс шывӗ тӑварлӑ,
Çумӑрӗ çакна пӗлет пулӗ.
Тинӗс шывне кӑштах
Тӑварсӑрлатасшӑн мар-ши?

*19.04.04.*

* * *

Мĕнле эп пуранна-ши сансарран?
Пултараймастап калама.
Çухална пулаттам пĕр сассарран,
Тен, пĕтереттĕм чысама.

Юрать-ха вахатра йалт пулчĕ,
Юрать-ха патан аллуна.
Çапла ман ятам, чысам юлчĕ,
Эс çалтан çылахла чуна...

*19.03.04.*

* * *

Сывпуллашу саманчĕ. Калаçмаççĕ.
Куçсем кана сана-пите санаççĕ:
"Асран каларĕ?..
Е асрах хаварĕ?.."
Ялтрать куçран чан юрату каварĕ.

Сывпуллашу саманчĕ... Ал параççĕ.
Ак вакунсем хуллен кана шаваççĕ.
Каять-çке Юрату, алне сулса,
Юлать, ав, Юрату чунтан шанса.

*3.05.04.*

* * *

Эй, Тура амашĕ, –
Кун-çулан пуçламашĕ,
Пул чĕрере ялан.
Эсĕ манпа пулсан,
Эпĕ телейлĕ чунран.

Инçетре-и, çывăх-и,
Ан çулăхтăр çылăхĕ,
Таса кăмăлпа куллен,
Сан кăмăлпа çÿресен,
Тасалăп ĕнтĕ хуллен.

Çÿл тÿпе кăмăлĕ
Патăр мана çăмăллăх.
Юратупа кăна
Çăлма пулать çынна, –
Тÿсĕмлĕх пар ăна.

Эй, Турă амăшĕ, –
Чĕрĕлĕх пуçламăшĕ,
Пĕтер хаярлăха,
Çул уç ман халăха
Таса пуласлăха.

*4.05.04.*

* * *

Çитмĕл çиччĕмĕш хваттер
Килĕшет мана çавтер.
Çакăнта эп çитмĕл çиччĕ
Тултарасшăн тăрăшса.
Икĕ çиччĕ
Илсе килчĕ
Сывлăхпа телей йăтса.
Малашне те пурăнасшăн,
Хамăн кун-çула тăсасшăн,
Ма тесессĕн тус-тăван
Ырлăхне сĕнет ялан.

*27.05.04.*

* * *

Авалхипе хальхи
Тата килес кунсем
Тăванлăн çыхăнсан,
Ман ĕмĕрхи илем
Хăват парать çынна,
Çĕклентерет чуна.
Эпир çавăн чухне
Çĕн ĕмĕр вăй-халне
Туятпăр чĕрепе,
Хĕретпĕр ĕмĕтпе.

*18.04.04.*

* * *

Ирĕклĕхпе илем
Çынна телей пиллет.
Ирĕклĕхĕн сасси –
Чуншăн пуласси.
Таса йыхрав – илем,
Унпа уçăлаççĕ куçсем.
Ирĕклĕхпе илем
Яланлăх туслашсан,
Чăн-чăн маттур этем
Çĕкленет çӳл тӳпе таран.

*8.05.04.*

* * *

Юпа уйăхĕнче хурсем
Куллен самăрланма пуçлаççĕ.
Çунат сарса, йышпа вĕсем
Пĕве енне вĕçсе каяççĕ.

Хĕвеллĕ шыв ҫине шавпа
Анса лараҫҫĕ, ҫуйăхаҫҫĕ.
Шыва ҫапаҫҫĕ ҫунатпа,
Хăй майлă асамат караҫҫĕ.

Эй, ҫут ҫанталăк!.. Ырлăхна
Эс кашнинех савса паратăн.
Уҫса яратăн та чуна
Ача пекех савăнтаратăн.

Караслă пыл пекех ҫăра
Сывлăшпала эс киленетĕн,
Пăхать тӳпе ҫеҫ хушăран
Сивлеккĕн... Шăнтасса кĕтетĕн.

Ҫапах та хĕпĕртев пур чух
Ҫĕкленӳпе кăна утатăн.
Хаваслăха чарулăх ҫук, –
Кĕр тулăхне умра куратăн.

*28.05.04.*

* * *

"Юрату ҫĕр тĕнĕлне тытать",
Тетчĕҫ пирĕн шурă сухалсем.
Юрату нумай ҫулпа утать:
Кӳлешӳ те савăнăҫ унта,
Пĕрлешӳ те уйрăлу унта,
Ҫĕкленӳ те кӳренӳ унта, –
Йăлтăр кулă, иксĕлми илем
Вăйĕпе йăлт тыткăна илет.
Юрату ҫăлать,

Пуç кастарать,
Аслă тÿпепе çыхăнтарать, –
Ак мĕнле хăват вăл Юрату,
Унта сан çуралупа яту...
Ĕненетĕп эпĕ ун вăйне,
Çавăнпа хайлап сăввăмсене.

*30.05.04.*

* * *

*Ăваспурт Кипечри вăтам шкул учительницине Анна Тимофеевнăна асăнса*

Тимофеевна Анна... Анюта...
Чĕнсен те – илтместĕн мана.
Эс çыхнă чечеклĕ Тутăр
Вăрман витĕрех курăнать.

Курăнатчĕ... Халь çук ĕнтĕ эсĕ,
Унтан... Пĕр никам таврăнман.
Çамрăклăха ас илсессĕн,
Чиперрĕн те чыслăн пыран.

Мĕн-ма ас илетĕп? Ыр тунă
Хĕре манас мар, асăнас.
Çутти пулмалла иртнĕ кунăн, –
Çапла систерет шалти сас.

Ятна ас илеççĕ пулсан,
Пурăнатăн-ха эс, пурăнан.

*23.02.04.*

* * *

Астӑвӑм, эс ытла та йывӑр,
Вут-ҫулӑм... Ҫиҫӗм... Ҫуралу...
Сапатӑп та тулла пӗр ывӑҫ –
Эп пӗҫеретӗп кӗркунне хуплу.
Астӑвӑмсӑр этем ӗмӗлке ҫеҫ,
Тымарсӑр йывӑҫ пек
Вӑл кайса ӳкӗ.
Астӑвӑм пур – кунҫул хӗрӳн ҫиҫет,
Астӑвӑмпа
Тӗнче умне ҫын тухӗ.

Астӑвӑм – пурнӑҫ никӗсӗ.
Унпа
Аталанса пырать пирӗн шӑпа.

*24.02.04.*

* * *

Шеллемерӗ май хӑй ҫумӑрне,
Тӑкрӗ тӳперен таса шывне.

Хӗвел ҫеҫ хӑяккӑн пӑхкаларӗ,
Ӑшшине ҫителӗклӗн памарӗ.

Мӗн тӑвайӑн ҫут ҫанталӑкпа?
Пурӑнать хӑй евӗр ӑслайпа.

Чӑшӑл шӑтрӗҫ акнӑ тырӑсем,
Таврара ем-ешӗл тӗс, илем.

Аслати ҫӳл тӳпере кӗрлерӗ,
Эпир кӗтнӗ ӑш куна пиллерӗ.

*5.06.04.*

* * *

Джоконда мĕншĕн йăл кулать?
Çакна пĕлейменĕр эпир.
Тĕпчет пĕлесшĕн ял-хула,
Çухатнă канăçне уй-хир.

Вăрттăнлăхне тĕпчеççĕ ĕмĕр,
Çук, тупаймаççĕ тупсăмне.
Джокондăра художник хĕмĕ! –
Тухаймăн ун вĕçне-хĕрне...

*5.06.04.*

* * *

Глинка çуралать...
Çав вăхăтра
Шурă тумлă, сулхăнлă садра
Шăпчăк савăнса сасне парать,
Тин çуралнăскер
У-а! тесе ярать.
Тĕлĕнтермĕш дуэтсем пулаççĕ:
Анчах ачапа шăпчăк сасси
Асампа тĕлĕнтерсе янраççĕ.
Ик сасса çĕклет те çил касси
Пĕлтермешкĕн тавранаваскать...
Çак кунран легенда пуçланать:
Çавăнпа-мĕн Михаил Иванăч
Ыр кĕвве илсе чун-чĕрине
Романссем, симфонисем хайланă, –
Тĕпе хунă халăх юррине.
Çак кунран, тен, тытăнать Сусанин
Тăшмана хăюллăн аркатма,
Çак кунран Людмилăпа Русланăн
Дуэтне пуçлать пуль хайлама?

Глинка композитор вăй-хăвачĕ
Рассейри шăпчăксемпе пĕрле
Тĕнче умĕнче ятне хăварчĕ...
Иксĕлмест чăн Пултару, –
Кĕрлет!

*6.06.04.*

## БОЛДИНО САЛИНЧЕ

1.

Болдинăра эп Пушкинпа
Калаçрăм чăвашла.
Тухнишĕн çакăн пек шăпа
Турра тав тумалла.

Вăл кĕртрĕ хăйĕн кил-çуртне:
Лартса камин умне
Вуларĕ хăй çырнисене
Мана тĕлĕнтерсе.

Болдинăри кĕркуннене
Эп туйрăм çавăн чух.
Сапла... талант кайсан хĕрсе
Ăна чарма май çук.

*8.06.04.*

2.

Болдинăран вăл Натали патне
Мĕн чухлĕ çыру çырнă пăлханса?
Поэт шикленнĕ... Пăсмĕç-ши туйне?
Çавах вăл шаннă пурнăç ăнасса.

Ирĕклĕхпе лăпкăлăха ĕненнĕ.
Кил-йыш пуласлăха пĕлесшĕн çуннă.

Ку тăрăхра юланутпа çӳренĕ, –
Чун ĕмĕчĕ умра йăл илнĕ унăн.
...Поэт кунта хăйне телей çеç суннă.

*9.06.04.*

* * *

*В.Д.Димитриев профессора*

Вăта Сăвар –
Шур Шупашкарăн ашшĕ,
Апла-тăк, пирĕн тĕп хула
Йăх-тĕпсĕр мар,
Ун пур историйĕ,
Ун пур малашĕ.

Ай, мĕншĕн ĕлĕкрех
Тĕпчевçĕсем
Хăюсăр пулнă?..
Аваллăха вĕсем
Е иртнĕ ĕмĕре
Тытман-ши чĕрере?

Вăта Сăвар,
Кĕçĕн Сăвар –
Тĕпре Пăлхар...
Эпир апла асаттесемсĕр мар.
Чăнах, тăван хуламăр Шупашкар
Аваллăх никĕсĕсĕр мар.

Эпир аваллăх урлă
Паяна,
Килес куна
Паратпăр алă.
Пуласлăха шанатăп,

Пулмĕ хурлă:
Килеслĕх вăл ялан вăй-халлă.

Чăвашлăха тата чĕлхемĕре
Кам упраса хăварнă ĕмĕре, –
Мухтав та чыс!
Ун ятĕнче –
Сӳнми хĕвел, аталанан тĕнче...

* * *

Пулать. Пулмасть тесе каламăп.
Тинĕс тĕпне те саншăн анăп.

Пулать. Пулмасть теме кам хăйĕ?
Туманни çук çынсен ыр вăйĕ.

Ялтрать. Вăл ялтăрмашкăн тивĕç.
Тăраймĕ хĕвеле хирĕç сивĕ.

Çиçет. Ялан та çăлтăр çиçĕ.
Çиçкĕнчĕкне илмест-ши çиçĕм?

Кĕрлет, кĕрлет тапраннă тăвăл.
Хăй шырлăхне ялан вăл тăвĕ.

Çитет. Çапах та пурнăçлă этемĕн
Çитни пулман... Курман эп темшĕн.

*11.06.04.*

* * *

Пĕр нимĕн те хĕсмест ман кăкăра:
Сывлатăп эпĕ ирĕклĕн те ыррăн.
Çиетĕп хам пĕçернĕ çăкăра,
Хамах сухаласа акатăп тырă.

Шур хут ҫине ӳкеҫҫӗ йӗркесем,
Сас паллирен сӑмах шӑтса тухать.
Чунпа хӗрсе каланӑ шухӑшсем
Вӗҫеҫҫӗ Тӳпере пулса хӑлат.

Ҫапла. Ҫӑкӑрпа сӑвӑ пӗр тӑван.
Ан пултӑр ҫӑкӑр, – пуш-пушах сӗтел.
Ыр сӑвӑ парнелет сана хӗвел,
Сана йӗртет, телейлӗ те тӑвать.
...Апла ҫӑкӑр-тӑварлӑ пул, Сӗтел.

*18.06.04.*

* * *

Ӗнер эс сывӑччӗ. Манпаччӗ.
Паян больницӑра выртан.
Ҫак инкеке мана кам пачӗ?
Сывах эп... Эс асапланан.

Сан инкекне хама илесчӗ,
Анчах кун пек тума май ҫук.
Халь урама тухса ҫӳресчӗ
Кунсем хӗвеллӗ тӑнӑ чух.

Кӗтет чие те хурлӑханӗ,
Тунсӑха ӳкнӗ улмуҫҫи.
Помидорпа хӑяр йӑранӗ
Сана пуласшӑн чун уҫҫи.

Сад пахчи алӑкӗ енне
Пӑхаҫҫӗ пурте тӑрӑшса:
Эс яр уҫса кӗрессине
Кӗтет вӗл-ҫулҫӑ выляса.

Мӗн акнӑ, лартнӑ – кашниех
Сана сунать патвар вӑй-хал.

Эс ху туптанă телее! –
Пурăнмалла кăна кал-кал...

Çапла. Пурăнмалла. Çĕр урлă
Каçса пăхар-и? Мĕн унта?
Курассине эпир йăлт курнă, –
Пире мĕскер кĕтет тата?..

*19.06.04.*

* * *

Тус-и, тус мар-и –
Нуша килсен пĕлĕн.
Чунĕн кăварĕ
Çунмасть-тĕк ун хĕмлĕн
Сана вăл хăварĕ
Пĕччен, тăр пĕччен
Урам варринче.
Сана алă парĕ
Кĕтмен ырă çын.
Тус евĕр хăтарĕ
Инкек-нушаран.
Турре вăл кăларĕ
Мĕнпур суяран...
Çавăнпа икĕпитлĕх,
Тĕп пул тĕнчере.
Суялăх та шиклĕх,
Ан сĕкĕн пире.
Тус-и, тус мар-и –
Нуша çитсен пĕлĕн.
Тасалăх хăтарĕ,
Тата чунри Кĕлĕ...

*20.06.04.*

* * *

Республика кунне – ун уявне –
Эп пысăк ĕмĕтпе хаваслăн килтĕм.
Мĕнпур чăвашăн ыр ĕҫченлĕхне
Тĕп хулана
Кăтартас терĕм, – пĕрле илтĕм.

Таса та сарлака урамĕсем
Куҫа шартать хĕрсен тĕрĕллĕ тумĕ.
Таҫта пăхсан та иксĕлми илем,
Ҫĕн кĕвĕ кĕвĕлет Аталăн хумĕ.

Хастар чăваш пĕлет уяв тума:
Сăри, ай, техĕмлĕ, пит тутлă унăн.
Халăхпала аван утса пыма
Пире хуламăр савăнăҫне суннă.

Ҫĕнĕлĕхе васкаҫҫĕ туптама
Яш-кĕрĕмсем хĕрӳллĕ утăмпа.
Хураҫҫĕ вăй ҫĕн кунҫула уҫма, –
Пĕлеп: вĕсем – пирĕн килес шăпа.

*28.01.04.*

* * *

Чакнăҫем чакать ĕнтĕ вăй-хал,
Ĕлĕкхи пек чалăхса ҫурейменĕп.
Куранать хăш чух тĕтĕмсĕр ял,
Пĕрре кайсан кунта килсе лекейменĕп.

Ҫавăнпала-ши ҫунтарап ăша?
Киле-йыша мĕнле пăрахса кайăп?

Вара кĕтет çĕрти асап-нуша,
Çылăхăмсемшĕн лере тăвĕç айăп.

Халăхра çеç юласчĕ ырă ят,
Юласчĕ чăвашра сăвă-калавăм.
Ахаллĕн эп вăя
Яман сая, –
Акнă та вырнă, йышпа çапнă авăн.

Пулма вăй хунă яланах тĕпре,
Пичеврe çеç пыма хушман чĕре.

*28.01.04.*

* * *

Ан тив, тăвăлпа çумăр витĕр
Утмашкăн лекет хăш чухне,
Çавах сан патне эпĕ çитĕп, –
Чĕре йыхăран çурт тĕлне.

Йĕпеннĕскере хывăнтарăн,
Ăшăтса парăн сиплĕ сăра:
“Мĕнле-ха тухма хăрамарăн?”
“Юратнă чухне кам хăрать?..”

“Юрĕ... Чирлеме те пултарăн...”
“Чуптусассăн сипленĕп йăлтах...”
...Пĕр сăмах та пулмарĕ урăх, –
Ăшă пачĕ шерпетлĕ тута.

*28.01.04.*

* * *

Эс тунсăхлатăн-ши маншăн? –
Эпĕ пĕлместĕп.
Çул-йĕрĕмри тăманшăн
Ӳкĕнместĕп.

Лапка юр питренех çапать,
Пăхтармасть,
Юр ăшне ура путать, –
Йывăр утма.

Те эсĕ кĕлтурăн, те анне?
Вăй кĕрет урана...
Уçатăп ĕнтĕ уй хапхине,
Кĕретĕп урама.

Пирĕшти те çумрах пуль манăн,
Кам пĕлес пур?
Кантăкри çутă тăванлăн
Йыхăрать вĕт, кур!

Апла тунсăхланă та шаннă эс, –
Ман çумра, пĕлсем, эс пană хĕрес...

*1.02.04.*

* * *

Ан тив, йĕрсем пулччăр куç айĕнче,
Маншăн çаплах эс хитре те таса.
Пусна мар-и тин çеç вун çичче?
Куç-пуçра çав-çавах илĕртӳллĕ асам.

Йĕрсене тинкерме манăн вăхăтăм çук,
Пурпĕрех эсĕ йăрăс, пурпĕрех йăлтăран.

Çут хĕвел ваййинче йăлтăрать-ха куçу,
Апла малтанхи евĕрех юрататăн, саван...

*4.02.04.*

* * *

Кантăр варта Нарспи асапланать,
Сетнерĕ текех çук ун тĕнчере.
Йăмра тураттине умра курать:
"Сетнерĕм çук-тăк, эс ан тап, чĕрем".
Çапла-мĕн акăшсем те...
Мăшăрне
Çухатнă хыççăн тӳперен ӳкеççĕ.
Мĕскершĕн юрату вăйĕ хăш чухне
Вилĕме хирĕç тăраймасть...
Сӳнеççĕ,
Пат татăлса анаççĕ çăлтăрла.
...Сан, юрату, чуна сыхламалла!

* * *

Кив чиркĕве пуçларĕç юсама.
Ĕлĕк унта колхоз хуратчĕ тырă.
Кĕç кунта пуçлĕ кĕвĕ янрама,
Вăл парĕ çынсене сăваплă ырлăх.

Ик-виçĕ карчăк кулленех кунта
Мĕнле ĕçленине пĕлме килеççĕ.
"Эй, Турă, пулăшсам...", – тесе чунтан
Пĕрле хĕрес хываççĕ те пуплеççĕ.

Ĕнтĕ параймĕç пулăшу вĕсем,
Ыр сăмахпа ĕç тухăçне мухтаççĕ.

Вĕсен ăш сăмахне юсавçăсем
Цемент сĕрсех стена çумне хураççĕ.

Кĕçех ак чиркӳ уçăлĕ. Куллен
Тупенелле ăсанĕ таса кĕлĕ.
Яш-кĕрĕмсем венчет тума килсен,
Кил-йыш çавăрнине таврара пĕлĕç.

Кив чиркĕвĕн, юрать-ха, стенисем
Тата çĕр çул ним мар ларма пултарĕç.
Турра ĕненекен ĕçчен çынсем
Йăх-тĕп валли таса йĕрне хăварĕç.

*4.02.04.*

* * *

Эс пуррипе эп савăнатăп,
Эс пуррипе тĕнче куратăп.
Ан тив, эп туяпа утатăп, –
Курмаллине курса пыратăп:
Ав, пахчара хăяр шăтать,
Ачаш çулçи мана пăхать.
Чие хуллен чăмăртанать, –
Ăнса пулассăн туйăнать.
Улмуççисем çеçке тăкаççĕ,
Çĕре шур тĕспеле сăрлаççĕ.
Суханĕ ешĕл, –
Уйранпа
Ăна реххетленсе çиен...
Пăхатăн ăшă кулăпа,
Пĕрле пулнишĕн киленен.
Чăн юрату – кун-çул хуçи –

Пуласлăхпа малаш уççи –
Ман чунăмра йăл илнĕ май,
Чыслап хĕвеллĕ кунăма.
Çĕр чĕрĕлсе, пуянланса
Иксĕмĕрпе пĕрле пырать.
Лараттăм-ши эс пулмасан
Çак тулăх, ешĕл пахчара?

*3.02.04.*

* * *

Çуркунне çитрĕ. Шăпчăксем юрлаççĕ.
Уç кантăкран юрри вĕçсе кĕрет.
Чирленĕ çын куççульлине шăлать-çке, –
Чирленĕ çыннăн пурăнас килет.

Хăй ырлăхне парасшăн çут çанталăк
Мĕнпур хула-яла, тавралăха.
Кун-çул сунсан та пуçламан каçалăк –
Йăшнă çынна çурла кам парĕ-ха?

Ĕмĕчĕпе таçта та вăл çитет,
Анчах та вăй пĕтсех пырать куллен.
Халь унăн çав тери пурнас килет.

Пĕлмен-курман çĕрсем нумай тĕнчен...
Тăрасчĕ те утса кăна каясчĕ.
Этем шутлать: – Виç кун çеç пурăнасчĕ...

*3.02.04.*

* * *

Çĕрĕмĕре, чăнах та, питĕ йывăр:
Хăш-пĕр чухне ача сăпки майлах
Вăл сиктерет ăна: эс лăпкăн çывăр,
Тăвăл шавне пĕрре те ан тăнла.

Мĕн тăвăн? Çĕр çинчен каяççĕ
Чĕррисене йĕртсе, хурлантарса.
"Пире ан асăн..." – тупăка хураççĕ,
Лартаççĕ шăтăка кĕç антарса.

* * *

Хуйхи-суйхи çук ĕнтĕ вилнĕскерĕн...
Çĕр ним пулман пек тăрăшать, савнать, –
Вăл çулçă тăкĕ, тепĕр çул ешерĕ.

Çĕр йăлтах панă вăй хуран çынна:
Ак, выр, юрат, ÿстер ача-пăча, –
Хăв кун-çулна ху ан пĕтер анчах.

*3.02.04.*

* * *

Аванччĕ, лайăхчĕ кун-çул уçлăхĕнче,
Пухатчĕç пыл ĕçчен пыл хурчĕсем, –
Сĕнетчĕ савнăçне кашни чечек, –
Пуç кăшăлĕ çыхатчĕç сар хĕрсем.

Хĕвел хĕртсе ярсан туйăмсене
Тавралăх туйăнатчĕ çăтмах пек.
Ас илнĕ май иртнисене
Малаш енне
Пăхаттăм эпĕ çивĕч куçсемпе.

Хăватлă туйăмсем ман туйăма
Инçе çĕрсем куллен йыхрană май,
Эп тăтăм хуллен çеç çĕртен хăпма, –
Сисмесĕр кĕленче кермен лартма.

Пĕлмен çав эпĕ тăвăл тухасса, –
Пыл хурчĕсем çумăр айне пулаççĕ.
Керменĕме кайсан аçа çапса, –
Ванчăкĕсем çеç йăлтăрса выртаççĕ.

Паллах, ĕмĕт пурри çавтер аван,
Анчах çĕрпе тек пултăр çыхăну.
Çуртне ларт кирпĕчрен те йывăçран,
Кăткăслăха тĕпчетĕр ăс-тăну.

Мĕн тăвăн? Илем кирлĕ этеме,
Вăл унсăрăн чухăнлансах юлать.
Çĕклемĕ йывăр çыннăн... Çĕклеме
Маттур çын çеç сăрт еннелле йăтать.

*31.01.04.*

* * *

Ан тив, кунсем пӗр йӗр те ан хӑварччӑр,
Пулни-иртни ҫавах юлать асра.
Тус маррисем санран пӑрӑнса тарччӑр,
Санпа пӗр шутлӑ ҫын тӑрать умра.

Тепӗр чухне суйма пултарӗ шанчӑк,
Шӑпа пӗр пек килмест пурӑнӑҫра.
Кам ырӑ тунӑ, ҫав ҫынна ан манччӗ:
Хӑвнах йӑлт кирлӗ пулӗ малашра.

Чунпа чун ҫывӑхланнӑ – ҫывӑхлантӑр,
Хушша-хуппа ан кӗрт пӗр никама.
Тӑван пӑхать-и урлӑ – йӑлтах мантӑр,
Вӗчӗпеле юрамӗ пурӑнма.

Элчелӗ те хура куна шураттӑр,
Шанчӑкпала пӗр шухӑшлӑ пулса.
Пӗлетӗп эп: халӑх чӗриййӗ паттӑр, –
Нуша тесе ҫӳремӗ пуҫ усса.

Кунсем те хӑш-пӗр чух асилтереҫҫӗ
Ҫавӑн чухне ӑҫта, мӗн пулнине.
Вара вӗсем историе кӗреҫҫӗ,
Йӑлт ҫутатса яраҫҫӗ ҫын чунне.

*10.02.04.*

* * *

Йĕкĕр мăйăр тупрăм шĕшкĕлĕхре,
Ăна тӳрех катса çимерĕм.
Хĕр-тусăма, ĕмĕре савнăскере,
Шак хурса та пулин парас терĕм.

Чылай тупрăм кăрăç юманлăхра,
Тăварласа хутăм хăналăх.
Ĕçсем пĕтсен, хамăр ялти клубра
Кашнин умне лартăп асăнмалăх.

Витĕрех курăнать хĕрлĕ палан, –
Татрăм-татрăм – кукăль пĕçерĕп,
Уяв çитсен, иккĕн санпалан
Ларса çийĕпĕр... Савни, кĕттермĕп.

...Йĕкĕр мăйăр сар хĕр аллинче,
Икĕ çĕрĕ çĕн машин çинче.
Туй лартаççĕ йĕкĕт килĕнче...

*13.02.04.*

* * *

Çын савăнать вăрман вилĕмĕпе:
Ун умĕнче юман, çăка, пилеш, палан.
Йăлт тыткăна илет чечекĕпе
Йĕпе çулçă айне пытаракан шăлан.

Çулçăсемпе вылять канăçсăр çил,
Кас-кас килсен, – çăка тăрне авать.
Çак вăхăтра: “Савниçĕм, кунта кил...” –
Теес килет, – чунра тапать хăват.

Хӑват тапать... Кун хӑйӗн ӗҫӗпе
Ыран валли никӗс хывса хурать.
Улӑх-ҫыран, ҫырма илемӗпе
Куллен-кунах хӑй ҫывӑхне туртать.

Хӗвел ансан шыратпӑр канӑҫа,
Ӗшеннӗ ачапчи ыйха путать.
Каҫ ҫӗнӗ вӑй парать те пурнӑҫа,
Тӑрсан ырпиллӗн хирелле утать.

Турат ҫумне ҫӗнӗ турат хушса
Илемӗпе вӑрман савӑнтарать...
Пуҫ тавралла хуллен шухӑшласан,
Тӗнче кун-ҫул валли веҫех парать.

*13.02.04.*

* * *

Кӗлетлӗ вар вӑрманӗнче ҫӳретӗп,
Асилӳсен ҫӑмхи тек сӳтӗлет.
Шӗшкӗлӗхе хуллен пырса кӗретӗп,
Вӑл хӑйӗн сарӑ мӑйӑрне сӗнет.

Хуруй енчи юманлӑхра эп татнӑ
Пӗр хӗл каҫмалӑх кӑрӑҫ, уплюнкка.
Ҫывӑракан мулкачӑна вӑратнӑ,
Чакӑртататчӗ канӑҫсӑр чакак.

Кӗлетлӗ вар вӑрманӗнче яш кунӑм
Манӑҫа юлнӑ хӗр ытамӗнче.
Ҫавӑнпала яла кайсассӑн чунӑм
Хӑш чух ҫӳрет Ваҫик уҫланкинче.
Хурӑн ҫырли татса...

Çамрăклăха
Кам каялла тавăрса парĕ халь?

*14.02.04.*

* * *

Тĕлĕнтерен эс, манăн Чăваш енĕм,
Ĕмĕтленсе пыратăн малалла.
Хăвăн йыхравлă ялавна çĕкленĕ:
Апла мĕнле шут тытнă, – вăл пулать.

Уйсем-хирсем сап-сарă тум тумланнă,
Тăри юрри вĕçет тавралăха.
Кур, Атăл та çĕнелнĕ, аталаннă, –
Вăл ыр сунать ман ĕçлĕ халăха.

Паянах мар пулсан та, – сан ĕçченлĕх,
Хастарлăху, çук, чакмĕ нихăçан.
Ăсу-пуçу çӳл тӳпене çĕкленнĕ, –
Унта ятне хăварнă Андриян.

Халь вăйпитти эс, Чăваш енĕм манăн,
Шанатăп: улăпла эс аталанăн.

*14.02.04*

* * *

Юр çунă чух çанталăк ăшă,
Утма йывăртарах кăна.
Юра пăхмасть, – çӳлте пĕр мăшăр
Вĕçет, – пит хăраман чана.

Вĕсем шыраççĕ пулĕ хӳтлĕх,
Ма кайнă-ши ытла инçе?
Вĕсем канасшăн ĕнтĕ путлĕн
Хăйсем хăтланă йăвинче.

Эп те вĕсем пекех васкатăп,
Пур манăн та таса йăва.
Уçсассăн алăка куратăп:
Ачи-пăчи мĕнле хавас!

Утас пулать-ха ман унччен.
Çут чӳрече курăниччен.

* * *

Саватăп эп ăна. Саватăп ĕмĕрех.
Пĕчченччĕ вăл. Эп те çавтер пĕчченччĕ.
Кĕтетчĕ такама ман тунсăхлă чĕре,
Çав вăхăтра мана вăл туслăн чĕнчĕ.

Сасси паян та манăн хăлхара
Янрать кĕвĕ пекех асран тухмасăр.
Тем каласассăн та телейĕмçĕм пурах!
Халь пурăнатăп тунсăхсăр, тумхахсăр...

*4.02.04.*

* * *

Ылттăнпа чапшăн хăшĕ-пĕрисем
Патшалăха сутса яма та хатĕр.
Чунра нихçан пулман-тăр туррисем, –
Хăйсем кăна маттур та питĕ паттăр.
Илеççĕ сутăн сара хĕрсене,

Арăм пурри вĕсемшĕн ним те мар.
Çĕр çийĕнче мĕн пур, –
Йăлт вĕсене
Е уççăнах, е вăрттăн пыр та пар.

Пулать-ши чаракан сĕмсĕрсене?
Е ун пек çын килмен-ха çĕр çине?

*9.02.04.*

* * *

Шап-шурă тикĕс хир йĕри-тавра,
Пуç тăрринче сенкер кăна тӳпе.
Епле аван чуна çак шăплăхра,
Утатăп эпĕ ĕмĕр еккипе.

Ăçта кăна çитместĕн шухăш май,
Мускав, Париж... – тухаççĕ куç умне.
Канар енне каятăп пек канма, –
Анчах ăçтан тупас-ши укçине?

Ак, умăмрах куян сиксе тухать:
Вăл выртнă-мĕн канмашкăн юр ăшне.
Шур мамăкли куçран час çухалать, –
Каллех тăрса юлатăп пĕчченех.

Таса хирте çуралнă ĕмĕтсен
Кĕрсе пырасчĕ пурнăçа куллен...

*4.02.04.*

* * *

Ачаччĕ эп. Тӳпенелле пăхса
Çут уйăхран çунат пама ыйтаттăм.
Вăл тӳпере пĕр евĕр йăлтăрса
Тăратчĕ... ним те памасса туяттăм.

Çавах та уçлăха çитсе курма
Ман ĕмĕт пысăкчĕ. Ялан та
Пĕр çăлтăрне алпа тытса пăхма
Вĕçес килетчĕ, – питĕ хĕн пулсан та.

Мĕн тăвăн ачана? Тӳпе енне
Кашнин вĕçме май çуккине ăнлантăм.
Çавах та Шуршăл паттăр йĕкĕтне
Ĕмĕрлĕхе пуçа тайса ăмсантăм.

Пĕлеп: ĕмĕтленни çавтер паха,
Уçса пырать вăл ман пуласлăха.

*7.02.04.*

* * *

Каçарсан – хăвăра та каçарĕç, –
Ку йăла ĕмĕр-ĕмĕр пырать.
Каçарсан – чуна çăмăллăх парĕ,
Вĕчĕ тытрăн – ан кĕт эс ырра.

Сарлакан пусса çеç ак утатăн,
Темле çăмăллăх пур ӳт-пӳре.
Чул пусмасть чĕрене, ху туятăн,
Ыр сăваплăх анать тӳперен.

Тавӑрас шут тахҫан пӗтнӗ санӑн,
Пит-куҫа та хаярлӑх витмен.
Хурланма сӑлтавсем пулмасассӑн,
Пуҫ усмастӑн, эс тӳррӗн ҫӳрен.

Хӑватне панӑ май тӑван ҫӗр те
Пулӑхне шеллемесӗр парать.
Чиркӳ алӑкӗ уҫӑ: – Кӗр... – тет,
Пирӗшти пуҫ тӑрне ларать...

*7.02.04.*

* * *

Е ӑнсӑртран, е шӑпама пула
Пӗррехинче эп куртӑм ыр куна.
Эп тухнӑччӗ ялтан инҫе ҫула, –
Кӗтмен ҫӗртен хуса ҫитет ҫуна.

Ҫӳҫеллӗ тутӑр ҫыхнӑ чипер хӗр
Ларма сӗнет, – эп лартӑм хаваспах.
Текех ашса утмастӑп ӗнтӗ кӗрт,
Хӗрпе ларап хӑюллӑн ҫуммӑнах.

Сивӗ кунра та юрату хӗрет:
Ҫак хӗр мана килне илсе кӗрет,
Сӗтел ҫине лартать ӗҫме-ҫиме.

Пулать вӗт ҫавӑн пек. Пӗрре курсах
Эп пикене пӑрахрӑм юратса, –
Халь ун патне пуҫларӑм ҫӳреме.

*9.02.04.*

## МОРИС ЯКЛАШКИНА

*Чăваш капеллин тĕп дирижерне, Раççей Федерацийĕн халăх артистне*

Килте Морис тесе чĕнеççĕ,
Шупашкарта Яклашкин теççĕ.
Пĕрлештерсен – Морис Яклашкин, –
Пит йывăр сан ĕçе тумашкăн.
Ална çĕклерĕн – хор пăхать,
Пÿрне хускатрăн – хор юрлать:
Пур шăнкăр-шăнкăр шыв сасси,
Пур вăшăл-вăшăл çил касси,
Шăпчăк кĕвви, тăри юрри
Эпир илтетпĕр пĕр кана.
Талантне панă çав Турри,
Мухтавлă дирижер, сана.
Ак, ахăрса каять сасартăк
Кĕр-кĕр кĕрлевлĕ аслати,
Ял! ялтăрать пин-пин кăварлăн
Куçа шартса çиçĕм çути.
Талантлă дирижер хăвачĕ,
Чун витĕр шăранса тухса,
Пире чăн юрă, кĕвĕ пачĕ, –
Нихçан та каяс çук манса.
Яклашкин! Чăвашсен мухтавĕ,
Тĕнче кĕвви – ун аллинче.
Пур классиксем пăхаççĕ авă
Дирижера портрет çинчен:
“Манăн кĕвве шăрат-ха”, – теççĕ,
Яклашкина хыт ĕненеççĕ.
Морис, ĕçле пĕр ывăнмасăр.
Лауреат, ялан пул харсăр!

* * *

Тунсăхпала çырма пуçларăм сăвă
Чĕреçĕме кăшт пусарас тесе.
Çапан та вут чульне – чĕрĕлет ăвă,
Кайран кăвайт хуран хĕпĕртесе.

Кăвайт çинче çунать ман иртмен тунсăх,
Кăварланса выртать вара умра.
Пурăнма çук, савниçĕм, ырă кунсăр,
Ялан та пулмалла сан ман çумра.

Эс вулăн çак сăвва. Тен, тухса килĕн
Кăвайт патне ман тунсăха сирме.
Е эс мана, е эп сана ытама илĕп
Яланлăхпа телей мĕнне пĕлме...

* * *

"Юлташу хăвăнтан лайăх пултăр..."
Эп пĕлеп-и-ха хам мĕнлине?
Эп кулсан, иккен, вăл та йăл култăр,
Эп курам вăл манпа йĕнине.

Лайăхпа усала кам пĕлеймĕ?
Усала эп курайăп епле?
Ăмсантарĕ ăна ман телейĕм...
Чулпа пемĕ-и вăрттăн çĕрле?

Эпĕ савнă хĕре куç хывман-и?
Тен, элеклĕн пуплет хыçăмра?
Ыйтусем, ыйтусем нумай манăн...
Пăт тăвар çимелле пурнăçра.

*16.02.04.*

* * *

Поэзи пуранать... “Вĕç, вĕç, куккук”,
“Асран кайми...” Янратнă чух тăрса,
Пиртен телейлĕ йăх та урăх çук:
Сăввипеле кĕвви чунран тухса
Ман халăх кăмăлне ярать уçса.

Унта куççулĕ, савăнăç, асап,
Унта пирĕн кун-çулăн чăн мухтавĕ:
Чăваш чĕлхийĕ витĕр туптанса
Кашни сăмахĕ тухнă йăлтăрса, –
Кĕвви чăнпа пуласлăх шăнкăравĕ.

Ман халăх – композитор, аслă сăвăç,
Аваллăха çурта пек çутнă май,
Хальччен пĕлменнине ăсталĕ, тăвĕ,
Алли ун – ылттăн, пур вăй пуранма.

Поэзи йыхăрать... “Асран кайми...”
Янрать чĕресенчен нихçан тухми.

*12.09.04.*

* * *

Кĕрт айне пулнă ĕнтĕ шухăшсем,
Çур çитессе кĕтсе халь пурăнатăп.
Ырри те, усалли те, – пĕр çĕклем, –
Шанатăп: пулмалла ахахĕсем,
Манман-ха вĕсене, йăлт ас тăватăп.

Юр айĕнчи шухăшсене пит шел,
Çавах та вĕсене упрать ăс-хакăл.
Пулăшăвне куллен сĕнет хĕвел, –
Вĕсем кашни-пĕри чĕрешĕн хаклă.
Ак çитĕ-ха, ак çитĕ-ха мехел.

Çуркуннепе, сисетĕп: шухăшсем
Çĕре тымар ярса
Чечек кăларĕç:
Илемлĕн шăтса тухĕç ыррисем,
Усаллисем
Шăтсан та хăрса ларĕç, –
Вĕсене хуплĕ ыррисен тымарĕ.

Шухăш шăнать, шухăш хĕрет...
Вĕри.
Чăн шухăшсен ялан тапать чĕри.

*9.09.04.*

* * *

Тамӑкра та пурнӑҫ пур,
Унта ҫылӑх ман ҫунать.
Хури ҫуннӑ май шап-шур
Сӑн кӗресшӗн таврана.

Иккен, ҫылӑхӗ нумай,
Унран хӗн ҫав тасалма.
Пӗлмен чыслӑн пурӑнма,
Акӑ, халь тивет чӑтма.

Чунӑн йӑлт тӳсес пулать,
Турӑ сачӗ – чӑнлӑхра.
Ав, тавралӑх ҫуталать,
Пӗтнӗҫем пӗтет хура.

Ҫӑмӑл тамӑка ҫитме,
Тухма йывӑр ҫав тери.
Пур асаплӑха сирме
Хал тупать-мӗн ҫын чӗри.

Хӑтӑлсассӑн тамӑкран
Чун йӑлт ҫӗнелсе каять.
Малалла тек талпӑнан
Пурнӑҫшӑн пухса вӑя.

*10.09.04.*

* * *

Чăваш – вăл эсĕ, эпĕ
Тата тĕнче пĕр пайĕ.
Ун хăйĕн чыс-хисепĕ, –
Туссемсĕр ăçта кайăн?

Аваллăхран вăл килнĕ,
Хăй чĕлхине упранă.
Пур халăхпа ăшпиллĕн
Туслашнă, аталаннă.

Çул-йĕрĕ хĕнлĕ пулнă,
Чунне яман сутса.
Вăрçи хаяр та юнлă, –
Йăх юлнă упранса.

Культура тĕнче витĕр
Чăн хурçăн шăранса
Паян куна-çке çитнĕ
Хăй пек ăнăçтарса.

Çавăнпала чăвашăн
Нумай чăн-чăн туссем.
Вăл вăй хурать малашшăн,
Вĕл-вĕлкĕшет Элем.

*9.09.04.*

* * *

Кĕр сăнĕ çапрĕ çут çанталăка,
Катăркаспа шăлансене татаççĕ.
Йышпа вĕçсе каймашкăн аякка
Кайăк хурсем ӳте хăват пухаççĕ.

Пан улмисем ӳксессĕн патлатса
Çĕçĕпе каснăн çурăлса каяççĕ, –
Сĕткен пухса,
Кĕрпеклĕхпе тулса
Часрах пухса хума пире йыхраççĕ.

Нухрепе кĕнĕ ĕнтĕ çĕрулми,
Мăрьесенчен тухать шăрши шăрттанăн.
Сар хĕр те халь кулмасть пули-пулми,
Амăшĕпе те калаçать вăтаннăн.

Ара, кĕр кунĕ хатĕрленĕ туй, –
Çур кунĕнче пуçланнă юрату...

*8.09.04.*

* * *

"Эсĕ е эпĕ?
Ыйту парар мар.
Кил-йышăн хисепĕ
Ан салантăр, упрар.
Пире кирлĕ пĕрлĕх,
Пĕрлĕх – телей.
Çурер мар пуç хĕрлĕ,
Пултăр – тĕллев.

*2004 ç.*

* * *

Илтрĕм эп: хыҫалта пăшăлтатрĕҫ:
"Мĕнле ҫамрăкчĕ... Халь туяпа..."
Чунăмра тунсăх туйăм вăратрĕ
Ҫумăмрах пыракан ман шăпа.

Шăпаран эс тарса хăтăлаймăн,
Кун-ҫулу санăн ун аллинче.
Унпала калаҫса татăлаймăн, –
Хуҫа евĕр ҫӳрет ҫĕр ҫинче.

Ҫамрăк пулнă.
Мĕнех?
Туя тытнă.
Эп ҫеҫ мар туяпа ҫӳрекен.
Сипленсе вырăнпах-ҫке эп выртнă, –
Хăраса нимĕнрен те ӳкмен.

Юрĕ. Юрĕ...
Халь тин найкăшас-и?
Пурăнап... Хĕвелтен пахи ҫук.
Яшлăхра ҫирĕпленнĕ уҫ сассăм
Янăрать-ха, – йышпа утнă чух.

Яшлăх иртнĕ,
Ара, ватăлма та
Пĕлмелле ырă кăмăлпала.
Ӳт-пĕве пурпĕр ҫирĕп тытатăп, –
Тав тăвап шăпапа кун-ҫула.

*1.08.04.*

* * *

Сётел умне
Ларас чухне
Эп сăхсăхса илетĕп.
Чунри таса сăмахсене
Шыратăп, шĕкĕлчетĕп.

Вĕчĕхӳпе хаярлăха
Вулакана сĕнес-и?
Хисеплесессĕн халăха
Аташса кайман эсĕ.

Пăр евĕр сивĕ сăмаха
Чĕри патне кам илĕ? –
Вăл тĕп тăвать юлташлăха,
Ун çук ăшăлăх килĕ.

Вырнаçайман ман чунăма
Наянлăхпа лӳппер кахаллăх.
Ял-йышпала ĕçе тухма
Ачаранах эп пулнă халлă.

Пăхатăп тăванла куçпа
Хире те, вăрмана та.
Хирĕçлесессĕн те шăпа –
Ту еннеллех утатăп.

Çавăнпала сётел умне
Уçăмлăхпа ларатăп.
Вулакана калассине
Таса чунпа калатăп.

*16.07.04.*

* * *

Саватӑп та чунтан шанатӑп
Мана эс ӑшшӑн пӑхасса.
Тӗллевлӗн, ҫирӗппӗн утатӑп
Кӗтсе илмешкӗн тухасса.

Тухмастӑн-и? Ку санӑн ирӗк.
Юратӑва кам чараять?
Мӗнпур чӑрмавлӑха вӑл сирӗ,
Вӑл пухӗ иксӗлми вӑя.

Хапха чӗриклетет. Тухатӑн.
Йӑл кулӑ йӑлтӑрать питре.
...Ак манӑн умӑмра тӑратӑн, –
Кам уйӑрӗ иксӗмӗре?..

*13.07.04.*

* * *

Ҫуллахи кунӑн аварне чӑматӑп,
Путатӑп чечексен шӑрши ӑшне.
Ирех саркайӑкпа тӑрса юрлатӑп,
Туятӑп уҫӑ сывлӑм сиплӗхне.

Ыраш шӑрши техӗмӗпе сывлатӑп,
Хурӑн ҫырли пухатӑп вӑрманта.
Кӑмпа патша пек, пуҫӑма таятӑп,
Чӗркуҫленсе ларса ӑна татап.

Ҫуллахи кун – кӗр кунӗшӗн ыр шанӑҫ,
Тӑри юррипеле тулать пучах.
Ҫуллахи кун – ӗҫлев те ырӑ канӑҫ,
Пӗлес килмест нуша пирки пачах...

*14.07.04.*

* * *

Чи хаклă сăмахсем “Атте”, “Анне”,
Калатпăр вырăсла “Отец” та “Мама”.
Çак икĕ сыпăклă таса сăмахсене
Эпир куçран пăхса каланă хамăр.

– Аçу пек çирĕп пул, – анне калатчĕ
Хаваслану парса пĕчĕкскере.
Туяттăм: кулă питĕмре вылятчĕ,
Сисеттĕм: вăй вылятчĕ ўт-пўре.

– Аннў пек ырă, тараватлă пул, –
Атте мана калатчĕ вырмара.
Ик çирĕп чун мана уçатчĕ çул
Малашлăха кĕме кун-çулăмра.

Вĕсем халь çук. Мана вĕсем çитмеççĕ.
Ара, куллен ăс парĕç-ши камсем?
“Атте”, “анне” те, “асатте” те теççĕ
Халь хамăра та ўсекеннисем.

Атте-анне... Чĕлхе çинчен каймаççĕ
Пире кун панă манăçми чунсем.
Яланлăх, ĕмĕре пилне параççĕ, –
Халь çук пулсан та, – йăх тăсма вĕсем.

*10.07.04.*

## А.Г.НИКОЛАЕВ КОСМОНАВТА АСӐНСА

Пӗлетӗп: Николаев ячӗ
Пур ҫӑлтӑрсен ушкӑнӗнче;
Тӗнчемӗр умӗнчи хӑвачӗ
Яланлӑх пирӗн чунсенче.

Унччен... унччен-ха вӑл йӑлт курнӑ
Пур асапне те хӗн-хурне.
Ачашламан пулсан та пурнӑҫ, –
Вӑл тупнӑ Ҫӗнтерӳ ҫулне.

Пӗрремӗш... Иккӗмӗш те Виҫҫӗмӗш...
Вӗсем тӗпчеҫҫӗ уҫлӑха.
Мӗнпур ҫӗршывсенче те килӗшрӗҫ, –
Мухтавлӑх кӳчӗҫ халӑха.

Ҫук, ӗненес килмест...
Кун-ҫуллӑ
Пулма ҫуралнӑ Андриян.
Кала-ха, вилӗм,
Мӗншӗн ҫулӑхрӑн?..
Вӑл пирӗнпе пурнать ялан!..

Ун ҫӑлтӑрӗ, сӳнми хӗвелӗ
Ӗмӗрсем урлӑ курӑнать.
Пушанмӗ космонавт тӗпелӗ, –
Вӑл йыхӑрать ӗҫчен ҫынна.

Чӑваш ҫӗршывӗ, Шуршӑл ялӗ
Андрияна мӗн ӗмӗрє
Упраса тӑрӗ ӗнтӗ халӗ, –
Вӑл хӑй те савнӑ ҫак ҫӗре.

*4.07.04.*

# ИРХИ СЫВЛĂМ

Ачалăх – вăл хăй пĕр патшалăх,
Тĕнчи – тĕлĕнтермĕш те çутă.
Унра иксĕлми ачашлăх,
Хырăм кăна пултăр тутă.

Вăрçă вăхăчĕ. Çăкăрсăр ларнă.
Çавах та пуçа усман.
Килтен хăш-пĕри тухса тарнă
Фронталла, тăшманпа çапăçма.

Ас тăвап: ирхи сывлăм çăватчĕ
Ура тупанне кашни кун.
Ирхи сывлăм тасалăх пачĕ,
Тен, таса çавăнпа пирĕн чун.

Йĕр юлатчĕ курăк çинче.
Сирпĕнетчĕç ахах пĕрчисем.
Сывлăм шывĕн ялтра пĕрчинче
Вăй вылятчĕç хĕвел шевлисем.

Фронтран çеç кĕтнĕ ырă хыпар,
Виç кĕтеслĕ çыру – сывлăха.
Çапах тухнă пулсассăн шăпа
Салтака пĕрмаях пурнăç пар,
Кунĕн-çĕрĕн сыхла халăха.

Эй, ачалăх, ирхи таса сывлăм
Халь чупатăп çарран улăхра.
Вăл калатăр мана: "Маттур ывăл,
Тăван çĕр илемне тек упра!.."

*12.01.05.*

* * *

Чуп-чуп уйăхĕ ĕмĕр пулаймĕ:
Хăш-пĕрин иртсе кайĕ вăл хăвăрт.
Ма тесен арăмпа чуна тăвăр, –
Çурес килнĕ çĕре тек каяймăн.

Юратма пĕлмелле тĕнчере,
Иккĕн пултăн – ку çирĕп тĕрек.
Савăшушăн çунса çурени –
Хăв чунна аркатни те суйни.

*11.01.05.*

* * *

Канаш енĕсем маттур –
Пур çĕрте те пултараççĕ.
Ырă кăмăллăхĕ пур,
Килес куншăн вăй хураççĕ.

Çавăнпа эп вĕсене
Анăçу кăна сунатăп.
Çĕнĕ ĕмĕр кун-çулне
Çирĕп тытасса шанатăп.

*06.01.05.*

* * *

Иртеççĕ кунсем, иртеççĕ,
Чараймăн тытса вĕсене
Сăн-пите йĕрсем йĕрлеççĕ,
Шутлаççĕ кун-çул шутне.
Текех çилçунатăн вĕçеймĕн,
Тупере ярăнаймăн хăлатăн.

Яш кунсем таврӑнмӗҫ, килеймӗҫ,
Ҫӗр ҫинче ҫавах ҫирӗп тӑратӑн.
Ку паха, чӑннипех те лайӑх.
Пӑх-ха эс ҫуллӗ ту тӑррине:
Хуҫа пек ларать ват ӑмӑрткайӑк
Халь виҫес пек тӳпе уҫлӑхне...

* * *

Ман атте ҫуралнӑ Раштавра,
Ҫак уяв ҫампа чӗрешӗн сывӑх.
Тӑрӑшса ӗҫленӗ колхозра,
Пулнӑ вӑл вут-ҫулӑмлӑ фронтра,
Килне ҫитнӗ, амансан та сывӑ.

Ҫӗвӗҫ те платник... Мӗнпур ӗҫе
Юратса та тӗплӗ вӑл тӑватчӗ.
Сӗрмекупӑс е кӗсле тытсан
Ташлама тухаттӑмӑр кӗҫех, –
Чунсене атте ҫунат паратчӗ:
Хӑй йӑл-йӑл кулатчӗ кӑмӑлтан.

Халь эс ҫук... Пасарлӑ пурнӑҫа
Курманни та аванрах-и тен?
Ҫав-ҫавах та чӑн килте хуҫа
Курӑнмасть, хӑналӑха килсен.

Хурланатӑп халь те эс ҫукран,
Ҫук никам канашласа ларма.
...Ҫав-ҫавах тухас пек хапхаран
Туйӑнатӑн ыррӑн тӗл пулма...

*11.01.05.*

* * *

*Л.П.Ефимова, ЧР тава тивĕçлĕ тухтăрне, хирурга хисеплесе*

Çулпа илсессĕн эсĕ манăн шăллăм,
Мана сиплерĕн пиччепе пĕрех.
Тӳрех калатăп: леш тĕнчерен вĕт çăлтăн,
Халь тикĕссĕн тапать куллен чĕре.

Çĕре çити пуçа таяс пулсан та,
Эп пĕтерейменĕп парăма татса.
Куратăп хĕвеле те, çăлтăра та
Тăранаймастăп уйăха пăхса.

Тĕнче çути калама çук-мĕн хаклă,
Сан ылтăн алă панă çав çутта,
Пĕлетĕп: сиплесси çавтер тăкаклă, –
Анчах та çын пурнать, хастар утать.

Санра яланлăх тивĕçпе ăс пĕрлешнĕ,
Эс ят яман ху ĕçӳнте нихçан.
Мĕн чухлĕ эсĕ вилĕмпе кĕрешнĕ,
Çынна тавăрса панă пурнăçа.

Тавах, тавах кун-çулшăн, çут хĕвелшĕн,
Ăнăçлăхпа телей сунап сана.
Эп мухтанмастăп, – çĕр çула çитесшĕн, –
Пыр ӳстерсех куллен ăсталăхна!

*10.01.05.*

* * *

Авельпе Каин пурнаççĕ
Хамăр йышрах:
Выляççĕ те кулаççĕ –
Савăнччăрах.

Анчах,
Асăрхан, тăванăм,
Каинăн аллинче
Çивĕч çĕçĕ пытаннă –
Самант çитиччен.

*28.12.04.*

* * *

Çĕнĕ çул – çĕнĕ ĕмĕт,
Çĕнĕ çул – çĕн шухăш.
Ешĕл чăрăш хĕмĕ
Ялтăравлă, шухă.

Юрату çĕн туйăм
Чуна парнелерĕ.
Хыçа юлчĕ хуйăх...
Хĕл мучи çÿрерĕ
Ыр Юр пикепе
Ăшă çут пилпе.

*04.01.05.*

* * *

*В.В. Гурьева – Канаш ен матурне*

Канаш енне сума суса
Эп сăвă çырнă сахал мар.
Владимир Васильча курсан
Кил алăкĕ ман уçă яр.

Ытарайми ыр кăмăлне
Эп туйса илтĕм ĕмĕре,
Чунтан тухан калаçăвне
Курса эп пĕлтĕм куç кĕрет.

Перекет банкĕ – вăл укçа,
Укçа пăсать чĕресене.
Эсир пĕлетĕр пурнăçа,
Эсир сисетĕр чăннине.

Укçа çинче –
Тăрать тĕнче,
Этем укçапала вылять.
Анчах чĕре хӳтлĕхĕнче
Этем ĕçпе çеç пурăнать.

Çавăнпала мала пăхса
Хаклатпăр хамăр кун-çула.
Ялан та пытăр сан ăнса,
Пуласлăхпа таса малаш!

*14.09.04.*

* * *

Туссем ĕмĕрлĕх пулни
Калама çук аван.
Çав туслăхра кун-çул ăнни
Килет йăлт хамăртан.

Пĕлместпĕр çав управлăха, –
Хаярланатпăр уссăр.
Хăш-пĕр чухне яланлăха
Тăрса юлатпăр туссăр...

* * *

Пĕр каласан, мĕн кулянас вилнишĕн,
Пурне те куртăм пурнăç тăршшинче.
Пуранна чух эп паранмасăр ишĕп
Кăтра хумсемлĕ тинĕс уççинче.

Ман вырăна тепри, ав, çуралать,
Хĕвел çине пăхать вăл тĕлĕнсе.
Çĕн çимĕçшĕн чечек те çуралать
Пĕтĕм тавралăха илем кĕртсе.

Ылмашăнсах тăрать кунсен ĕречĕ,
Çулталăк ешĕл чăрăшпа килет.
Тин çеç хĕр шухăшсăр кулса çуретчĕ,
Халь шыльăкра хавасла туй кĕрлет.

Юман йĕкелĕ симĕс куçне уçрĕ,
Кĕçех туйралăх пуçлĕ кашлама.
Вăй-халла йыш çапла çĕкленме пуçлĕ, –
Çуллен çĕкленме тивĕçлĕ вăрман...

*07.01.05.*

* * *

Пӗлӗтлӗ пулсан та Ҫӗнӗ ҫул
Куҫ ҫинче хӗвел шевли ҫиҫет.
Кӑмӑлӗ те сӗрнӗн пылпа ҫу
Йышпа саваӑнма кӑна хистет.

Савӑнӑҫӗ, чӑн та пирӗн пур:
Эпир сывӑ, ҫӑкӑрӗ – алра.
Читлӗхе сирсе, пулма маттур
Йыхӑраҫҫӗ ҫӗнӗ ҫӗршывра.

Йывӑрлӑх ҫителӗклӗ, мӗнех
Ҫӗнтерӳҫӗсем эпир ялан.
Нихҫан ҫынра курманнине
Туссе пӑхнӑ хамӑр йышпалан.

Ешӗл чӑрӑш ҫул пуласлӑхне
Хунӑ палӑртса халӑхпала.
Пӗлнӗ май кун--ҫулӑмӑр хакне
Шур юр витӗр курӑнать ҫулла...

*06.01.05.*

* * *

"Лайӑх тумшӑн кӗтсе илеҫҫӗ,
Ӑса май ӑсатса яраҫҫӗ..."
Йӑлтӑр-ялтӑр тумпа килеҫҫӗ,
Кайнӑ чух пите хӑрӑм сӗреҫҫӗ,
Вара ӗмӗр ҫапла пурӑнаҫҫӗ.
Тахҫанах курӑнмасть ӗнтӗ хӑрӑмӗ,
Анчах ҫыннӑн ят кайнӑ, куран.
Вӑл сывлать халӗ ассӑн та вӑраммӑн,
Чавса ҫывӑх... – мӗнле ҫыртаян?

*06.01.05.*

* * *

*Св.Н.Е*

Пĕр сана юратман пулсассăн,
Кампа пуранна пулăттăм эп.
Тен, çапла янрамастчĕ ман сассăм,
Çакăн пек курас çукчĕ хисеп.

Кил чысне эпир иккĕн сыхланă,
Кăларман асран Турă ятне.
Пĕрле, иксĕмĕр, пурнăç туптанă
Аркатмастпăр сунтал никĕсне.

Пўрнепе тĕллесе кăтартмаççĕ
Иккĕн пынă чухне урампа.
Çынсем хисеппе пуç таяççĕ,
Тав сана, ăнаçуллă шăпа...

Мĕн тейĕн? – хăш чухне чашăк-тирĕк
Шăкăр-шăкăр туса илкелет.
Сăлтав çук хурланма куншăн пирĕн.
Тута тăс – часах ку иртет.

Пурнасси малалла... Утăп çирĕп, –
Çулçине тăкакан йывăç мар.
Ĕçлеме те ĕçлетпĕр каç-ирĕн
Алран ал тытăнса юнашар.

Ытараймăн... пăхатăп, пăхатăп
Эпĕ санăн яштак пў-сийне.
Куçунта паян кун та куратăп
Иксĕлми юрату хĕлхемне...

*07.01.05.*

* * *

Çĕмĕртсенчен эп тĕлĕнетĕп:
Çеçке кăларнă вăхăтра
Шурă пĕркенчĕк пĕркенет те –
Венчетри хĕр пекех тăрать.

Çапла, çапла... Ăна çеçкишĕн
Мĕн чухлĕ хуçнă туратне?
Шур тумĕ яланах тасишĕн
Параттăмăр пикесене.

Вĕсем йăл кулăпа илетчĕç,
Пире калатчĕç ыр сăмах,
Вара вăййа тухсан кĕтетчĕç:
Пырать-и каччă ăсатма...

Çурхи кунсен ялтра хăвачĕ
Сахал паман пире парне.
Çав вăхăтра юрату ячĕ
Хускатнă яш чĕресене.

Уйрăлусем те ĕнтĕ пулнă,
Мĕскершĕн пытарас ăна.
Хăш-пĕрин сăнĕ асра юлнă,
Ялан асра тытман, чăнах.

Эх, çĕмĕрт, çĕмĕрт... Шурă çĕмĕрт,
Ас илтернишĕн тав сана.
Сисетĕп: иртнĕ майăн ĕмĕр
Пусать çут тунсăхăм чуна...

*12.01.05.*

* * *

Вăранать пăлхавлă туйăм
Çурхи ăшă каçсенче.
Çăлтăрсен ялтравлă уйĕ
Çамрăк пуçăм тăрринче.

Çăлтăрсем куçне хĕсеççĕ
"Ут-ха, – теççĕ, – ăсатма"...
Йăмрасем савса чĕнеççĕ
Хÿтлĕхне кĕрсе тăма.

Çамрăк вăхăт, ешĕл вăхăт –
Хĕмленет кăна чĕре...
Анчах систермесĕр хăвăрт
Вăл иртет çак тĕнчере.

Ак, туй шыльăкне лартаççĕ...
Яранма пуçлать сăпка.
Ачасем куçран пăхаççĕ:
"Сиктерсем-ха утьăкка..."

Çаван пек çав...
Пурте курнă
Эпир çакă вăхăта.
Шеллемест, – мĕн тăвăн? – пурнăç,
Кĕр енне текех туртать.

*23.01.05.*

# РАШТАВ КАÇĔ

Раштав каçĕ сăвапла та çутă,
Раштав çăлтăрĕ çӳл тӳпере.
Кĕлĕпе малалла эпĕ утăп,
Тупă ячĕ пĕрмай чĕрере.

Çакă каç Вăл çуралнă, пĕлетпĕр,
Хăтармашкăн пире çылăхран.
Тӳсмелле-и, – эпир йăлт тӳсетпĕр –
Телее вĕçертмен аллăран.

Çылăха кĕртме хатĕр усалĕ,
Юнашар хур тăвасшăн утать.
Сăхсăхатăп та, – чунăм тасалĕ,
Умри сĕмлĕх хуллен уçăлать.

Çын çынна кăтартасшăн нуша,
Шутласа кăларать вăрçă-харçă
Ман таса та вăй-халлă ăша
Тăрăшать тумашкăн тарçă.

Кун пек чух умăмра Раштав çăлтăрĕ,
Вăл сунать ырă сывлăх, телей.
Тӳпере яланах чуншăн йăлтăрĕ,
Ун çути кĕрсех тăрĕ киле.

*15.01.05.*

* * *

Çын илемлĕ, маттур, питĕ çирĕп,
Хăш чухне вăл ачаш çав тери.
Ĕмĕр-ĕмĕр ăна кирлĕ ирĕк,
Темĕн те пĕр тӳсет ун чĕри.

Ун илемĕ сăнра та, ĕçре те,
Анчах кахала кахал тет.
Усала-тĕселе куçкĕретĕн
Чăн-чăн çын шеллемесĕр питлет.

Маттурпа юнашар нишлĕх пулĕ,
Нишлĕх пирĕншĕн тĕслĕх пулман.
Акă, вăрçă кăларĕ куççулĕ, –
Чăнлăха парăнать хăр тăшман.

Çын ачашлăхĕ пурнăç çутийĕ:
Ывăл-хĕр савăнтарĕ пире.
Юрату кил-йыша ыр кăтартĕ,
Килĕшӳлĕх вăй вылĕ питре.

Çунать хурçă,
Шăранĕ йĕс-тимĕр,
Ку ĕçе тăвать çын...
Вăйĕ çирĕп:
Пур ăсталăх, пур хал, имĕ-симĕ, –
Ма тесессĕн ăс-тăнĕ ун вирлĕ.

Тӳпене тĕпчеме пур хăвачĕ,
Тинĕс тĕпĕ хуллен пăхăнать.
Çавăнпах-тăр ĕçченĕн ыр ячĕ
Тĕнчере ылттăнпа çырăнать.

*16.01.05.*

* * *

Çынна усал тумашкăн çăмăл,
Кала тиркевлĕн пĕр сăмах.
Ак унăн пăсăлать те кăмăл:
Кайран çав сăмахран хăпма
Хĕн пулĕ, – йывăр тасалма.

Сăмах чĕртет те, вĕлерет те, –
Çакна пĕлетпĕр кашниех.
Вăл хўтĕлет, аван пĕлетĕп,
Этем чысне те телее.

Çавăнпала та çăвартан,
Хĕрсе кайсассăн та, тирпейлĕн
Сăмах тухсассăн пит аван, –
Сĕмлĕхе сирччĕр çут хĕвелĕн
Пайăркисем куллен тĕллевлĕн.

*17.01.05.*

* * *

Шанчăкпа хурлăх юнашар çўреççĕ,
Пĕлмеççĕ пулччăр пĕр-пĕрне.
Хуйхăпала куççулĕсем ўкеççĕ
Пĕр шелсĕррĕн саппун арки çине.

Кун пек чухне тўпе ишĕлсе аннăн
Туятăн эсĕ, чун мĕскĕнленет.
Килет те шанчăк çавăн чух тăванлăн,
Çынна таса кунпа малаш сĕнет.

Чăнах та шанчăк яланах вăй-халлă,
Пырасшăн ĕç патне усăннă алă...

*19.01.05.*

* * *

Халăх поэчĕ,
Халăх артистки –
Çак ятсене
Чăваш çĕршывĕ панă.
Ăнтавăш ывăлĕ,
Марка пики
Пĕр сывлăшпа
Килĕштерсе сывланă.

Кураймансем,
Ура лартакансем
Хăшпĕр чухне
Усал сăмах саратчĕç.
Умра çавах
Тăратчĕ чăн илем,
Пире вăл тăрăшма кăна хушатчĕ.

Пире вăй хушнă Çĕпĕр, чăваш çĕрĕ,
Вĕсен ятне упранă чĕрере.
Чунăмăрсем
Çаплах-ха ĕçшĕн хĕрĕç, –
Кун-çул та пирĕн вăй илет ĕçре.

Театрпа поэзие чăваш,
Пĕлетпĕр:
Хисепленĕ ĕмĕр-ĕмĕр.
...Çÿçсем шурсан та
Йыхăрать малаш,
Халăхшăнах
Çунать-ха чĕре хĕмĕ.

*24.01.05.*

* * *

Уйăхăн хăйĕн кĕвви,
Каç савăнать унпа.
Таса юрату тĕвви
Тĕвĕленет кăмăлпа.

Тăраймĕ тÿссе чĕре,
Купăс сасси янăрать.
Асамлă таса тÿпере
Çăлтăрпа уйăх вылять.

Яшлăх кун пек каçсенче
Хĕмленет туйăмсен вăййинче.
Хĕр те хăйĕн пуçне
Хурать сан кăкăру çине.

Уйăхлă каçăн кĕвви
Уççăн янрать таврара.
Чуптăван та – кун-çул тĕвви
Тĕвĕленет чунра...

*24.01.05.*

* * *

Çиле хирĕç утма пулать.
Пурнăçа хирĕç утайăн-и?
Тинĕсре тăвăл... Карап пырать,
Телее хирĕç тăрайăн-и?

Кун-çул ăнмасть. Ăна
Тепĕр май
Çавăрма пултарайăн-и?
Шурăмпуç хăпарать,
Хĕвел тухать, –
Кала-ха, тытса чарайăн-и?

*24.01.05.*

* * *

Пулать вĕт пурнăçра...
Савман чухне
“Савап” тесе яратăн шутламасăр.
Пуçлатăн çÿремешкĕн ун патне, –
Пуплен хĕрпе
Чун ăшшине памасăр.

Кайран çак вăхăт таврăрать сана,
Тăрса юлатăн тăр пĕччен сисмесĕр.
Нихçан та
Шанакан хĕрÿ чуна
Ан ултала...
Унпа ан пул килпетсĕр.

* * *

Юрамасть халăхпа хирĕçме.
Халăх –
Çĕршыв никĕсĕпе малашĕ.
Халăхпа пĕр чĕлхеллĕ
Пултăр патшалăх, –
Туслă пурăнтăр амăшĕ, ашшĕ.

Килĕшÿ,
Чыспа чăнлăх
Ялан хуçалантăр.
Суялăх ан пултăр
Чĕлхемĕр çинче.
Халăх вăйĕпе ăсĕ
Кунран-кун аталантăр, –
Вара пăтранмĕ,
Тикĕс тăрĕ тĕнче.

*25.01.05.*

* * *

Çиччĕ,
Çитмĕл çиччĕ,
Çĕр те çиччĕ, –
Маншăн чи телейлĕ хисепсем.
Акă, кăнтăртан вĕçсе те килчĕç
Эпĕ кĕтнĕ юрăç-кайăксем.

Тупере те ялтăрать çич çăлтăр,
Алтăр çăлтăр теççĕ халăхра.
Хĕн килсессĕн нушаран вăл çăлтăр,
Ырри çеç йăл култăр пурнăçра.

Çăлтăр айĕнче тĕл пулнă эпĕ
Ĕмĕре ирттермелли хĕре.
Эпĕ çуремен-çке тĕпĕр-тĕпĕр, –
Çирĕп пулнă ĕмĕт чĕрере.

Çичĕ çырма урлă та каçатпăр,
Çитмĕл çичĕ халăхпа тăван.
Çĕр çичче çитичченех пурнатпăр, –
Пурпĕрех чакмастпăр ăс-пуçран.

Çичĕ сыпăкран тăрать еткерлĕх,
Малалла та шутлама юрать.
Улăхра сасне парать текерлĕк,
Ўсекен тырра тăри мухтать...

*30.01.05.*

* * *

Турра çук теме пулать:
Ку чурăс çыннăн кăмăлĕ,
Сăмахсене
Персе ярать вăл çăмăллăн.
Май пур хурлама пуçлăха.
Хĕвел тӳпере кулать,
Унра – иксĕлми вăй-хал.

Кашни çын хăйне евĕр пурнать,
Ун калаçăвĕ те хăйне май.
Пĕрине ырă пек курăнать,
Пăхать тепри усаллама.

Мĕншĕн тесен чĕлхен
Виçи те, чаракĕ те çук.
Вăл туйса илнĕ те ирĕклĕхе –
Калаçать çеç майĕ пур чух.

Калаçма пултаратпăр эпир,
Ӳркенетпĕр кăна ĕçлеме.
Акăнмасăр юлать уй-хир,
Кăларатпăр çĕççе вĕлерме.

Чунăн никĕсĕ пулмалла,
Кирлĕ çынна ĕнену.
Çĕр çинче хуçа пек тăмалла, –
Тинех пулĕ малаш, çĕкленў.

*01.02.05.*

* * *

Малашлăха шанман пулсассăн
Пурăнаймастчĕ пуль этем?
Инçе çула кайма тухсассăн
Умра вылятăр çут хĕлхем.

Çав çутă еннелле утать вăл
Мĕнпур вăйне-халне пухса:
Тухас пулсан та вăйлă тăвăл
Каймасть çулран çын çухалса.

Малашлăх шанчăкĕ йыхравлă,
Кĕвви тăрать ун пек чĕнсе.
Кун-çул пулсассăн та шăв-шавлă,
Пырать вăл çырана кĕрсе.

Хаксем кăна куçа шартаççĕ, –
Çĕршыв йĕркелĕ-ши хăçан?
Нушаллă ватăсем пăхаççĕ:
"Кам юсĕ çакă пурнăçа?.."

Ыйту параççĕ те – шанаççĕ
Кун-çул хуллен юсанасса.
Туяллă-и? – çавах утаççĕ
Хăйсем пек çирĕппĕн пусса.

*31.01.05.*

* * *

Хăватлă эп эс пуррипе,
Эс пуррипе эп сывă.
Хамăн ĕçре те – Улăп пек,
Чунра – чăваш çĕршывĕ.

* * *

Сăвă çуралать хăй тĕллĕн,
Вăл йăва çаврать чунра.
Кунĕн-çĕрĕн, çăвăн-хĕлĕн
Вăл пухать вăй сан ăшра.

Хут çине çырăнас умĕн
Çуралать йĕрке пуçра.
Тупăнать те сăвă тумĕ,
Сĕтел хушшине йыхăрать.

Ак сĕтел... Чи тутă пĕрчĕн
Тухать хут çине сăмах.
Ак йĕрке те хурçăн хĕрчĕ,
Рифма та килет умах.

Хăшпĕр чух манса каятăн
Ху ăçта вырнаçнине.
Такăнатăн, – хурататăн
Ăнăçман йĕркесене.

Каласа пĕтерме çук-тăр
Сăвă терчĕ-нушине.
Эс асамçă та, эс – тухтăр –
Сиплет сăвă чĕрене.

Хĕл сивви те, çу ăшши те –
Пурте санпала пĕрле.
Тинĕс хĕррине те çитĕн,
Кĕçех аслати кĕрлет.

Сăвă уçăмлăхĕ санăн
Кăмăлна çырлахтарсан.
Чунупа кăштах эс канăн,
Çавах ăс лăпланмĕ сан!..

*30.01.05.*

* * *

Ёненем пек туса Турра
Халăх çинче
Сăхсăхать.
Турăш кĕтесĕ çук килĕнче, –
Апла улталать халăха.

Пурнăçра суя чун нумай,
Вĕсене илме çук чухласа.
Çиле май
Утать вăл пĕрмай,
Çиле хирĕç курман утса.

Вăл – вăхăт чури.
Чура яланах хуçана мухтать.
Ни сивĕ, ни вĕри
Тапать ун чĕри,
Çаванпа вăл тикĕс утать.

Кун пек çынсене
Тавçăрма питĕ хĕн.
Вĕсен хăйне майлă тĕн.
Юрама пултарать кашнине:
Кайран
Йăвантараççĕ самана çине.
Тăрă шыв çине
Кăларма йывăр вĕсене,
Пирĕн хушăрах
Пурăнаççĕ вăрах.
...Эй, Турă!...
Пуплемĕп урăх.

*02.02.05.*

* * *

Тунсӑхпа савӑнӑҫ хушшинче,
Нушапа ырӑлӑх умӗнче
Пурӑнатпӑр эпир, – мӗн тӑвар?
Пуҫа усар мар,
Алла ӗҫ тытар.

Улшӑну сахал кун-ҫул тӑршшинче,
Шутлаймастӑн та
Эсӗ ху ҫинчен,
Шурӑ тӗс те витет...
Туя вӑйӗпе
Эс утма пуҫлатӑн йӑх-тӗп ҫулӗпе.

Унтан каялла килес ҫук нихҫан, –
Ҫавӑнпа та халӗ,
Пурӑн пурнӑҫа!..

*15.02.05.*

* * *

Мӑнӑ кӑмӑлла ҫынсем
Тус пулма пултараймаҫҫӗ.
Ма тесен, ялан вӗсем
Пӗр хӑйсем пирки шутлаҫҫӗ.

*17.02.05.*

* * *

Пурнӑҫа ӑнтарма
Чун таса, тӗрӗс пултӑр,
Малашра кун курма

Вӑл ялан ҫирӗп юлтӑр.
Вара йӑлтӑр та йӑлтӑр
Ҫунӗ сан ҫӳлти ҫӑлтӑр.

*18.02.05.*

* * *

Хӑй евӗрлӗ кашни этем:
Пӑхни, кулли, утти.
Кашнин хӑй евӗрлӗ илем,
Хӑй майлӑ кун ҫути.

Ҫавӑнпала та малаша
Туять вӑл хӑйне май.
Вӑл паллашма та паллашать
Хӑйне чӑн тус тума.

Кашнин хӑй евӗр каҫ та ир,
Ӗмӗчӗсем те ирӗк.
Пур хура пусӑ, сарӑ хир, –
Ӗҫ кунӗ ялан ҫирӗп.

Пӗри хӗрсе сӑвӑ ҫырать,
Тепри ӑна сивлет.
Сивлекеннин ним ҫук чунра,
Кӗвӗҫме ҫеҫ пӗлет.

Кун-ҫул иртет, кӗтмест пире, –
Йӗрки-йӑли ҫапла.
Вайсӑрлансассӑн та чӗре,
Этем пӑхать мала.

*06.02.05.*

* * *

Уйăхлă каçăн шăрши аван,
Хĕрпе тĕл пулма йыхăрать.
Купăс сасси аякран
Чĕрене çĕнĕ туйăм парать.

Купăспа уйăх тăванлă ялан,
Таврара ырă пĕрлĕх тăрать.
Хĕрпе каччă пăхаççĕ куçран –
Уйăх шевли
Куç çинче йăлтăрать.

Уйăхлă каç юратушăн паха,
Ун шăрши çавăрать пуçа.
Эп тав тăватăп таса уçлăха,
Чуптăву çĕнетет пурнăçа.

*10.02.05.*

* * *

Çурхи кунсен пур хăй май илемĕ:
Ак пĕчĕк пĕлĕт хĕвеле хуплать,
Кĕçех, шывне вăрах йăтса çуремĕ,
Пахчасене, хире сапса ярать.

Мĕнпур калча ешĕлленсе каять те
Çумăр тумламĕпе йăлтăртатать.
Вĕсем кĕçех чечек çурма та хатĕр,
Тăри хăй юррипе им-сим парать.

Ачаш çеçкисене те çурнă çĕмĕрт,
Тавралăха савса шăпчăк юрлать.
Çак вăхăтра тĕвĕленет чун хĕмĕ,
Куç Атăл хĕрринчи сар хĕр çине пăхать.

*20.02.05.*

* * *

Кашни çыннӑн сӑнӗ çинче
Палӑрать унӑн кӑмӑлӗ.
Калаçӑн-и эсӗ унпа çӑмӑллӑн
Е ятлаçӑн тӗк тӑнӑ çӗртех.

Çынсем хушшинчех,
Тепринпе йӑл-йӑл кулӑн
Хӗвел умӗнче.
Виççӗмӗш пулӗ
Шӑллу е пичче...
Çаксем пӗтӗмпех –
Çыннӑн сӑнӗ çинче.
Сӑн – вӑл тӗкӗр пек.

*13.02.05.*

* * *

Эпир çутӑ кун куриччен,
Анне ӑшӗнче
Пирте Юрату сапаки тӗвӗленнӗ.
Хӑйне май тапакан чӗремӗрсенче
Никам пӗлмен кӗвӗ кӗвӗленӗ.

Çавӑнпа тӗнчене
Килсенех
Малтанхи уçӑ сасӑ паратпӑр.
Анне сӗтне
Чӗлхемӗр вӗçне
Илсенех
Тӑван çӗр хӑватне туятпӑр.

*13.02.05.*

* * *

Чуптуса курман хĕр евĕр
Вăрмансем çеçке çураççĕ.
Янрать аслати кĕрлевĕ,
Çынсем çумăртан тараççĕ.

Хĕвел анчĕ. Тин çеç шăпчĕ.
Сасă пачĕ ыррăн шăпчăк.
Унăн кĕввипе вăранчĕ
Юрату ман чунăмра.
Ялта вăйăсем тапранчĕç...
Акă, хĕр те – ытамра.

* * *

Çутă та таса куçсем –
Турă амăшĕн, пăхсамăр...
Унăн хĕлхемне илсе
Тасатар-и ăша хамăр.

Анне куçĕ те çапла, –
Йăл пăхать те – ырă питĕ.
Манăн хуçăк кăмăла
Вăл кăларĕ çăтмах витĕр.

Ĕмĕт ĕнтĕ тулнă пек,
Килĕшуллĕ – юрату та.
Калаçатăп тупепе,
Чунăмра та манăн çутă.

*15.02.05.*

* * *

Çак тĕнчере пуранни
Чанах тĕлĕнтермĕш.
Хастар чăваш çынни
Ятне ӳкермĕ.

Юрату, савăшу –
Йăх-тĕпшĕн никĕс.
Пулмĕ тупăшу –
Пуранăпăр тикĕс.

*21.02.05.*

* * *

Нарăсра тумла тумлать,
Чи-чи кăсăя юрлать,
Хăйне мăшăр вăл шырать,

Хĕвел çутă нарăсра,
Кун вăрăмлансах пырать,
Каччă сарă хĕр суйлать.

Юр хӳсен те – ирĕлет,
Тăвăл ахăрать – иртет,
Йăлтăр кун вылять, çиçет.

Нарăс – çуркунне хапхи,
Ăшă юхăмăн çилхи,
Чунри кĕвĕшĕн – пахи.

*21.02.05.*

* * *

*Светлана Ивановна Бубновăна,*
*Чăваш халăх артисткине,*
*юрăçа.*

Эп сарă хĕрсене саватăп:
Вĕсем юрланă чух вара
Каçса кайсах эп савăнатăп, –
Чăн юрату хĕрӳ чунра.

Тата сăнпа чипер пулсассăн,
Йăлтăртатса тăрсан умра,
Шăнкăрав пек илемлĕ сасă
Ян янăрать тавралăхра.

Сасси, сасси!.. Сар кайăк пек
Ăна итлеççĕ чăранса,
Ăна итлеççĕ халăхсем те
Пĕр савăнса та ал çупса.

Ахаль-и Лондонăн, Парижăн
Залĕсенче ян кайнине
Аван пĕлетпĕр...
Берлин та чыслăн
Кăларнă ташă картине.

Европăра ыр ят илтсессĕн,
Саламласан Римпа Турин,
Чĕрупеле çĕкленнĕ эсĕ, –
Сана сыхлать чăваш Турри.

Эс халăх артистки. Ахаль-и
Ятна чăваш çĕршывĕнче
Ырăпа çеç калаççĕ халĕ,
Калаççĕ тĕп хуласенче:
Мускав та Киев, Минск енче...

Светлана Бубнова! Яту сан
Çап-çутă ят, чăвашлатсан.
Аçу-анну пилленĕ çут сăн
Чакма ан пĕлтĕр нихăçан.

Светлана, пурăн! Юрă майăн
Сарсах пыр кĕвĕ çунатне.
Сана ыр сунакан нумайййăн, –
Çĕкле куллен чăваш ятне.

*24.02.05.*

* * *

Пулманнине, ай, пултарас килет,
"Çук" сăмаха калас килмест пĕрре те.
Пурнакан çын хăй малашне кĕтет,
Эп пур, куллен ĕмĕтленсе çўретĕп.

Курманнине темме курас килет,
Нушаллă кунсене сирес тесе ĕçлетĕп.
Çула тухакан çын саппас илет,
Эп пур, çаплах ĕмĕтленсе çўретĕп...

*26.02.05.*

* * *

Çулсем иртеççĕ. Ваталсах пыратпăр,
Хăшпĕр чухне алла туя тытатпăр.
Çуç-пуç та ĕнтĕ шуралсах пырать,
Мĕн тăвăн? – куç та куçлăха шырать.
Юрать-ха мăшăр çумăмра. Мана
Пуçа усма памасăр вăй хурать.
Хăшпĕр чухне пухать те вăл хăна
Шăрантарать эп юратан юрра.
Туссем нумайччĕ. Ăсансах пыраççĕ,
Унтан калла пĕри те таврăнмаççĕ,
Вĕсемшĕн те вăй хумалла хăш чух,
Чĕрĕ чухне тăрăшмасан май çук.
Мĕн тăвăн? Çутçанталăк йĕркине
Никам та пăсайман-ха халиччен,
Тытса чарма май çук-тăк çулсене,
Ыр ятпала пурнар çын хушшинче...

*28.02.05.*

* * *

Тĕнче тытăмĕ вĕçсĕр те хĕрсĕр, –
Куç та, ăс та виçеймĕ ăна.
Нихăçан та вăл пулмĕ хĕсĕр:
Тăкăнать ун,
Кĕçех акăнать.

Çĕрпеле çыхăну тытаççĕ
Çăлтăрсем те планетăсем.
Курăнмасть-и – курма тăрăшаççĕ
Ăслă-пуçлă маттур этемсем.

Тĕнче тытăмĕ вĕçсĕр пулсассăн,
Тăван çĕрĕн хĕрри пур иккен:

Ун хĕрне çын çитсе тухсассăн
Явать теççĕ вĕрен шевлерен.

Пирĕн çирĕп патвар ĕçлĕ ală,
Шухăшсем пирĕн тĕпсĕр те тарăн.
Çавăнпа вăй хурать манăн халăх,
Нуша витĕр пăхать вăл хастаррăн.

*28.02.05.*

* * *

Эй, Çăварни, Çăварни! –
Кăмăла уçса ярать.
Ăйăр кулнĕ ял çынни
Катаччине чуптарать.

Çуна çинче сар хĕрсем
Юр юрласа пыраççĕ,
Пĕкĕри шăнкăравсем
Йыхăравлăн янраççĕ.

Хунăма та савăнса
Вĕри икерч çитерет.
Кăпăклă сăра парса
Чунăма тивĕçтерет.

Эй, Çăварни, Çăварни! –
Пĕр эрнене тăсăлать.
Юрлани те савăнни
Пĕр çулталăка пырать...

*06.03.05.*

* * *

Туслăх туйăмĕ çук-тăк чунра,
Çын хăйне тăлăх евĕр туять.
Ыррине те кураймăн унран,
Пайлаймасть никампа та вăя.

Туслăх туйăмĕ чунăн çуначĕ,
Унпала эс вĕçен тĕнче тăрăх.
Ӳт-пӳри таса ĕмĕт хăвачĕ
Килес кунăн çути пулса тăрĕ.

* * *

*Хулпуççипе кăвак пĕлте пернсе...*
Çеçпĕл Мишши

Чăваш – маттур этем,
Çакна кашни пĕлет,
Хулпуççипе пĕлĕте
Вăл перĕнет, тĕрелет.

Çакă маттурлăха
Панă пире аслă Çĕр.
Тухнă вăл уçлăха, –
Чĕремçĕм, хĕруллĕн хĕр!

Кирек мĕнле те ĕç
Пире паранать тăрăшсан.
Çавăнпа алăсем тытман хĕç, –
Вăл акать те вырать,
Вăрман лартать.
Çăрт-йĕр тăвать
Хулара та ялта.
Юратсан – юратать,
Килне çирĕп тытать.

Туслăхĕ çирĕп ун,
Çакна тĕнче пĕлет.
Çавăнпа манăн чун
Чăваш ялавне çĕклет...

# ПОЭМĂСЕМ

## АННЕ ÇĂКĂРĔ

Халь çавăн пек: ача-пăча
Хула енне шав сулăнать.
Кайран вара
Курма анчах
Тăван ялне вăл таврăнать.

Эп те – пĕри – çавнашкалли:
Пĕтсессĕн вăрçă,
Ялăмран,
Пăвма пăхсан нуша алли,
Тухса ăсçантăм...
Мĕн тăван?
Анне чармарĕ ун чухне.
Хамах пĕлеттĕм: ял çынни –
Ашне-пăшне тăваканни –
Выçах тухатчĕ ĕç патне.
Çĕрулмипе йĕкел, мăян
Выртатчĕ çатмасем çине.
Ĕççи валли пухма вăя
Тататчĕç вăрманта серте.
Ăна, уйранпала юрса,
Яшка пĕçерĕн те килте
Эс çийĕн хытă юратса.
Çаплаччĕ пурнăç...

Ак паян
Ăш çăкăрпа яшка çиме
Анне чĕнет пур кăмăлтан,

Сан пур – халех çиес килмест.
Ун кăмăлне-и хăваран? –
Ларатăн эс кĕрекене.
Кулач пек çăкăра куран,
Туян таçтан ун шăршине:
Вăл техĕмлĕ, уçать чуна...

Пĕçернĕ
Çăкăр
Тулăран.
Анне калать: – Çи, тăранах...
Халь аптрамастпăр апатран. –
Хăй ман çине пăхать, пăхать,
Пурах-тăр темĕн каласси.
Тен, ун мана ялянлăха
Килет яла хăварасси?
– Килсе çÿретĕр пит сахал, –
Мана сăнать вăл куçăмран, –
Ачийĕ пиллĕкчĕ... Ав, халь
Кĕçĕнни çеç хам çумăмра.
Пурнăç нуши хуланалла
Ăсатрĕ пулĕ çав сире.
Хам та чармарăм пулмалла?
Амăш чĕри – çемçе чĕре.
"Çăкăр параççĕ хулара", –
Тесе пуплеттĕр ун чухне.
Ăсантăр та – кайран вара,
Мăшăрлансассăн, ял енне
Пуçларăр çул хывма сайра.

Ÿпкелеместĕп... Çыннисем
Пит кирлĕ халĕ хулара...

Анчах ӑван уйсем-хирсем
Сире те тунсӑхлаҫ, ара.
Аннеҫӗме итленӗ май
Шеллес килет ман ялӑма:
Яш-кӗрӗмсем хуланалла
Халь чарӑнман-ха туртӑнма.
Пӑрахнӑ-ши ҫӗре савма?...
Ҫакна мӗнле ӑнланмалла?
Ҫӗре нӗрттес вӑкӑрпалла
Чӗреттӗмӗр вӗт-шакӑрсем.
Ҫурла-кӗрле ывҫӑпала
Вӑрлӑх акаттӑмӑр, пӗлсем.
Халь пурте пур: ашне-пӑшне
Тӑмастӑн эсӗ шеллесе.
...Ҫавах анне каланине
Пӑхас килет ман тимлесе.

1.

Пыратчӗ вӑрҫӑ. Ҫур ҫитсен,
Тухас чухне ҫуракине,
Чӗнсе ҫӳретчӗҫ килсерен
Пыма колхозӑн пухӑвне.
Камсемччӗ-ши вӑл пухура?
Хӗрарӑмсем, хӗрарӑмсем –
Шап-шурӑ, хӗрлӗ тутӑрсем,
Тата ятуллӑ мучисем.
Вӗсем малти ретре ларатчӗҫ:
Ҫут пӑхӑр пуҫлӑ чӗлӗмне
Ӑвӑ хурса чӗртсе паккатчӗҫ
Ятланӑ май фашистсене,
Ах тур, хивре сӑмах калатчӗҫ.
Пире, мӗнпур вӗт-шакӑра,

Ĕçре тăрăшнине кура,
Кăмака хыç енне лартатчĕç.
Çук, эпируншăн куренмен,
Мĕнле куренĕн-ха унта?
Пире те çын шутне кĕртме
Пуçланă мар-и-ха ялта?

Кĕçех сухаллă председатель
Тăратчĕ те ури çине
Çапла пуçлатчĕ сăмахне:
– Колхоз çуракине халь хатĕр...
Анчах кашни хăй выранне
Салтак пек çирĕп пĕлмелле.
Кунта та фронт... Кĕрешмелле.
Фронтра – хĕçпе,
Кунта – ĕçпе. –
Çапла кĕскеччĕ ун сăмахĕ...

Çуракинче ĕçлемесен,
Сăмаха çеç тĕшĕлесен,
Мĕнле, юлташăм, тыра акăн?

Унтан кам плугпалан ĕçлет,
Кам кунтăкпа тыра акать –
Çавăн ятне вăл пĕлтерет:
– Кăна правлени тунă, – тет.
Ку списока часах хурать,
Халăх çине шанса пăхать.

Пурт ăшчикки час шăпланать:
"Кала, эппин, мĕнле ыйту?
Ма пытаратăн, кăмăл ту", –
Тесе тĕпченĕн туйăнать.

– Ака ҫинче эпир кăҫал та,
Пурне те пултăр ҫакă паллă,
Ҫăкăр пĕҫерттерсе тăрасшăн.

Ҫакă ĕҫе кама хушасшăн? –
Сухалĕ тăрăх аллипе
Шăлать ҫеҫ пуҫлăх ерипен.
– Кам пултăр? – тет пĕр чĕлĕмҫи, –
Эсир ăна пĕлетĕр хăвăр.

Ун ҫăкри тутлă: ҫи те ҫи...
Ыттийĕсем ан айăп тăвăр...
Вăл – Урине!..
– Кам хирĕҫ пултăр?
Пĕлтĕрхи пек хăй кăмăл тутăр!

* * *

Ку – ман анне.
Апла ăна
Тăван ял-йышăмҫăм шанать.
Халь ҫăкăр патĕнчи ҫынна
Темрен те пысăк чăнлăх кирлĕ.
Ахаллĕн тĕрлĕ сас-хура
Килтен киле ҫул хывĕ вирлĕн.
“Карта тытаймăн ҫăвара”, –
Сăмах пур мар-и халăхра?
Аса илеп пĕлтĕрхине:
Ĕҫҫи. Сухаллă бригадир
Пайлатчĕ ҫăкăр черетпе.
Кашни илет хăй виҫине,
(Кăна халь хăнăхнă эпир)
Анне те ҫитрĕ майĕпе.

Çав вăхăтра темле инке:
"Çăкăр пĕçернĕ хушăра
Вăл илсе юлнă хăй патне", –
Тесе хурать.
Кун пек инкек
Курман эп хамăн пурнăçра, –
Вăл айăплать вĕт аннене?!
Çав самантра,
Пырса хыçран,
Эп çапрăм çавă инкене.
Тем хушăра мана алран
Ярса илет вăл тарăхса.
Çапма тăрать...
Ăна çынсем:
"Пĕлесчĕ намăса", – тесе
Илеççĕ час хÿптĕрлесе...

...Килте мана анне ятларĕ:
"Кам чышкăпа тÿрре тухать?..
Ăна тасалăх çеç хуплать.
Чаракĕ çук карма çăварăн,
Тата хăвран асли çине
Ална нихçан та ан çĕкле..."

Эп ĕнентертĕм аннене:
Тек хуçмăп унăн кăмăлне.

...Ун пек сăмах кайран-малтан
Эп нихăçан илтсе курман.
Пуху паян та аннене
Хушать, ав, çăкăр пĕçерме.
Апла ял-йышăм ĕненет:
Пит çăмăл пулĕ ĕçлеме.

* * *

...Эх, ҫӑкӑр, ҫӑкӑр! Тӗнчере
Санран хакли мӗн пулнӑ?
Ҫӑкӑрпа ҫӗршӗн ӗмӗрех
Ҫынсем мӗн чул хӗн курнӑ?

Лашасем халсӑр. Вӑкӑрпа
Сухалама тухаҫҫӗ.
Туртса ҫапсан та пушӑпа,
Юлхаввӑн ҫеҫ утаҫҫӗ.

Тепӗр чухне хуть вырт та йӗр:
Выртать те вӑкӑр – тӑмӗ.
“Сухалӑр”, – йынӑшать пек ҫӗр...
Хӑв хатӗр тӑхӑнмашкӑн хӑмӑт.

Кая юлас-и? – пурпӗрех
Ҫур тыррине акатӑн эс.
...Ҫак нушана ҫут тӗнчере
Мӗнле-ши пӗтерес?

Вӑрҫин, вӑрҫин...вӗҫӗ-хӗрри
Пачах та курӑнмасть.
Мӗнле чӑтать-ши ҫын чӗри?
Ҫук вӑхӑт йынӑшма.

Ак, мӑшӑрӗ вилни ҫинчен
Яла шур хут ҫитет.
Анчах хӗрарӑм чӗринче
Вӑй пур – хирте ӗҫлет.

Пӗлет вӑл: хӑй ӗҫӗпеле
Ҫӗнтерӗве туптать,
Фронтри салтаксемпе пӗрле
Фашизма ҫапать.

2.

Ĕççи. Эпир хĕрсе выратпăр.
Кам пултарать çурла тытма,
Кашни тăван хире тухатпăр,
Халь намăс çынсенчен юлма.

Çурла – вăл вăхăтри комбайн –
Кăчăрт-кăчăрт! сасне парать.
Каçалăк ӳссе пынă майăн
Кашниййĕн чунĕ савăнать.

Хĕвел енне пуç çĕклемеççĕ,
Никам кĕтмест вăл анасса.
Хыçра кăна тĕмсем ӳсеççĕ,
Ĕç тухăçне тек кăтартса.

Хуратăн эсĕ ывçăн-ывçăн
Кĕлте çыххи çине ыраш.
Пĕри те каламасть: эп выçă,
Пĕри те шарламасть: канас.

Вăхăчĕ çук пуç çĕклеме те:
Ай-яй, çынран юлас килмест!
Каçхине çеç вара тӳнетĕн,
Манса кайсах апат çиме.

Бригадирпа анне тухаççĕ
Çăкăр илсе кăнтăр тĕлне.
Вара çурласене лартаççĕ
Тинех тулли кĕлте çине.

Ак халĕ ырнине туятăн:
Ах, пĕвĕ, пĕвĕ... тӳрленмест.
Алла пилĕк çине хуратăн –
Кукăрăлса çӳрес килмест.

Çапла туни кăшт пулăшать-тăр:
Ал пилĕке тӳрĕлетет.
Унтан хуллен утса каятпăр:
Пире халь çăкăр-çке кĕтет.

Çав самантра Укçук тăхлачă,
Çăкăрлă лав умне тăрса:
– Ку çăкăр мар, чăн-чăн кулачă,
Апла, çынсем, кăшт тăхтăрсам, –
Тесе хуллен алне çĕклерĕ.
(Ват çын сасси, паллах, йăваш.)
Хăш-пĕрисем, тен, илтеймерĕç, –
Вăл чараймарĕ шăв-шава.
Вара тепре вăл: – Тăхтăр! – терĕ.
Çынсем, "мĕн пулнă" тенĕ пек,
Малтан нимскер тума пĕлмерĕç,
Унтан шăпланчĕç ерипе.

– Ял-йышăмсем, – Укçук тăхлачă
Хуллен пуçларĕ сăмахне, –
Çăкри чăнах та-мĕн кулачă,
Ăна пĕçернĕ Урине.
Пуççем çинче тăхлан çăвать-и, –
Çулла çук мар вĕт çимелли?
Çавăнпала пама эп хатĕр
Çак çăкăра фронта валли.

Çынсем пĕрне-пĕри пăхаççĕ:
"Кăна мĕнле ăнланмалла?
Ăш çăкăра паян, хальхаççăн,
Фронта епле ăсатмалла?

Укçукăн ик ачи пуç хунă
Тин çеç, хаяррăн кĕрешсе.

Тен, çавăнпа та пуçĕ унăн
Кăштах кайман-и минресе?"

Кайман-мĕн. – Сухари тăвар та
Ăна ярар ачьсем патне.
...Укçук сăмахĕсем сасартăк
Куçне уçаççĕ çынсенне.

– Аван шутлать!.. – ăна ырларĕ
Тилхепе тытнă бригадир.
– Аван! Аван! – янрарĕ харăс.
– Аван! – кашларĕ сарă хир.

Леш унчченхи хаяр инке те
Чĕнмерĕ хирĕç пĕр сăмах.
...Уйранпала хăяр çиетĕп,
Аван анать çăкăрсăрах.

Анчах та уçăмлăн куратăп:
Анне пĕçернĕ çăкăра
Çиеççĕ салтаксем фронтра та,
Вăй-хал парать вăл паттăра.

Эх, çăкăр, çăкăр!.. Ытлăн-çитлĕн
Пулсассăн мĕн тери аван.
Эс çӳрĕн нар пек çутă питлĕн,
Хăратмĕ килес кун – ыран.

3.

Шутлатăр пулĕ: питĕ çăмăл
Юравлă çăкăр пĕçерме:
Кăвас хуран та – пултăр кăмăл –
Кĕçех пулать касса çиме.

“Ямӑттине виле те курнӑ”, –
Тесе калаççӗ халӑхра.
Анчах урӑхларах çав пурнӑç, –
Кӑларттарать çич хут тара.

Кил-йышшӑн кӑмака эс хутӑн,
Çу кунӗнче, эрне иртсен.
Çуламӗ ташлӗ çеç тип вуттӑн,
Ӗçчен чунне килентерсе.

Бригадӑшӑн пӗçер-ха çӑкӑр
Тата эс вутӑ хут куллен.
Пӑчӑхса çитӗ санӑн кӑкӑр
Вут уççинчи хӗрӳпелен.

Ку çеç-и? Шуçӑмлах тӑратӑп.
Кӑвас йӳçсе ансассӑнах,
Çанна тавратӑн та çӑратӑн –
Мӗн чул хума тивет вӑйна?

Кайран кункра çинче унатӑн
Çавра-çавра енчен енне.
Алри юн тымарне туятӑн,
Туян юнпа вӑл тулнине.

Ак кӑмака пулса çитет те,
Кӑвар туртса шӑлан кӗлне.
Пӑчча епле кӑна тӳсетӗн?
Туятӑн пит тӗлкӗшнине.

Ак кӗреçе алла тытатӑп,
Пуçлатӑн çӑкӑрне хывма.
Унтан эс питлӗхе хупатӑн,
Ларатӑн тин кӑштах канма.

Кӑшт ырнӑ пек хӑвна туйсан та,
Ҫӑкӑр шӑрши тапса тухсан,
Сӑну йӑл кулӑпа ялан та
Пуҫлать вӗт ҫуталмашкӑн сан.

"Ҫиме кӑна ансат вӑл", теҫҫӗ.
Ҫиме ларсан та тар тухать.
Ҫавӑнпала хирти ӗҫченҫӗ
Ҫӑкӑр хакне аван чухлать.

Пӗрче вӑл пурӑнӑҫ тӗввийӗн
Курать мӗн ӗмӗр тӑршшӗпе.
Пӑр пӗлӗчӗ курсан хир ҫийӗн
Йӗрсе ярать куҫҫулӗпе.

Мӗн-ма тесессӗн ҫӑкӑр терчӗ
Ялан та унӑн чӗринче.
Ҫухе кӑна пӗчӗк икерчӗ
Ума ӳкмест пӗлӗт ҫинчен.

Телей, куҫҫулӗ, пысӑк савнӑҫ,
Кӗтни те тунсӑх – ҫӑкӑрта.
Унрах пур илӗртӳллӗ канӑҫ,
Кун-ҫул малашӗ пур тата.

4.

Эп астӑватӑп: вӑрҫӑ хыҫҫӑн
Пӗр ҫуркунне пит йывӑр килчӗ.
Выльӑхӗсем аптратчӗҫ выҫӑ,
Чылайӑшне ун чух ҫӗр илчӗ.

Лашасене вӗренпеле
Каштасенчен ҫакса яратчӗҫ.

Пĕртен-пĕр çак меслетпеле
Вĕсем ура çинче тăратчĕç.

Улăмпа витнĕ пӳрт çийне
Пĕр шелсĕррĕн сӳсе илетчĕç.
Хуралнă, хытă улăмне
Çăнăх сапатчĕç, çитеретчĕç.

Çара струппилсене пула,
Мур касса кайнăнах яла,
Çуртсем кăнттаммăн курăнатчĕç,
Çĕн тăрă пуласса шанатчĕç.

Малтан вĕлтрен, унтан серте
Çынсемшĕн пулчĕ чи хакли.
Вĕсем шăтса тăран çĕрте
Ĕçлерĕ ачапча алли.

Ан тив, яшки ем-ешĕл ун, –
Пĕр-икĕ çĕрулми ярсан,
Тата уйранпала юрсан
Тӳскелĕ, чăтĕ чĕмсĕр чун.

Акма та вăрлăхĕ аран
Çитрĕ пулас çав çулхине.
Тăват хутчен пĕр уйăхра,
Пиçме колхозăн çăкăрне,
Хутатчĕ кăмака анне.

Пит йывăрччĕ. Саккăрмĕш класс
Пĕтертĕм эпĕ ерипен.
...Ку июньте пулчĕ пулас:
Пирĕн пата Свердловск енчен

Ик çын килсеччĕ. Ял çине
Ун пек хыпар сарăлать час.
Вĕсем ялти ачасене
Чĕнеççĕ-мĕн ФЗУна:
Параççĕ хăйсемех тумне,
Пилĕкçĕр грамм çăкăр – сана.
Çав хыпара илтсен, анне
Çурерĕ шутласа вăрах.
Вара мана тепĕр кунне
Каларĕ: – Ывăлăм, каях.
Ачам, унта та совет çĕрĕ,
Пулсассăн йывăр – хута кĕрĕ.

Кутамккана пĕр çавра çăкăр
Вăл чикрĕ, кил-йышран татса.
Йывăрах марччĕ манăн çăкĕ, –
Ачан мĕн пултăр, иçмасса?

Эп çав кунран – хула çынни,
Эп çав кунран – рабочи класс.
Ку халь пуриншĕн те чăнни,
Чунра, ав, ял та парать сас.

Мĕншĕн тесен ял çĕрĕнчен
Чĕрем хăпсах ман пĕтеймен.
Малтан ялта эп тымар янă.
Вăкăрпала сухаласах,
Кăшт çеç пулсан та, çăкăр панă
Хуламăра, вăй-хал сунса.

Кунта анне, çуралнă килĕм.
Темме-çке çурт чăречисем

Тепĕр чухне: “Хăҫан эс килĕн?” –
Тесе пăхаҫҫĕ тĕмсĕлсе.
Ҫапла туятăп, пĕлĕрсем.

Тата анне пĕҫернĕ ҫăкăр
Тути чĕлхе ҫинчех тăрать.
Вара ман капланать те кăкăр
Таҫта хĕруллĕн йыхăрать.

Тăван кĕтес, ҫуралнă ҫĕр
Ачисене, тен, тунсăхлать?
“Кунта малтан эс хывнă йĕр”, –
Тесе каланăн туйăнать.

Кĕрсен хула магазинне,
Куратăп эп анне сăнне.
Алла илсессĕн ҫăкăра,
Ҫуретĕп пек тăван уйра.

Апла рабочипе хресчен
Манра пĕрлешĕнсе тăрать.
Тен, ман чĕремҫĕм кунсерен
Пуласлăх кĕперне хывать?!

Пĕлетпĕр: ҫăкăр – ĕҫ хăвачĕ,
Пур ҫăкăр – канлĕн юрă хыв.
Яла
Хула
Ялан вăй пачĕ,
Ҫапла вăл – пĕрлĕхлĕ Ҫĕршыв!

* * *

Ман шухăша татать анне.
Каллех чĕнет вăл апата.
Пăхатăп та сĕтел çине:
Хăна пул вуннăн, тупата!

Анчах сĕтелĕн варринче –
Çаврака çăкăр. Питĕнче –
Хĕвел кулли, сар хир кулли;
Чăн-чăн хуçа пек курăнать.
Ахальтен мар сĕтел тулли!
Сĕтел ахаль-и авăнать?

Пăхатăн та: анне алли
Кăшт кушăркана та тăртаннă.
Тăван ялти çынсем валли
Мĕн чухлĕ çăкăр вăл унанă?

Тăрса ман чуптăвас килет
Тăрантакан таса алла.
Капла тусассăн кўренет,
Ку уншăн – кулăшла йăла.

Ăш çăкăра касатăп эпĕ, –
Анне пĕçернĕ çăкăра.
Ах, çăкăр пуçлассин хисепĕ
Пурнех те тивмĕ çав йышра.

Анне çăкри! Шăрши епле?
Ăна таçта та пĕлĕп эп.
Кĕрет пек вăл кашни киле,
Çўрет пек вăл çĕршывĕпех.

Алла илетĕп эп чĕлле,
Ман тивĕç те пурах унра.
...Тав аннене, тăван киле!
Вĕсем пулсан, эп пур вара.

## ПУÇ ТАВРАЛЛА...

### Публицистикăлла поэма

“Пуç тавралла
Шутласа пăхмалла”,
Тет чăваш, ĕç тума пуçличчен.
Апла пуç çаврака,
Шухăш ун çывăхĕнче
Çĕр спутникĕ
Çĕр чăмăрĕ тавралла
Çаврăннă евĕр çаврăнмалла.
Шухăш вĕçет аякка,
Анчах пуç купташки
Ăшĕнчи миме
Ăна вĕçертмест:
“Шухăш, çуралнă пулсан, ан васка,
Эсĕ халĕ хĕлхем йăлтăркки,
Вăхăт кирлĕ сана тĕпчеме,
Тĕрĕслеме”.
Çапла çав,
Пуç пулать пĕчĕкки,
Пысăкки,
Шухăш та пулать
Тĕнче пек анлă,
Мĕнпур халăхпа тăванлă,
Пулать ниме тăман шухăш,
Çавах, çав шухăша тытаканĕ,
Ăна тĕв тăвать тума туххăм,
Унсăрăн унăн чунĕ-и канĕ?
Чееленет, çĕлен пек шăвать,
Çăмăл машина илет,
Дача лартать.

Укçи ăçтан ун килет?
Йăкăртать!
Вăрлама та, иккен, çын шухăшлать.
Мĕн тăвăн?
Пур-ха ун пек çынсем...
Эх, часах пĕтеймĕç-ха вĕсем.

Эпир пĕлетпĕр:
Çын
Тĕнчене телейлĕ тăвасшăн.
Ăна ĕненетпĕр,
Эпир унпа çеç утасшăн.
Утасшăн çеç-и? Утатпăр!
Ун шухăшне
Хамăр шухăш пек йышăнатпăр.
Унччен-ха... Унччен, –
Темĕнччен
Пуç тавралла шухăшлатпăр.

Мĕнле чăтать-ши пуç?!
Шухăш, шухăш...
Усалли те, ырри те – унта.
Шухăш, шухăш, çĕннине эсĕ уç.
Киввине те, –
Ыррине,
Чăн-чăн никĕсне, –
Упра хăвăнта.
Пуç тавралла...
Чăнах, мĕнле чăтать-ши пуç?
Хушăран миме тĕлĕрет...
Канмалла!
Кĕçех усăлса каять те куç –

Тавралăх сарăлать,
Çыннăн йăлтах курмалла:
Куç выçă,
Сарă хĕр хыççăн
Йĕрлет те йĕрлет...
Пур иккен татах чиперри!
Кăтра иккен
Çивĕт вĕçĕ-хĕрри.
Ак, хĕре
Ĕмĕре
Тупа тăватăн,
Унпа пĕр çуртра пурăнма тытăнатăн...
Анчах куç, куç... –
Пăхать те пăхать таврана.
Татах чиперри умра: "Кăмăла ан хуç",
Сăмах тăкатăн, чĕлхӳ салтăнать.
Чарайmасть-ши вара куçа
Çын умĕнче ахрат çырми,
Аркататпăр вĕт хамăрах пурнăçа!
Е тытмастпăр асра:
"Пуç тавралла
Шутласа пăхмалла..."
Куç курать:
Çын тутлă çиет!
"Эп мĕншĕн унран кайра?
Капла пурăнса çитет..."
Тек тĕрлĕ мел шырать, –
Тупать.
Айăпĕ ăçта? Пуçра
Е куçра?
Усал ăмсану
Сăтăр çеç тăвать пурнăçра.

Куç курать:
Чи лайăх япала,
Унăн пулмалла.
Куç çăткăнланать:
Ылттăна
Илмелле тыткăна!
Анчах ылттăнĕ
Хăй илет тыткăна,
Пĕтерме тытăнать çынсене...
Çиет пуçа,
Хăшпĕр чух – тĕп тăвать пурнăçа.

Куç выçă çеç тетĕр-и? Çук, çук!
Куç çав тери ыра. Хăш чух
Курать инкеке, – сирет!
Уксах е суккăр – вĕсене сиплет.
Пĕр татăк пур-и? – пайлать
Çурмалла.
Пушар-и? Сикет çунакан пӳрте.
Унта ачасем – çăлмалла.
Çын шыва путнă... çăлать,
Чун кĕртет!
Куç курман пулсан,
Пуç ыра тума сĕнмен пулсан,
Ăçтан-ха: ăçтан
Ыра тăваян?!
Куç курать:
Тĕнчене ытамлать.
Пуç шухăшланă пирки
Çын тухать
Тĕнче уçлăхне, –
Аталанать пурнăç йĕрки.

Çӗр çаврӑнать, –
Анчах упрать тӗнӗлне.
Уçлӑхран куç курать
Çӗр питне.

Курнипех çырлахмасть этем:
Ӑсӗпе, ӗçӗпе çӗршер хут тӗрӗслет.
Пире йыхӑрать пуласси, илем,
Усалли, мӗн тӑвайӑн? –
Пире хирӗçлет.

"Куç курать те –
Анчах шӑл витмест", –
Йӗкӗлтет пӗри айккинчен.
Ку ӗçчен çынсене килӗшмест,
Шӑл айне хурса
Тӗрӗслетпӗр эпир мӗн ӗмӗртен.

Куç пирӗн ырӑ,
Пирӗн куç ӑшӑ.
Хӗр çепӗççӗн пӑхать – ӳсет тырӑ,
Ӑшӑ çумӑр хыççăнхи евӗрлех –
Чӑшӑл-чӑшӑл.

Куç умӗнче ачасем,
Хӗрсем,
Заводсем, çӗнӗ çуртсем.
Ах, анчах!.. Куç умӗнче
Ан тухтӑр пушар.
Ӑна чарар!
Ан кӗллентӗр нихçан тӗнче.
Çӗр чӑмӑрне çунма парар мар.

Куç умĕнче вăрман, уй-хир,
Атăл... çăлкуçсем, кӳлĕсем.
Куç умĕнче – чуна çывăххи,
Вĕççĕр-хĕрсĕр илем!

Мĕн тăвайăпăр?
Куç вăл куçах.
Ăна улăштарма вăхăт кирлĕ.
Çĕнететпĕр пулсан пурнăçа,
Çутă шухăш кĕрет пуçа, –
Тăрăшмалла апла пирĕн –
Вирлĕн!

Куç ытамĕ çавтер сарлака,
Вăл чĕнет аякка.
Куç курнине,
Вăл ыйтнине,
Вăл сĕннине
Йăлт тумалла.
Апла, йышпала
Ларса,
Пуç тавралла
Шутласа
Пăхмалла.
"Пуç тавралла
Шутласа пăхмалла..."
Пуçăн пур тĕрлĕрен çамка:
Сĕвек çамка,
Хĕсĕк çамка,
Çӳллĕ çамка,
Тăм çамка,
Сарлака çамка,

Сутă çамка... – пĕтĕмпех
Пĕтереймĕн каласа тĕпĕ-йĕрĕпе.
Çамка айĕнче пуç пурри
Килĕшӳллĕ. Унсăр ăçтан
Нĕрĕ пултăр çамкан?
Куç харши те –
Хĕрли, сарри, хури –
Палăртать çамкана таçтан.
Анчах çамка айĕ мĕнле?
Тен, вăл пушă? Хывăх кăна?
Куран пуш çамкаллă çынна:
Пуçлăхра вĕт вăл – тĕлĕнмелле!
Хирĕç калаймăн ăна,
Тĕкĕ майăн шăл кăна,
Унсăрăн лекĕн инкеке –
Ӳпре çулăм çине ӳкнĕ пекех.
Пуш çамкан сăмахĕ те хывăх,
Ăна калаймастăн хирĕç... –
Çылăх!
Кун-çул ирĕ каçарĕ-ши пире
Хăшпĕр чух пулайманшăн çирĕп?
Тăшман аллине эпир паман çĕре,
Тăван çĕр ĕçченĕн, вăл – пирĕн!
Темшĕн-çке хывăх вĕçтерекенсене,
Пуш сăмах çапакансене
Вăхăтра чараймастпăр йышпа,
Çуретпĕр куç хыçĕнче пăшăлтатса.
Çула май пире пуш çамкапа,
Кун çинчен халĕ тин
Калатпăр татса.
Шел!
Чылай вăй-хала сая янă.

Тура кĕнекисене
Ма сайра тытнă эп, ăнманнă?
Тен, эпир
Çамка пуç пайĕ
Пулнине те маннă?
Пуç мими, тен, çавăнпа,
Тавралăхри лăпкăлăхпа,
Ĕçлемен, лăпкăн каннă?
Эй, çамка,
Эсĕ тăм-и вара?
Эсĕ сарлака, çутă.
Илемлĕ инçет сан умра,
Апла – такăнмасăр утăн.
Мимепе, пуç мимине хускатса,
Пыр яланах йăх-яха аркатса.
Анчах йĕркене упрар, –
Йĕрки – вăл пирĕн,
Йĕрки – халăх туптанă ирĕк.
Çамка, пĕлнĕ пул, тăнлав çирĕп,
Лĕпке питĕрĕннĕ лайăх –
Çанна тавăрса ĕçлемелле
Куллен.
Çамка, каялла кам кайĕ ?
Çĕршыв калать: – Çĕнелмелле!
Апла пуç тавралла
Тата лайăхрах шутламалла.
Çĕнĕлĕх кĕвви –
Пуласлăх тĕвви.

"Хапха çăвар",
"Карма çăвар",
"Хуп-хура шăтăк –

Тĕпсĕр çырма", –
Çак сăмахсене ахальтен мар
Халăх каланă. Тарăхтарма,
Чун-чĕрене ватма
Пултарнă пуль çавă çăвар?
Мана пултаратăр эсир калама:
"Сăмах вĕçет чĕлхе çинчен..."
Çăвар карăлмасăр сăмах вĕçмест!
Ахаль-и
Халăхăн пур тупмалли юмах?
"Шур картара хĕрлĕ ут ташлать".
Апла – карта хупă,
Ут – тĕк тăрать.
Чĕлхе вĕçĕнче сăмах çывăрать.
Каран çăвара –
Пенĕн тупă
Хаярлăх, усаллăх янрать.
Çăварти чĕлхе
Ĕнерет хĕлĕхе.
Çирĕплетех чĕлĕхе
Ыр кĕвĕ калама.
Чĕлхемĕр шырать çураçу,
Ун çинче пыл та çу,
Чĕлхепе килĕшу тупаççĕ,
Патшалăхсем туслашаççĕ.
Чĕлхен
Упрамалла пĕрлĕхе.
Пуç мими, пуç
Ма чармасть çăвара?
Апла вĕсем пĕр каварлă?
Çук, çăварăн кăварĕ
Хĕрнĕ пирки сикет, –

Пуç вара сивĕнессе кĕтет.
Кайран, каçару ыйтнă май,
Пуç пĕкĕрĕлет,
Пит хĕрелет.
Çăвара пула
Пуç та каять анраса.
Çăвар вăл карăлать –
Чармасан.
Тепĕр чух пуçĕ те япăхланать,
Тĕлсĕр-палсăр шухăш тытать:
Таварас,
Касса татас...
Эх, пуçăм, пуçăм, –
Ирхи таса сывлăшпа уçăл!
Ак, мĕне пĕлтерет карма çăвар,
Чараксăр чĕлхе?
Хăварать вĕт намăса ĕмĕрлĕхе.
Анчах та шутласа пăхар,
Асăрхар:
Чи ырă, чи таса сăмахсем
Тухаççĕ çăвартан, –
Кун пек чух – тавралăхра илем,
Сăну та çап-çутă сан.
"Юрату",
"Кил-йыш",
"Тату",
"Çĕршыв"...
"Çĕнтеру..." – Мĕн тери хитре,
Яланах чĕрере
Упратпăр вĕсене,
Вĕсемшĕн кĕретпĕр çулăм ăшне.
Çак сăмахсем ĕмĕте хăпартрĕç,

Çын кун-çулне уçĕç ялана.
Ĕмĕте
вĕсем
чăн туса кăтартĕç,
Чуралăха пĕтерсе,
çын пек туйăн хăвна.
Ара, çак сăмахсем те
чĕлхе çинченех
Вĕçерĕнеççĕ, тухаççĕ çăвартан.
Анчах та эпир
халиччен вĕсене
Шутлатпăр пуç тавралла,
калатпăр чунтан.
Апла,
Мĕнле калас,
Çыннăн пур виçе.
Ăна пуçри ăс йĕркелесе тăрать.
Кам хăй умне çеç мар,
пăхать инçе,
Çав çын сăмаха
Сăвăрать,
Çихрĕм-хывăха
Йăлтах тасатать.
Ун сăмахĕ –
Чун ахахĕ –
Халăх чунне вырнаçать.
Çăвара карма ăс-пуç кирлех мар.
Ăна чарма,
Чĕрем, вăй-хал пар,
Ăс-пуçăм, ăна вăхăтра пăкăла.
Халăх умĕнче ятăма сыхла.
Тата çакна каламалла:

Хăй çаткăнлăхне пула
Çăвар, –
Куна пытарар мар, –
Çăкăртан пуçласа наркăмăш таран
Тытать те çăтать,
Кайран
Чун-чĕре, пуç асапланать.
Эрехне вара – стаканпа, куркапа
Ĕçет – е пĕччен, е ушкăнпа.
Пуç айăплă мар-и кунта?
Пуç та: ĕçес, тет эрехе.
Ак, тапранать вара, тапранать:
Куç та хупăнать ĕмĕрлĕхе,
Йăх-тĕп те пĕтет,
Кил-йыш арканать,
Анра-сухра çуралать мĕн чул?!
Эй, пуç мими, вăрттăн ан кул,
Хăвна ху алла илмесен,
Пĕтен.
Ядерлă бомба мар,
Эрех черкки,
Уçăлсах тăнăран кĕленче пăкки,
Этемлĕхе тĕп тума пултарать.
Эй, пуç мими, пуç,
Эсир вăйсăр-и вара?
Чарар çăвара, хуплар çăвара!
Кунта, пуç мими,
Сан тăрăшмалла,
Çанна тавăрмалла.
Эрехпе анраса çуреме вăхăт çук,
Таван çĕр, тавралăх çĕнелнĕ чух,
Асаппа нушаран хăтăлнă чух.

Апла,
Мĕнле калас,
Ыррине ытларах калатпăр,
Ыррипе пурнăç туптатпăр.
Апла, ăс-хакăл пырать çĕнелсе,
Мăкалмасть вăл, çивĕчленет.
Пĕр ăс аван,
Аван икĕ ăс,
Çавăнпа, йышпа пĕрлешсе,
Лараççĕ Думăра
Депутатсем,
Халăх суйланисем,
Шутлаççĕ пуçа пĕксе,
Шавласа,
Тепĕр чух пĕр-пĕрне
Илеççĕ чышкăласа.
Пуç тавралла
Шутлама вăхăт çук,
Вăй пур чух.
Çавах та чăнлăха,
Чăннине,
Калаççĕ халăха.

"Сăмсине çиле майăн тытать", –
Илтетĕп ваттин сăмахне.
Сăмса пур, нăш-нăш! тутарать.
Ĕнĕк шăрши кĕмест-и таврара?
Уçă сывлăш енне,
Таса сывлăш техĕмне
Вăл туясшăн часрах.
Сăмсине таçта та чикекенсем
Пур-ха, –

Хăшпĕр чух йăлăхтараççĕ вĕсем.
(Ун пеккисем пурри,
Тен, пурнăç ырри?)
Пур-ха йĕрлекенсем –
Шăршласа çÿрекенсем:
"Ăçта ура хурас?
Ăçтарах сăтăр тăвас?" –
Шухăшпа хĕртĕненсем.
Сăмса каçăр пулсан та,
Ан каçăрт ăна, –
Пурнăç çавах килмĕ янтăн,
Шелле сăмсуна.
Тÿрĕ сăмса,
Вăрăм сăмса,
Элек-челек,
Наркăмăшлă çĕлен пек,
Кĕрет хăлхана,
Аркатать яланах
Кун-çулна.
Йăпăлти –
Йытă пулли –
Мăклать хăлхана,
Итлемешкĕн памасть чăна.
Хăлха, хăлха! Мĕн илтмест?!
Пахмăтла сăмахсем, ыррисем,
Хăрушшисем, хăратса сурнисем,
Тара тытса вĕлерттернисем,
Йăлăнса чĕннисем, чĕркуçленсе ыйтнисем,
Куççульпе сĕннисем,
Каçару сăмахĕсем, ылхансем,
Йĕнисем, нăйкăшнисем,
Çĕклену кĕввисем,

Малалла йыхӑрнисем
Тата ыттисем –
Ҫаксене йӑлтах илтет хӑлха,
Вӗсенче – пусӑрӑнчӑклӑх,
Вӗсенче – хавха.
Халӑх – вӑл халӑхах.
Сасӑ тумасть-тӑр кӑлӑхах.
Анчах хӑлхан
Пӗлмелле суйласа илме.
Уйӑрмалла хывӑха, –
Тӗшшине ҫеҫ йышӑнтӑр пӳлме.
Темле пулсан та, – хӑлхан
Пулмалла витӗр,
Вӑл тӗрӗссине, чӑннине илттӗр.
Тӗнче тикӗс мар чухне,
Ҫӗршывсем хушшинче
Чикӗ пур чухне,
Ҫынсен чӗринче
Суялӑхпа чӑнлӑх кӗрешнӗ чухне,
Ҫынсен ӑс-пуҫӗнче
Тӗтрелӗх те сӗрӗм,
Чӑн-чӑн уҫӑмлӑх та ҫутӑ пур чухне –
Хӑлха пултӑр
Ҫивӗч те витӗр.
Пуҫра юлтӑр
Кирли.
Пуҫра ҫил ан шӑхӑртӑр,
Апла-тӑк, хӑлха
Ан улталатӑр ҫынна, халӑха.

Пуҫ, чӑнах та, лармалла
Питӗ ҫирӗп.

Ун тавралла
Ан пултăр нимб.
Пуç ун пек суялăхран пултăр ирĕк.
Мĕншĕн тесен,
Пуç тавралла нимб пулма,
Çын Турă мар.
Çын çĕр çинче пурăнать:
Шухăшлать,
Ĕçлет,
Юратать,
Çĕнетет,
Йăнăшать,
Тӳрленет, –
Мĕншĕн тесен, пуç тавралла
Шухăшлать,
Çиччĕ виçет те – пĕрре касать.
Çĕклĕ-и? Пурăнăçра
Халăх хайланă кĕвве, –
Çĕршывăмăр йышăнать пулсан,
Ăна йышпала
Пуç тавралла
Ларнă-тăр шухăшласа.
Хăшпĕр чух шутлани те
Чăна тухмасть питĕ.
Кунта витĕр куçлă,
Çирĕп пуçлă
Пулмалла министрсен.
Апла-тăк
Вĕренмелле вĕсен.
Хушăн мар,
Халăхшăн вăй хур куллен.
Алăкна уçса яр

Ял-хула еннелле!
Пуç ларать мăй çинче.
Апла мăй ăна унталла-кунталла
Нихăçан та ан пăркалайтăр.
Вара тикĕс тăрĕ тĕнче,
Тĕрĕс, çутă шухăш пулсан çын пуçĕнче.
Утас текенĕн малалла,
Яланах
Пуç тавралла
Шутласа пăхмалла,
Халăхпала,
Çĕршывпала
Канашламалла.

## ПИРЁН ЕНЧИ ĂСТАСЕМ

*Пирĕн енчи пӳлмере –*
*Çитмĕл çичĕ вут чĕре.*
*Халăх каланинчен.*

### 1. Никĕс юпи лартма шăтăк алтакан калать

Эй, тăван çĕр, эп санăн çеремне
Çивĕч кĕреçепе пусса алтатăп.
Эс çитĕнтернĕ курăк тымарне,
Пит шел пулин те, тăрăшса тататăп.

Кунта ӳстернĕ эсĕ чечексем,
Çур кунĕнче çӳренĕ путексем.
Тен, ларса каннă кайăк ыйăнсан? –
Пурне те кĕтнĕ эс хапăлласа.

Эй, тăван çĕр, паян эп, тарласа,
Кунта çĕнĕ çурта тымар яма
Алтатăп ĕнтĕ шăтăк тăрăшса, –
Юпа пултартăр çĕр çулччен ларма.

Курăксене, чечексене çуллен
Пилленĕ пек çĕн çулçă, çĕн тымар,
Çĕнĕ çурта та, тăван çĕр, куллен
Ху пиллĕхне, ху сапăрлăхна пар.

### 2.Никĕс хывакан калать

Çурт лартма ялан та йывăр пулнă, –
Пит нушаччĕ ĕлĕк чухăна.
Никĕсри юман çавах йăл кулнă,
Ĕмĕтпе çĕклентерсе чуна.
Чулпа цементран ĕнтĕ хываççĕ

Халь йăх-тĕпĕн çирĕп никĕсне.
Улт пĕçмехпеле туса лартаççĕ
Тĕлĕнтермĕш капăр çуртсене.
Кирпĕче халь ытларах саваççĕ
Ĕмĕтлĕ, хăюллă çамрăксем.
Ашшĕсем кăштах кутăнлашаççĕ:
Чул çуртра-мĕн шăмшаксем сураççĕ.
Йывăçран вара чул çурт çумне
Виç стена ним мар тĕртсе лартаççĕ, –
Ма хуçас ват çыннăн кăмăлне?
Эй, мухтавлă кирпĕч, – тăм таванĕ, –
Вырт, эппин, каллех эс çĕр çумне.
Никĕс хывакан ятне, тен, манĕç,
Анчах никĕс упрĕ йăх чысне.
Икĕ ураталлă чаплă никĕс,
Çирĕп тыт эс çичĕ стенана.
Кунта ӳсĕç, кунта юрлĕç, сикĕç,
Хапăл пулмĕç вилĕме кăна.

Пурнăçшăн хыватăп эп сана!
Çĕр пĕтмест,
Хĕвел сӳнмест,
Эпĕ хывнă никĕс çийĕнмест.

### 3. Пура пуракан калать

Пĕрремĕш кирпĕч,
Куллуна сирпĕт!
Рет çине рет
Ӳстĕр-и çурчĕ.
Хĕвел те пире
Тухрĕ те курчĕ.
Эй, ăçта çав пуртă?
Ма çук турпас?

Эп пуракан çуртăн
Кăмăлĕ хавас.
Кам унта халсăр?
Кирпĕч часрах!
Вăйна хумасăр
Пурнаймăн çуртра.
Ултă пĕçмехлĕ
Кил-çурт ăшшине
Савăнтăр хуçи
Ĕмĕр гăршшине.
Миçе кирпĕч кĕрĕ
Çакă çурта, –
Çав çын ывăль-хĕрĕ
Пурăнтăр кунта
Çав шут таран.
Çитсен çав шута, –
Пура пуракан
Ăста сăмахне
Хăвартăр чунтан
Каласа яшсене.
Эй, малтанхи кирпĕч,
Куллуна сирпĕт!
Çак кил-тĕрĕшре
Кашни кĕтесрех
Телей упрантăр,
Ял çине салантăр.
Эп пĕлеп: çĕн пуран
Малашĕ пурах.
Кин çӳрĕ кулса,
Сас парĕ ача.
Ачапча пулсан, –
Ан чирлетĕр анчах.
Эй, пура! – çĕн ĕмĕт, –
Пул эс пурнăç хĕмĕ!

4. Алӑк лартакан калать

Йӑрр! уҫӑлтӑр алӑк,
Тӑпси – юрлатӑр.
Ялан ӑш ҫанталӑк
Пӳртре хуҫалантӑр.

Сана ҫаклатса,
Вӑрттӑн ан ларччӑр.
Усал шухӑш тытса
Ан каварлашчӑр.

Урати урлӑ
Хаяррӑн, выҫҫӑн
Ан каҫтӑр хурлӑх
Вӑрттӑн,
Ҫын хыҫҫӑн.

Кӗрсен, йӑл кулӑ
Ҫынна кӗтсе тӑтӑр.
Тӑванлӑ пулӑр,
Ан курӑр сӑтӑр.

Йӑпӑлти е элекҫӗ
Таса хӑлӑпна
Ан тытайтӑр.
Вӗсем сикчӗлеҫҫӗ
Таса кун-ҫулна.

Шур юр пек сив куҫ
Ан тӗллетӗр сана.
Кӑмӑла эсӗ уҫ
Сӗннӗ майӑн сайна.

Ача урайне
Утма аннă чухне,
Сивĕ çил, эс ан кĕр,
Ăна ан шăнт, ан вĕр.

Эй, тăпса, тăпса,
Çирĕп лар, тăпса.
Ача усăнса
Кăштах ярăнсан,
Эсĕ çилленсе
Ан чĕриклетсем.

Тарăхса, юнăхса
Сана шалт! хупакан
Ушкăнра тупăнсан,
Уншăн эс нихăçан,
Алăк, ан уçăлсам.
Алăка ырри çеç
Шак! шаккатăр ялан.
Алăкран тухсан,
Кай ĕçе,
Ан ман тивĕçе,
Анчах нихăçан
Вăрçа ан ăсан.

## 5. Чӳрече касакан калать

“Улт пĕçмехлĕ çурт лартсан,
Çич чӳрече касмаллах”, –
Тесе хуçа кăмăлтан
Пирĕнпеле калаçать.
Хуçине тăнламаллах, –
Кунта пурнăç вăл тăвать.
Виç чӳрече урама

Шут тытрăмăр кăларма.
Ашшĕпеле амăшне
Ларма пултăр кăмаллă.
Курччăр-и ял-йышсене
Çуренине çăмăллăн.
Касрăмăр шăп сад енне
Тепĕрех чÿречине.
Чупса иртет вăштăр çил,
Ал çупаççĕ çулçăсем,
Çавна майăн улмуççин,
Эх, ташлаççĕ улмисем.
Пултăр эппин хир енче
Тепĕр лайăх чÿрече.
Хум килет те хум каять,
Хирĕн çук та пуль хĕрри?
Уйра халăх тăрăшать,
Тÿпенех вĕçет юрри.
Ма тăрас-ха шеллесе?
Тепри – пăхтăр тинĕсе!
Карапсем, “Метеорсем”
Ишсе иртчĕр-и умран?
Инçетри таса илем
Куçа курăнтăр ялан.
Мĕн тăвас кил хуçине?
Курас тет вăрмансене:
Касрăмăр вăрман енне.
Шăпчăксен сасси килет,
Çу сĕрет чун-чĕрене.
Çырлара сар хĕр çÿрет,
Кин тесе чĕнес килет.
Пуртă-пăчкă сассисем
Çуратаççĕ йăл кулă.

Çуртне туса пĕтерсен,
Килĕр те
Хăна пулăр.

6. Чӳрече лартакан калать

Касрăм-касрăм пĕрене,
Туса лартрăм çĕнĕ пӳрт.
Халь лартап хашаккине, –
Кантăк, хĕвеле шав кӳрт.
Шевлесем урайĕнче
Вăй выляччăр яланах:
Хуçа куçĕ умĕнче
Ылтăн çул та çутă çул
Тăтăр-и кашни кунах?
Кĕленчеçĕм, хӳтлĕх пул
Сив çилтен, пăртан, юртан.
Ăшă чух хаваслăн кул,
Йăлтăртат çăлтăрпа тан.
Яшсем пăхчăр сан çине
Тĕмсĕлсе, ăшă куçпа,
Пĕве çитнĕ хĕрсене
Тĕк ларма пĕртте ан пар.
Çутă сӳнтерсе выртсан,
Витĕр куçлă чӳрече,
Уйăха чĕнме ан ман:
Сассăррăн тĕпел енче
Вăл çӳретĕр шуçăмччен.
Хура сăр, пушар çути
Ан вылятăр кантăкра.
Таса пурăнăç утти
Тăтăр курăнса умра.

7. Хапха тăвакан калать

Кайăк çуначĕ пек ик еннелле
Сарăлса кай эс, çĕнĕ чух хапха.
Кунта лавпа та пултăр кĕмелле,
Яш-кĕрĕм – машшинпа çӳремелле...
Ялан кĕтсе тăр эсĕ халăха.
Хĕр туйĕ тухтăр шавлăн кĕрлесе,
Мăн кĕрӳ çаптăр пушшипе сана.
Амăш илсен те хĕрĕшĕн йĕрсе,
Çавах чуптăвĕ ăшшăн пиллесе:
"Пил пултăр... Хисепле упăшкуна..."

Хĕр качча кайнă. Йĕкĕт пур килте.
Апла ăсатса ярччĕ хăтана.
Хапхамçăм, эсĕ тухъяпа кĕртен,
Тепĕр кунах хушпуллă çуретен, –
Çирĕп тытатăн мар-и йăлана?

Ан тивтĕр тĕнĕл санăн юпуна,
Туп-тӳрĕ тухтăр-и тухаканни.
Тилхепене тытма пĕлмен çынна
Хуçса кăтартăн эсĕ туртана, –
Çавăнпала пăсмасть асăрханни.

Хапха юпи! Ахаль-и вут çинче
Пиçĕхтеретпĕр санăн пĕр вĕçне.
Кăмрăк çĕрмест иккен çĕр айĕнче,
Эс çавăнпа ларатăн тахçанччен,
Тек ăсатан, кĕртен хăнусене.

Анчах та çӳрĕр хапхана хупсах,
Телей тарать, тет, вăл тăрсан уçах.

8. Суха касси пуҫлакан калать

Ӑпра,
Ӑран ыйхӑран.
Хурҫӑ ут, ав, тулхӑрать.
Эп сана вӑратмасан,
Кам хускатма пултарать?!
Кунсерен упра нӳре,
Тымара ан пӑшӑхтар.
Ҫум тавраш ан ӳстӗрех,
Вӑрӑм пучах кӑларттар.
Пӗрчӗ пултӑр пӑрҫа пек.
Тырӑ – хӑмӑш пек парка.
Туслӑ пул имҫамсемпе,
Ан хӑвар нихҫан ҫука.
Тарӑн кас, суха тимри,
Тӑпра вырттӑр савӑнса!
Ӗҫченсен янра юрри
Хирте тӑтӑр вӑй парса.
Тракторӑм, хускал хастар,
Манса кай юсав ҫинчен.

Иксӗмӗр чыса упрар
Манӑн куҫ хупӑниччен.
Пуҫламан ҫӗн ҫӑкӑр пек
Касӑлсам, хура тӑпра.
Ӗҫ пуҫланнӑ ячӗпе
Кӗрчченех вӑя упрар.
Ӗҫ пӗтет, – хир пушанать,
Плуг касси асра юлать.

9. Акма тухсан, пĕрремĕш ывçă тыра сапакан калать

Эй, сара пĕрчĕ, тута пĕрчĕ,
Сана хĕвел çўлтен сăнать.
Ав, кăнтăр çилĕ ăшшăн вĕрчĕ,
Кăшăл! Шăтма сана сунать.
Çĕр сан тўшеку пек пўлсан,
Ан вырт анасла, каса кăна.
Нўре сыпса, нўрпе тулса
Сирме васка эс тăпрана.
Тупенелле пĕрмай кармаш,
Шав сыпăк хуш кĕпçу çине.
Тен, çумăр çумĕ, – парăнма
Ан шухăшлаччĕ ĕмĕрне.
Çĕр тутлăхне ялан эс ил,
Эс ил хĕвелĕн сар сăнне.
Пĕтĕм ĕçчен парать пехил:
Центнер çумне тек хуш центнер!
Ял-йыш ятне
Çĕршыв умне
Ырăпала кăна кăлар.
Çак пилĕк çуллăхăн планне
Тăват çулта тултарма пар.
Кашни сĕтел, кашни кил-çурт
Ан аптăратăр çăкăртан.
Çынна малалла çеç эс турт,
Эс, пĕрчĕ, никĕспе пĕр тан.
Туйралăх пек кашлатăр хир,
Эс пирĕн ĕмĕте çитер.
Эс – этем ырлăхĕ, хуйхи, –
Пире савнăçпа çеç çиçтер!

## 10. Каçалăк пуçлакан калать

Каçалăка пуçланă ĕлĕк
Ывçăпала та çурлапа.
Çавăнпала,
Ыраш, ан тĕлĕн,
Комбайн пуçлать халь хедерпа.
Ывçи ун, кур, – çич-сакăр утăм:
Хăех çич çын тĕшне тăрать.
Çак таран пурăнтăм та куртăм,
Пуриншăн чунăм савăнать.
Комбайнăм, выр та çап хастаррăн,
Кĕтеççĕ, ав, грузовиксем.
Эп, пуçласа выран гектарăм,
Санран хĕрĕх центнер илем.
Комбайн çине тăван ял-йышăм
Ўкертĕр çăлтăр, ыр сунса.
Таса тырра, çĕршывăм, йышăн,
Пўлмў сан тăтăр аванса.
Кашни пĕрче куратăп эпĕ
Ылтăн пĕрчийĕн, тап-таса.
Вăл – çĕр ĕçченĕн чыс-хисепĕ,
Пăхать тар витĕр йăл кулса,
Каçалăк çĕнĕ çул пек аслă,
Йĕс сарнă çул пек курăнать.
Унпа килет пуян пуласлăх,
Телей курсе кашни çынна.

## 11. Хăмлаçăсем юрлаççĕ

Ши! кайрĕ,
Пи! кайрĕ, –
Çўле кайрĕ – маття турĕ.
Матти пулчĕ сарă ылтăн,
Колхоз унпа тупра тупрĕ.

Вĕлтĕр-вĕлтĕр хăмла пуçĕ, –
Каснă-лартнă пике çӳçĕ.
Хăмлине татса пухсан,
Сар хĕрсем вара ялан
Çĕн хăмла сăри тăваççĕ,
Йăрăс пуллĕ каччисем,
Сăра шăршине сиссе,
Хăтана куллен пыраççĕ.
Хăтара,
Çăра
Сăра,
Мирлĕ ту, –
Ан вăрçтарах.
Ташлаттар та юрлаттар,
Кăмăлпа ыталаштар.
Хăмла ĕçĕ çăмăл мар:
Вăй та кирлĕ,
Ăс та кирлĕ.
Унăн тухăçне тума
Тăрăшса ĕçлетпĕр вирлĕн.
Вĕренме ĕнтĕ килеççĕ
Чăваша та ют çĕртен.
"Пултаратăр, харсăр", – теççĕ
Тĕппипе курса пĕлсен.
Хамăр та ăсне пухатпăр,
Çĕнететпĕр,
Ăсталатпăр.
Эх, ши! кай!
Эх, пи! кай!
Сара ылтăнăм, пĕрмай!
Раççейре пулар малта,
Ĕçне
Чыс курер ята.

## 12. Кулавкка яракан калать

Эй, хăмла йуççине сыпнă чыслă ăсла,
Ку таран тăрăшни ма сая каймалла?
Сан катку умĕнче йăрăс сар хĕр тăрать,
Вăл çĕпре-кулавкка йăл кулса çеç ярать.
Апла кулă вăййи кăпăклантăр санра, –
Йуççе чашкăрнă чух çакă тăтăр асра.
Чалăш карчăк тăрать, пĕлнĕ пул, умăнта.
Сĕрнĕ хыççăн сыпсан, эс кăштах чалăштар.
Килнĕ чыслă мучи: сухалне шав шăлать,
Хăйĕн çирĕплĕхне вăл сана-мĕн парать.
Килнĕ йĕкĕт кунта, купăс та кирлĕ мар,
Тăпăр-тăпăр кăна – çăмăлçах та вăр-вар, –
Апла эс те сĕрсен, хăнана ĕçтерсен,
Çын çине тунсăхпа сÿрĕк кăмăл ан яр:
Юрлаттар, ташлаттар, турпас пек сиктерсем.
Ах, мĕн чухлĕн тăратпăр, ăсла, сан умра.
Эс кашнин кăмăлне йуçнĕ чух хыт упра.
Ĕлĕк хирĕçнĕ çын сана сыптăр кăштах,
Ал парса килĕшме вăл шут тытăр унтах.
Туслăх вăйĕпеле вăй вылятăр курка,
Эп ахаль-и яратăп паян кулавкка?!
Ĕççи çиттĕр – тарла, уявра – уявла,
Ман сĕнÿ çапла çеç, хăмла сыпнă ăсла.
Кулавкка ятăм эп, каткана витрĕм эп,
Хам каятăн кунтан –
Ирĕк пултăр йуçме!

## 13. Сăвай çапакансем калаççĕ

Тухатпăр эпир йышпа,
Пирĕн çапла шăпа,
Шеллемесĕр хамăр вăя
Çапмалла, çапмалла сăвая.

Эй, сӑвай, сӑвай, тӳрӗ лар,
Ҫӗр тӗпне,
Ҫӗр тӗпне анах пар.
Тукмака йышпала тытатпӑр,
Пӗр йӑтатпӑр та пӗр ҫапатпӑр.
Ай – пӗрре!
Ӳс, хӑватӑм!
Ай – иккӗ!
Тӗрӗсле, ялти ватӑ,
Сӑвай чалӑш мар-и?
Ай – виҫҫӗ, тӑваттӑ!
Тӳп-тӳрӗ ? Ҫап харӑс!
Сӑвай ҫапрӑн – пулан сӑваплӑ,
Кӗпершӗн ялан та явапла.
Кӗперне хывӑпӑр хурҫӑран,
Карлӑкне тытӑпӑр пӑхӑртан,
Кӗпер урлӑ телей илсе каҫ,
Хурлӑх юлтӑр тӑрса аякка.
Ялан пурӑнмашкӑн тату
Санпа пытӑр ҫумри юрату.
Йӑлтӑр кулӑ упрантӑр санра,
Ан каҫайтӑр инкек сан хыҫран, –
Ҫавӑнпа карлӑк хушӑкӗ пур,
Хушӑкран шыва ӳктӗр хӗн-хур.
Ҫӗн кӗпер ҫине кӗнӗ чухне
Ҫӑпаталлӑ пулсан,
Тепӗр ҫыр хӗррине
Атӑпа тӑр тухса.
Каҫтӑр трактор, машина,
Каҫтӑр туй кӗрлесе.
Хаяр кӑмӑллӑ ҫыннӑн
Ҫилли кайтӑр иртсе.

Туслăх сĕнтĕр кĕпер,
Саванса çеç çӳрер.
Ай – пĕрре!
Ӳс, хăватăм!
Ай – иккĕ!
Çухалтăр шикĕ!
Виççĕ, тăватта!
Çĕн кĕпер хыватпăр
Ĕмĕр-ĕмĕре.
Çынна ыр сунатпăр:
– Кас, çӳре!

14. Хĕрпе каччă пуçламăш хут пĕрле ларнине курсан, ватă çын калать

Каска çинче эсир ларатăр,
Кăшт сĕртĕнмешкĕн те хăратăр.
Шур хурăн хураллать сире,
Пăхать çĕн уйăх тӳперен.
Эсир тин çеç çеçке çуратăр,
Анчах ачаш чечек çине
Тăм ӳкесрен асăрханатăр,
Куç пек упратăр пĕр-пĕрне.
Ку пит аван. Çынсен сăмахĕ
Ан кĕтĕрччĕ сирĕн хушша.
Вăтанчăк чун ялтра ахахĕ
Туйса çеç тăтăр-и ăшша?
Ăмсаннипе пĕр-пĕр элекçĕ
Ан ятăрччĕ сирĕн ята.
Хăшпĕр чухне ним систермеççĕ,
Сĕреççĕ тикĕт хыçалта.
Çавăнпала, çитсен çу кунĕ,

Ҫырла хĕрелнĕ вăхăтра
Ăна татмашкăн куҫсем ҫунĕҫ,
Эсир – татма ан васкăрах.
Икĕ чĕре тек пĕр кĕвве
Ĕнернине туйса илсессĕн,
Хăй ăшшине те ҫут хĕвел
Пĕр иксĕре ҫеҫ пиллесессĕн,
Шут тытăр ҫавăрма йăва.
Кам хисеплет юратăва,
Вăл нихăҫан та васкамасть.
Таса шăпаллă ăрăва
Чыспа кăна пулать тăсма.

15. Кин кĕртекен калать
Ялти ырă сарă хĕр,
Килĕме кин пулса кĕр.
Упăшкушăн пул тĕрек,
Аннўпеле туп чĕлхе.
Ан сарса ҫўре элек,
Ĕнерме пĕл хĕлĕхе.
Сак тулли ача-пăча
Тăтăр хĕвĕшсе анчах:
Хĕрача-и вăл е ывăл,
Ан тиркешĕр, – пулччăр сывă.
Пурнăҫăм ăнмасть тесе
Нихăҫан та ан шутла:
Лавне хăвăн тиесе
Малалла
Шав утмалла.
Ушкăна ертсе пыма,
Кинĕм, эсĕ пултаран,
Анчах каялла чакма

Хăйнă ан пул нихăçан, –
Йăхра ун пекки пулман.
Сан çине пĕрре пăхсан,
Çын пултартăр ăмсанма.
Ан тух пурпĕр картаран
Мăшăрна улăштарма.
Чыслă пул та ăслă пул,
Таса тăтăр умри çул.
Чап илсессĕн, эртелре
Каçăр пуçлă ан çӳре, –
Ку килĕшес çук пире.
Хăна кĕрт уявсенче,
Чалăш ан пул черккерен:
Апат-çимĕç умĕнче
Урараң мĕнле ӳкен?
Кинĕм, пил сана манран,
Пуранăр çĕр çул таран.
Килӳ хурт вĕлли пулсан,
Эсĕ пулччĕ хурт ами.
Çăвăр уйрăлса тухсан,
Ан пулсам пыл тăвайми.
Пил сана! Ирт тĕпеле,
Çирĕп тыт тилхепене.
Хурлăхне сирер пĕрле,
Эс кӳрсех тăр ырлăхне.

## 16. Йывăç лартакан калать

Эп лартнă çак улма пахчи
Кама сайлать-ши улмине?
Анчах та ял ачи-пăчи
Киленĕ ун çимĕçĕпе.

Эп лартнă йăрăс çăкасем
Пылне сĕнейĕç-ши мана?
Анчах та ял ĕçченĕсем
Тутанасса хĕрӳн шанан.

Хам лартнă ешĕл чăрăшсем
Кантарĕç-ши ыр сулхăнта?
Ун тавралла мăнукăмсем
Хаваслăн вылĕç Çĕн çулта.

Эп йĕкел лартнă. Юмансем
Пулайĕç-ши никĕслĕхе?
Анчах туятăп: тымарсем
Вĕсен, йăх пек, ĕмĕрлĕхе.

Эп лартнă шурă хурăнсем
Шывне ĕçтерĕç-ши мана?
Анчах та куç тулли илем
Кантарĕ ывăннă çынна.

Эй, ешĕл тусăм! Кăмăла
Ан хуç, çуллен папка кăлар.
Юлташ, калап çавăнпала:
Пĕр йывăç касрăн – виççĕ ларт!

## 17. Ватти çамрăка ăс парса калать

Ĕç çеç телей кӳрет çынна:
Унпа юлташ хулпуççине
Туятăн эсĕ яланах,
Пăхатăн килес кун енне.

Ĕç çеç хавас кӳрет çынна:
Ĕшеннĕ пултăр, – пурпĕрех, –
Ăнăçупа вĕçле куна, –
Çĕн кĕвĕ ĕнерет чĕре.

Ĕç çеç илем кӳрет çынна:
Курсассăн унăн тухăçне, –
Тусна эс лайăхрах сăна, –
Эс курăн йăлтăркка сăнне.

Ĕç çеç хăват парать çынна:
Кайса ӳкмешкĕн тăнă пул, –
Хăй шавĕпе чĕнет сана,
Сунать кун-çулшăн вăрăм çул.

Ĕç чыс, хисеп кӳрет çынна,
Апла мĕн ĕмĕр тăршшĕпех
Мухтар, чуна парар ăна,
Çĕршывăма парăннă пек.

## 18. Туслăх сасси

Мĕн ачаран саватпăр туслăха,
Пĕр тĕвĕпе вăл çирĕппĕн çыхать...

Муркаш енне пăлхар çынни килет.
Калать: – Пирĕн енче те пур Муркаш...
Аваллăх хăйĕн чаршавне сирет:
Чăваш
Пăлхарпала вăл хурăнташ.

Чипер пике пырать те ун умне
Парать парне –
Тĕрленĕ кĕпине.

Пăлхар çынни тĕрĕ çине пăхать:
– Ку пирĕн тĕрĕ майлă курăнать!...
Асилтĕмĕр эпир аваллăха:
Тутар-монгол эшкерĕ пĕр йăха
Уйăрса янă Атăл хĕрринчен,
Анчах та халăх пурăнать, пĕтмен.

Асилтĕмĕр мухтавлă Шипкăна,
Унта пуç хунă манăн асатте.
Килсессĕн йывăр хамăр тăвана,
Хăватлă туслăх çăлнăçпа çитет.

...Паян эп хамăр ирĕк хулара
Тăван пăлхар çыннисене курап.
Завод лартаççĕ
Шур Шупашкарта,
Ыр ĕçшĕн вĕсене тавах чунтан.

Венгр çынни килет пирĕн рата,
Ав, чех-хăмлаçă
Уй-хирте çӳрет.
Халăхпа халăх туслăн ал тытать,
Эпир пурнатпăр чысла çемьере.

Ан тив,
Чĕлхемĕрсем пĕр евĕр мар,
Вырăс чĕлхи çăлать тĕлпулура:
Хушать килĕштерсе вăл пурăнма,
Тĕнче умне пире вăл кăларать.

## 19. Асран кайми...

“Алран кайми аки-сухи,
Асран тухми ати-анни...”

Иртрĕ ĕнтĕ хуйхи-суйхи,
Телей курать пиртен кашни.
Асран тухми тăван кал-çурт,
Асран кайми тантăшăмсем,–
Сирĕнпеле чунра вăй пур,
Çăмăлланать йывăр çĕклем.

Асран кайми пуян уй-хир,
Асран тухми лаштра вăрман,
Эсир – чĕрешĕн çывăххи,
Эп сывлăхлă эсир пуртан.

Асран кайми Тăван Çĕршыв,
Асран тухми ялтра хĕвел
Мана калаççĕ: – Юрă хыв,
Ĕнер чĕнуллĕ ыр кĕвве!

"Асран кайми ати-анни..."
Пур пĕлĕш-тантăшăм умра.
Пĕр иксĕлми кун-çул ани
Тулăхне патăр пурнăçра...

Асран кайми юррăмăрсем,
Асран тухми йăламăрсем
Мухтаççĕ аслă Раççее,
Чĕнеççĕ: – Туптăр телее!



Мустай Каримпа Георгий Ефимов. Г.Ефимов пушкăрт халăх поэчĕн “Уйăх тĕттĕмленнĕ каç” тата “Салават” трагедийĕсене чăвашла куçарнă.





М.Горький ячĕллĕ Литература институчĕн картишĕнче. Сулахайран сылтăмалла – Г.Тимченко, Г.Ефимов, Е.Долматовский, А.Рыбаков, Лия, В.Марьинский.





Литинститут семинарĕнче. Сулахайран сылтăмалла – Владимир Соколов, Иван Ганабин, Машидат Гаирбекова, Константин Ваншенкин, Георгий Ефимов.(50-мĕш çулсен пуçламăшĕ.)





СССР писательсен 4-мӗш съезчӗн кулуарӗнче: М.А.Шолохов, Н.С.Дедушкин, Г.А.Ефимов, Н.Т.Терентьев.





И.С.Максимов-Кошкинский, Н.Т.Терентьев,
Г.А.Ефимов пуху кĕрекинче.





Ас илтерчĕ кивĕ сăнӳкерчĕк.





Сӑваҫ хайӗн амӑшӗпе Иулита Степановнапа
Малти Ӑнтавӑшри ялти пахчара.



Г.Ефимов мăшăрĕпе, Чăваш халăх артисткипе
С.Н. Ефимова-Михайловапа.



# ШУХĂШ ПАЙĂРКИСЕМПЕ АСА ИЛŸ ТĔПРЕНЧĔКĔСЕМ

## ИКĔ АСЛĂ ÇЫН ЮРАТĂВĔ

Пулать вĕт çапла. Пулать. Икĕ аслă çын, тĕнчипе паллăскерсем, пĕри – А.С.Пушкин сăвăç, тепри М.И.Глинка композитор, пĕр йăхри, пĕр-пĕринпе чи çывăх хĕрарăмсене юратса пăрахаççĕ.

А.П.Керн ятне, тен, Александр Сергеевич Пушкин “Я помню чудное мгновенье” сăвă çырман пулсан, çав сăвва Анна Петровнăна халалламан пулсан камах пĕлчĕ-ши? Çакă мар-и ĕнтĕ сăввăн пысăк пĕлтерĕшĕ? Çынсем ăна вулаççĕ те кам-ши вăл А.П.Керн теççĕ? Акă вара – тытăнать хĕвĕшŸ. Пĕри хĕрарăмăн кун-çулне тĕпчеме тытăнать, тепри юрату пирки кăсăкланать. Чăнах та, тытăнать истори урапи çаврăнма.

Поэт хăйĕн сăввине 1825 çулта Михайловское салинче çырать. Вăл вăхăтра Анна Петровна Вульфсен кил-йышĕ Тригорскинче пурăннă. Сăвăç, паллах, кŸршĕсем патне çŸренĕ. Унта вăл А.П.Кернпа, хĕр чухнех паллашнăскерпе, тепĕр хут тĕл пулать. Халĕ Анна Петровна хĕр мар ĕнтĕ, ăна качча панă. Çапла, качча панă. Чипер хĕре, вун çиччĕ тултарнăскере, 52 çулти Керн генерала качча параççĕ. Вăхăчĕ çапла пулнă. Ашшĕ-амăшĕн ирĕкĕнчен тухайман хĕрача. Шăпа...

Аслă сăвăçăмăр Наталья Николаевнăпа мăшăрланнă хыççăн Анна Петровнăпа

Александр Сергеевич хушшинчи çыхăнусем хавшанă.

Çапах та А.П.Керн аслă поэта асрах тытса пуранна. Шăпа хушнипе-ши? А.С.Пушкин палăкне Мускава лартма илсе пынă чухне палăкпа тупăк çул çинче тĕл пулнă теççĕ. Кун пирки эпĕ сăвă та çырнăччĕ. Б.Л.Модзалевский (А.П.Кернăн малтанхи биографĕ) çырнă тăрăх çапла пулнă иккен. Пурнăçпа сыв пуллашас умĕн Анна Керн чирлесе ўкнĕ. Вара вăл, чирлĕскер, шав илтет, курать: 16 лаша кўлнĕ капмар платформăна турттарса пыраççĕ иккен. Платформа çинче гранитăн пысăк кĕмĕркки выртнă. Вăл кĕмĕркке А.С.Пушкинăн пулас палăкĕн пьедесталĕ пулнă-мĕн. Çавăн чухне А.П.Керн: “Тинех! Ну, Турра шĕкĕр, тахçанах лармаллаччĕ!” – тенĕ имĕш. Тепĕр темиçе кунран сăвапла хĕрарăм ĕмĕрлĕхех куçне хупнă теççĕ. Ака вăл “асри тĕлĕнмелле самант!” Тĕлĕнмелле асамлă сăвă, мĕн чухлĕ легенда çуратнă. Ку – Пушкин хисепĕ, чысĕ! Пире, паянхи çынсене, вăл хăй асамлă таланчĕпе çатăрласа илет пулсан, килес ăрусем те унăн ятне çўлте тытса пурăнĕç:

Я помню чудное мгновенье,
Передо мной явилась ты
Как мимолетное виденье,
Как гений чистой красоты...

Акă, мĕнле хак парать А.С.Пушкин А.П.Керн сăнарне. Апла вĕсем иккĕшĕ те Раççей халăхĕсен асĕнче пурăнаççĕ. Ку – гени сăввин асамĕ, вилĕмсĕрлĕхĕ.

А.С.Пушкин халаллӑ ҫак сӑвва ҫырнӑранпа вун пилӗк ҫул иртсен, 1840 ҫулта, тепӗр аслӑ ҫын Михаил Иванович Глинка композитор “Я помню чудное мгновенье” ятлӑ чаплӑ романс кӗвӗлет. Кама халаллать тетӗр эсир ҫак романса? А.П.Кернӑн хӗрачине Екатеринӑна.

Кунта кӗскен те пулин М.И.Глинкӑн мӑшӑрлӑ пурнӑҫӗ пирки аса илме тивет. Композитор арӑмӗ ӑна улталаса пурӑннӑ иккен. Ют арҫынсемпе иртӗхнӗ. Ҫавӑнпа Михаил Иванович уйрӑлма, ҫав хӗрарӑмпа ӗмӗрлӗхех сыв пуллашма шут тытать. Анчах ун чухнехи Раҫҫейри суд йӗрки вӗсене уйрӑлма ирӗк памасть. Шӑпах ҫав вӑхӑтра М.Глинка Екатеринӑпа паллашать. Екатерина килӗшет качча тухма, анчах – чӑрмав. Аслӑ композитор арӑмӗпе уйрӑлман. Венчете тӑма май ҫук... Вара композитор “Я помню чудное мгновенье...” романс кӗвӗлет. Ҫак романс кӗҫех Раҫҫейӗпех сарӑлать. Мӗншӗн тесен кӗвӗ ҫунатлӑ, кӗвве хӑват паракане – А.С.Пушкин сӑвви. Курӑр-ха, юрату мӗнле чаплӑ шедеврсем ҫырма хӑват парать?! Ахаль мар пулӗ “Юрату ҫӗр тӗнӗлне тытса тӑрать” теҫҫӗ чӑвашсем. Хӑватлӑ калана!

М.Глинка А.Пушкинӑн “Руслан и Людмила” поэми тӑрӑх вилӗмсӗр опера ҫырнӑ.

Икӗ аслӑ ҫын, Раҫҫее тӗнче умӗнче чапа кӑларнӑскерсем, иккӗшӗ те пӗр йӑхри хӗрарӑмсене юратса пӑрахни ӗмӗр манӑҫми, асран тухми хайлавсем ҫыртарнӑ.

Çавах та мĕн тăван, вĕсем мăшăрланайман. Шăписем çапла килсе тухнă-тăр? Кирек мĕнле пулсан та çав аслă çынсем вĕсене юратнă. Апла вĕсем юратăва тивĕçлĕ пулнă. Çав хĕрарăмсене пула шедеврсем çуралнă. Çакă та паха. Генисем çырни – ятсăра ĕмĕрлĕх сумлă туса хăварать. Ку – пысăк чăнлăх.

Тавах икĕ аслă çынна!

## КУÇ УМĔНЧЕХ

Аслă çĕршывăмăр, тăван халăх умĕнче – хамăр çĕршывăмăрта çаç-и? – тĕнче умĕнче чапа тухнă çынпа камăн курнăçас е тĕл пулас килмĕ-ши? Мĕншĕн тесен эпир унăн ятне кунсерен тенĕ пекех илтетпĕр, унăн сăнне хаçатсемпе журналсен страницисенче час-часах куратпăр.

Чап вăл хăй тĕллĕн килмест-çке. Çын ятне ĕç çеç ырă ят парать. Ĕçре – паттăрлăх та, чун илемĕ те, чĕре çирĕплĕхĕ те пур. Ахальтен мар пуль халăхăмăр çурма шӳтлесерех: “Тарла-тарла ĕçлекен, юрла-юрла çиекен”, тенĕ. Çирĕпписем çеç хăйсенчен хăйсем тăрăхлама пултараççĕ, ĕçре куллен паттăрлăх кăтартаççĕ пулсассăн та, вĕсем ялнахиллех, хăйсене тĕлĕнмелли нимĕнех те туман пек тыткалаççĕ.

Ун пек çынсемпе уйрăмах çамрăксем курнăçма ăнтăлаççĕ. Çамрăклăх вăл шырать, хăй çул-йĕрне ĕмĕрлĕхех палăртса хума ĕмĕтленет. Калăпăр: ача чунĕпе мĕн пĕчĕкренех строитель е уй-хир ĕçченĕ пуласшăн ăнтăлать.

Унӑн пӗр-пӗр стройкӑра хӑй юратнӑ ҫынни пур е тӑван ялӗнче выльӑх-чӗрлӗх пӑхса е тӗш тырӑ ӳстерсе ырӑ ят илнӗ ҫынна куҫласа хурать вӑл. Тепри тата тӑван ҫырулӑхӑмӑрта, литературӑн вӗҫсӗр-хӗрсӗр уй-хирӗнче тӑрӑшасшӑн. Ҫапла вара, ӗҫри ӑсташсемпе тӗл пулни ҫамрӑк ҫыннӑн, ӗмӗтленекенӗн пуласлӑхне татса пама та пултарать. Кӑна эпир хамӑр пурнӑҫран та аван пӗлетпӗр. Ҫын хӑй ӗмӗтне кирек хӑҫан та пурнӑҫа кӗртме тӑрӑшать. Тӑрӑшакан ҫын яланах мухтава тивӗҫ, хӑй ҫӗклемне, хӑй ӗмӗтне ҫурма ҫулта пӑрахса хӑваракан е татакан этеме имшерккен те хевтесӗррӗн куратӑп. эпӗ.

Ырӑ ятлӑ ҫынсемпе ҫамрӑксем ҫеҫ мар, ҫулланнисем те курнӑҫма тӑрӑшаҫҫӗ. Акӑ, эсӗ ху ӗҫунте вӑй хурса ӗҫлетӗн. Ҫав паллӑ ҫынпа тӗл пултӑн та – сана унӑн шухӑшкӑмӑлӗ, унӑн ӗҫ меслечӗ ҫӗнӗлӗх ҫулне уҫса парать. Ҫакӑнта ӗнтӗ пирӗн пуласлӑхӑмӑр ҫӑлкуҫӗ.

Ача чухне эпӗ хам та кампа кӑна тӗл пулма ӗмӗтленместӗм-ши? Астӑватӑп-ха: А.С.Пушкин патне ҫӗнӗ юмах ҫырма ыйтса ҫыру ҫырнӑччӗ. “Хурҫӑ мӗнле хӗрнӗ” кӗнекене вуласа тухсассӑн, Корчагинпа тус пулма ӗмӗт пурччӗ, “Уҫнӑ ҫерем” романпа паллашсан, Давыдова хамӑр колхоз председателӗ пулма ыйтас килчӗ. Ун чухне эпӗ ку кӗнекесене чӑвашла вуланӑ, мӗншӗн тесен вырӑсла тӗшмӗртеймен. Тав ҫав тӑлмачсене. Мӗн чухлӗ пысӑк, пархатарлӑ ӗҫ тунӑ вӗсем.

Çапла, вырăссен халькхи вăхăтри чаплă та паллă писателĕ Михаил Александрович Шолохов писательпе эпĕ "Уçнă çерем" кĕнеке урлă 1937 çулсенче паллашнă. Романа вуласа тухнă хыççăн ăна хăйне курса калаçас ĕмĕт чунра питĕ арасланса кайнăччĕ манăн. Анчах та Дон хĕррине, казаксем пурăннă çĕре, мĕнле майпа тата хăçан çитсе укме пултарăпха эпĕ? Çав териех пысăк çынна чăрмантаракансем мансăр та нумай вĕт. Вара кăштах лăплантараттăм хама хам. Вăл çырнине вулама пултарнăшăн та эпĕ телейлĕ. Ара, ĕлĕкхи çынсем хăйсен хушаматне те çырма пултарайман теççĕ те... Мана самана йăлтах парать ав. Апла вулама, çырма вĕрентекен саманана пысăк тав! Çапла чуна кантараттăм эпĕ.

Ĕмĕр сакки, чăнах та, сарлака иккен. Михаил Александрович Шолоховпа – тĕнчипе чапа тухнă писательпе – куçа-куçăн курнăçма тĕл килчех пурнăçăмра. Унăн ĕçлĕхлĕ аллине чăмăртама та турĕ килчĕ вĕт. Кун пекки вăл юмахра çеç пулма пултарать. Мĕнех калайăпăр? Самани çапла мар-и пирĕн – юмаха чăна кăларать.

Маларах каланăччĕ ĕнтĕ, 1948 çулта эпĕ Мускаври Максим Горький ячĕпе хисепленекен Литература институтне вĕренме кĕтĕм. Пуçланса кайрĕ вара манăн çĕнĕлле пурăнăç... халиччен тĕлĕкре те курма пултарайман писательсене куç умĕнче куратăн. Пултарулăх семинарĕсене К.Федин, К.Паустовский, П.Антокольский, В.Луговской, А.Коваленков,

Е.Долматовский тата ытти паллă прозаиксемпе поэтсем ертсе пыраççĕ. Вĕсем пире хăйсен ĕç опычĕпе паллаштараççĕ, творчествăлла ĕçĕн вăрттăнлăхне туйса илме пулăшаççĕ.

Пултарулăх семинарĕсемсĕр пуçне, эпир хамăр кăмăллană тăрăх, ятлă-сумлă писательсемпе, поэтсемпе тĕл пулатпăр. Вĕсем пире литература ăсталăхĕ пирки яр уççăн каласа пăраççĕ, хăйсен ĕç лабораторийĕпе паллаштараççĕ. Эпир С.Маршак, А.Фадеев, И.Эренбург тата ытти паллă писательсемпе тĕл пулнă ĕнтĕ. Литература институчĕн студен-чĕсемпе курса калаçнă хыççăн çулте асăннă писательсем, çав тĕлпулура каланă шухăшсене пĕтĕмлетсе, статьясем те пичетле-пичетле кăларчĕç.

– Шолохов Мускавра... – калаçма пуçларĕç Литература институчĕн аудиторийĕсемпе коридорĕсенче.

– Института килме ыйтас ăна. Хăйĕн ĕç мелĕсемпе паллаштартăр пире, – шавлама тытăнаççĕ хăшĕ-пĕрисем.

Мĕн тăвăн? Студентсем – вĕсем хăюллă халăх. Шут тытрĕç пулсассăн – тăваççех.

М.А.Шолохов патне акă тăвата студентран тăракан делегаци яма калаçса таталчĕç. Вĕсем – К.Ваншенкин, И.Ганабин, Б.Балтер. Тăваттăмĕшĕ эпĕччĕ. Ун чухне эпĕ хамăр курсăн комсоргĕччĕ.

Паллă писатель "Мускав" гостиницăра пурăнатчĕ.

Çитрĕмĕр. Администратортан вăл хăш хутра, хăш пӳлĕмре пурăннине ыйтса пĕлтĕмĕр.

Малтанах администратор пире каласшăн пулмарĕ. Пирĕн ăна хамăр камне тата мĕн сăлтавпа килнине тĕплĕн каласа пама тиврĕ.

Акă, М.А.Шолохов пурăнакан пÿлĕм алăкĕ. Алăка хăюсăррăн та асăрханса шаккатпăр. Кăштахран:

– Кĕрĕр, кĕрĕр!.. – текен вăйсăр сасă илтĕнчĕ. Эпир тăватсăмăр та кĕрсе тăратпăр. Пирĕн умра салтак гимнастерки тăхăннă çын тăрать. Галифе. Атă. Ăна хамăрпа паллаштаратпăр. М.А.Шолохов темĕнле именчĕклĕн йăл кулса илчĕ те:

– Вăхăтлă çитрĕр эсир... Тин çеç тухтăр тухса кайрĕ. Вăл кунта пулнă пулсассăн, çак таран йышлă ушкăна ман патăма кĕртес çукчĕ те пулĕ, – терĕ çемçен. Унăн сасси йăваш илтĕнет. Чăнах та, чирлĕ писатель.

Пире вăл ларма сĕнчĕ. Эпир ăна хамăр ун патне мĕн çамăлпа килни пирки пĕлте-ретпĕр.

– Эй, шăллăмсем!.. – йăл кулса ячĕ каллех Шолохов. – Тем пекех пынă пулăттăм. Чирлесе ÿкрĕм вĕт. Тен, ÿлĕмрен? – куçран тĕллесе пăхрĕ вăл пире.

Эпĕ ăна çăтса яма хатĕрленнĕ пек сăнатăп. Çÿçĕ унăн хĕрлĕрех. Электрица лампин çутинче çырă пек те курăнса каять. Çамки çÿллĕ. Сăмси çÿхерех те курпунлăрах. Мăйăхĕ те хĕрлĕрех. Калаçма хуллен калаçать. Сасси çемçе. Юрласа ярсассăн, тенор пек юрлассăн туйăнать. Анчах витĕмлĕн калаçма тытăнсан, сасси хулăмланать. Куçĕсем пĕрре йăлтăраса каяççĕ, унтан сасартăк тĕксĕмле-

неççĕ. Те хăй чирлĕ пирки? Кăна пĕрре курнипех никам та татса параяс çук пек туйăнать, ман шутпа.

– Писатель е сăвăç пулма институтра вĕренме майĕ пур-и вара? – чеен ыйту пачĕ вăл пире кăштахран.

Эпир шухăша кайрăмăр. Мĕнле хуравламалла ăна? Пиртен пĕри ăна хурав пама хăюлăх çитерчĕ.

– Эпир, Михаил Александрович, писатель пулма мар, культурăллă пулма вĕренес тетпĕр. Тĕнче литературипе, вырăс классикĕсемпе, совет литературипе тĕплĕн паллашатпăр. Пултарулăх семинарĕсенче хамăр çырнисене сӳтсе яватпăр, тавлашатпăр. Йăнăшсан – пире ӳрлетеççĕ. Семинар руководителĕсем пире тĕплĕн тишкереççĕ, – терĕ тăватсăмăртан пĕри.

– Тĕрĕс ăнланатăр эсир... Писатель пулма пысăк культура, пысăк тавракурăм, пысăк тӳсĕмлĕх кирлĕ, – кĕскен хурав пачĕ юлташăмăр сăмахне хирĕç ятлă-сумлă писатель. – Тата çакна та ан манăр: çутăпа пĕлӳлĕх патне кашни валли алăк уçă пултăр тесе тата çав алăка яланах уçă тăратас тесе, сирĕн аслаçăрсемпе аçăрсем, йăх-тĕпĕрсем юн нумай юхтарнă. Çутă патне хăюллăн утăр, кĕнекене чунпа парăнса юратăр! – Вăл хăйĕн чирĕ çинчен манса кайрĕ пулас, çĕкленӳллĕн калаçма тытăнчĕ. Куçĕсем шĕл кăварăн кăвак çулăмĕпе çунаççĕ. Акă мĕнле çын иккен вăл М.А.Шолохов. Унтан пĕр вăхăт хушши лăпкăн, чĕнмесĕр ларчĕ.

Кĕçех вăл ура çине тăчĕ те тепĕр пÿлĕме кĕрсе кайрĕ. Пÿлĕмрен пирус пачки илсе тухрĕ.

– Туртатăр-и? – сĕнчĕ вăл пире.

Эпир пачкăран пĕрер пирус илтĕмĕр. Пĕр юлташăмăр пирĕн туртмастчĕ. (Кайран эпир унран, Шолохов патĕнчен тухсан: "Эсĕ туртмастăн вĕт? Пируса ма ахалех сая яратăн?" – тесе ыйтрăмăр. Вăл пире: "Эсир вăл туртакан пируса унпа пĕрле туртса савăнтăр, эпĕ хăть табак шăршине шăршласа пăхам", – хуравларĕ юлташăмăр.) Ачалларах та ĕнтĕ, мĕн тăвăн? Тÿрĕ кăмăлла пулни савăнтарать.

М.А.Шолохов, пирус туртнă май, сăмахне малалла тăсрĕ:

– Çамрăксемпе калаçма юрататăп эпĕ. Вĕсенче – пуласлăхăмăр, эпир вĕсене эстафетăна паратпăр... Пĕлетĕр-и? – те пире, те хăйне ыйту пачĕ вăл сасартăк. – Сăмах та çук, халĕ çирĕм е вăтăр çул каяллахи пек çырма юрамасть, халĕ лайăхрах та сумлăрах çырмалла. Мĕншĕн тесен, пирĕн вулакансен культуралла шайĕ питĕ ÿснĕ. Çапла лару-тăрура юлташла критика тÿсме çук кирлĕ. Опытлă писательсене те, çамрăк литераторсене те критиклемелле... – тишкеруллĕн пăхрĕ М.А.Шолохов пирĕн çине çак сăмахсем хыççăн. Эпир ăна тимлĕн итлетпĕр. Кăна кура-ши вăл: – Сиртен хăшĕ те пулин критиксенчен пĕри айне пулса курнă-и-ха? – ыйтрĕ çурма шутлĕн.

– Пирĕн халĕ кĕнекесем тухайман-ха, – пуҫне пĕксе, именчĕклĕн хуравларĕ пирĕн юлташ.

– Кĕнеки пулĕ-ха вăл... Эсир халĕ ҫамрăк, – хавхалантарчĕ ăна писатель. – Эпĕ ҫапла шутлатăп, – терĕ вăл шухăшлăн, – ҫамрăк писательсене критикленĕ чух, критикăн ашшĕ пек тăрăшмалла, ашшĕ пек хистемелле, ыйтмалла. Эпĕ сунара юрататăп. Мана пĕр сунарҫă ҫапла каласа пачĕ: кăйкăр хăйĕн чĕпписене ҫапла вĕҫме вĕрентет иккен. Ҫуната сарса ярсассăн, чĕппisene вăл анса ларма памасть, ҫӳлтен ҫӳле, тӳпенелле хăпарма хистет... Акă епле тăрăшать чĕпписемшĕн кăйкăр!

Анчах та пирĕн хăш-пĕр критиксем ҫамрăк писателе чукмарпа туртса ҫапаҫҫĕ те, ҫыннăн шанчăкне ҫухаттараҫҫĕ. Кайран ҫав писатель ҫĕкленме пултарĕ-и, ҫук-и – паллă мар.

– Эпир халĕ кун пеккине тӳссе ирттермен-ха, курман, – хуравлать пирĕнтен пĕри.

– Тӳсменни – аван. Анчах хатĕр тăни пăсмасть. Тепĕр чухне ҫапла та пулать: писатель мĕн ҫырнине критик ăнланса илеймест-и е унăн ăнланас та килмест? – тытать те аркатса тăкать. Ҫав ăнкарайман критике тепĕр ăслă критик хирĕҫ тухни ҫеҫ сана ҫĕнĕрен ĕҫлеме вăй-хал парать.

Калаҫу вăрăма тăсăлчĕ пирĕн. Кайма та вăхăт. Ҫитменнине – М.А.Шолохов чирлĕ. Эпĕ ҫакна юлташăмсене систертĕм.

– Эсир вырăс мар пулас? – ман калаҫуран сисрĕ ĕнтĕ писатель.

– Çапла. Эпĕ – чăваш, – именсе хуравларăм эпĕ.

– Пĕлетĕп чăвашсене... Вăрçăччен "Уçнă çерем" чăвашла пичетленсе тухнăччĕ. Анчах нимĕçсен бомби чылай кĕнекесене пĕтерчĕ... Сирĕн Ухсайăн "Кĕлпук мучине" те пĕлетĕп эпĕ, – кăмăллăн кулса алă пачĕ вăл мана. Эпĕ ăна Илья Тукташ "Лăпкă Дон" романа чăвашла куçарма тытăнни çинчен те каларăм...

– Каçарăр, шăллăмсем, сывалсан, сирĕн института çитетĕп те-и, тен... Анчах çакна астăвăр, çамрăксем: писателĕн халăх умĕнчи ответлăхĕ пысăк, питĕ пысăк. Пурсăмăр та, çав вăхăтрах, кашнине уйрăммăн илсен те, эпир халăхăмăр совеçĕ пулса тăратпăр... – М.А.Шолохов пире алăк патне çитиччен ăсатрĕ.

Акă сана ача чухнехи ĕмĕт. Аслă пурнăç çулĕ таçта та илсе çитерме пултарать иккен.

М.А.Шолохов пирĕнпе калаçнă чух каланисене эпĕ кайран вăл тухса каланă сăмахсенче тĕл пулаттăм. Апла вăл хăй шухăшне нихçан та пытармасть, йăлтах халăха каласа парать.

Кун хыççăн эпĕ М.А.Шолоховпа хирехирĕç тăрса курманччĕ.

СССРти писательсен тăваттăмĕш съезчĕ. Мускава чăваш писателĕсен делегацийĕ те пынăччĕ. Съезд уçăлнă кун эпир – Н.Терентьев, Н.Дедушкин тата эпĕ – Кремльти Пысăк зала çул тытрăмăр.

Акă, эпир Пысăк зала кĕç-вĕçех кĕрсе каймалла. Пире хирĕç М.А.Шолохов тухрĕ.

Съезд уçăличчен вăл таçта çитсе килме васкать пулас. Ятлă çыннăн ĕçĕ нумай ĕнтĕ.

Иртсе кайрĕ вăл пирĕн умран.

– Тусăмсем, Шолоховпа сăн ӳкерттерер мар-и? – ыйтрăм эпĕ юлташăмсенчен.

Пурсăмăр та харăссăн килĕшрĕмĕр. Эпĕ Шолохов хыççăн чупса кайрăм.

– Михаил Александрович, съезда килнĕ чăваш делегацийĕ сирĕнпе сăн ӳкерттересшĕн, – васкаса каласа хутăм эпĕ, ăна хăваласа çитсен. Çак вăхăтра Н.Терентьевпа Н.Дедушкин та çитсе тăчĕç.

– Тăвансем, кайран, кайран ӳкерттерĕпĕр сăнне, – йăл кулăпа пăхрĕ вăл пирĕн çине.

– Кайран сирĕн вăхăт пулмасть, Михаил Александрович, – виççĕмĕр те пĕр харăс каласа хуратпăр.

– Апла пулсассăн, атьăр ӳкерĕнер... Анчах хăвăрт пултăр.

Пирĕн телее, эпĕ тахçанах паллакан Ряпасов фотограф çитсе тăчĕ. Самантрах ӳкерсе илчĕ вăл пире.

Кайран М.А.Шолоховпа тата икĕ хутчен курнăçма тӳр килчĕ. Ку хутĕнче мана Ленинла комсомол преми лауреачĕ Владимир Фирсов пулăшрĕ.

Кунта манăн çакна та каласа хăварас килет. М.А.Шолохов "Лăпкă Дон" романне хăй çырман, темле шурă офицер-казак алçырăвне илнĕ тесе сӳпĕлтетрĕç. Л.Чуковская суя кĕнеке пекки те кăларчĕ. Темĕнле пиççе çитмен профессорсемпе кандидатсем сĕлекисене

сирпĕтрĕç. Ара, М.А.Шолохов институт-университетсем пĕтермен-çке, ытла та мĕскĕн çав ăсчахсем! Акă, М.А.Шолоховăн "Лопкă Дон" ал çырăвне тупрĕç, кĕнекен те пичетлесе кăларчĕç. Анчах та писатель пур – каçару ыйтмаççĕ. Питĕ шел çав мĕскĕнсене... М.А.Шолоховăн "Лăпкă Дон" романĕ – ĕмĕрлĕхе!

Çавăн пек çынпа курнăçса калаçни чуна çĕклентерет, ĕçлеме хавхалантарать.

Çапла вара унăн сăнарĕ, вăл çырса кăтартнă геройсем яланах вулакансен куçĕ умĕнче тăрĕç. Килес çута кун патне чĕнсе, малашлăха утма хавхалантарĕç.

## ЮРРИСЕНЕ ЮРЛАНĂ ПУРТЕ

Аслă Отечественнăй вăрçăн хаяр кунĕсем пыраççĕ. Фронтра икĕ вăй çапăçать: пĕри – фашистсем – совет çарĕн ирĕклĕхне тĕп тăвасшăн, тепри – Совет çарĕ – хăйĕн çĕрне ирĕке кăларса, ытти халăхсене те фашизм тăллинчен хăтарасшăн. Совет çарĕ – ирĕклĕ пурнăç паракан, урнă йытă евĕр фашистсен çарĕ – пурнăçа, çĕр çинче мĕн чĕрри пур, çавна тĕп тăвакан. Çак йывăр вăхăтра та совет çынни пуçне усман: сухаланă, акнă, вырнă, çапнă – фронт валли тăрăшнă, совет салтакĕ кун-çулне шеллемесĕр Улăп пек çапăçнă. Темĕнле йывăр пулсан та çынсем юрлама-ташлама манса кайман. Ку вăл совет çыннин чун çирĕплĕхне яр-уççăн кăтартса парать.

Когда я уходил в поход
В далекие края,
Рукой взмахнула у ворот
Моя любимая. –

Вăл çулсенче, вăрçă вăхăтĕнче, çак юрра юрламан, пĕлмен çын пулман та пулĕ. Ăна эпир те, вăл вăхăтри шкул ачисем, тăрăшсах юрлана. Юрă кĕввине кам çырнине пĕлмен. Анчах сăмахĕсем чун патне пыраççĕ, çав сăвă эпĕ, эсĕ, тепри калассине уçса парать. Çакă чи кирлипулнă. Юрра-сăвва халăх йышăнать-тĕк, сăвăçшăн ку пысăк телей. Ан тив, сăввине кам çырнине ан пĕлччĕр, çавах чуна ырă. Халăх йышăнать.

"Моя любимая" сăвă авторĕ Евгений Аронович Долматовский поэт. Шутланă-и-ха эпĕ, чăваш ялĕнче çуралса ӳснĕ ача, Евгений Долматовский сăвăçпа куçа-куçăн тăрса калаçасса? Шутлама мар, ĕмĕтленме те ăс çитереймен-тĕр. Аслă вăрçă кунĕсем-çке. Вăкăрпа пулсан та – сухаланă, кунтăкпа пулсан та – акнă. Таса ыраш çăкăрне çиес пирки, паллах, шутланă. Мĕншĕн тесен вăл çулсенче мăян, çĕрулми, кăчкă, серте-пултран хуçаланатчĕ пирĕн сĕтел çинче. Çук, ку йывăрлăха ӳстерсе кăтартни мар, чăн пулни. Чăннине яланах каламалла. Вăл пирĕк вайсăрлăха, чухăнлăха кăтартни мар, вăл халăх тӳсĕмлĕхĕпе паттăрлăхне палăртать. Халăхăмăр Тăван çĕршыва, тăван халăха шаннă, сĕмсĕр те урнă тăшмана хăй йăвинче пуçĕпех аркатса тăкасса ĕненнĕ. Шанчăкпа

ĕненӳсĕр малалла пăхма хĕн, кăна пурте пĕлнĕ.

Çавах та пирĕн пурнăç, самана, кунçул аталаннă май, шанчăкпа пурăнакана хăйĕн çулĕ çине илсе тухатех. 1948 çул. Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕ мана Мускаври Максим Горький ячĕпе хисепленекен Литература институтне вĕренме ярать. Çакă та маншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ япала. 1948 çулхи октябрь уйăхĕнче тĕл пултăм эпĕ Евгений Долматовский сăвăçпа. Вара пилĕк çул эпĕ ун семинарĕнче, поэтсен семинарĕнче, сăвăç ăсталăхне вĕреннĕ, алла илме тăрăшнă. Е.А.Долматовскиех манăн диплом ĕçĕн руководителĕ те пулчĕ. Тӳрех каласа хăварам: çав семинар – интернационаллă семинарччĕ. Унта Алексей Ласуриа абхаз, Цызен–Жап Жимбаев бурят, эпĕ – чăваш, Гиго Цагараев осетин, Машидат Гаирбекова авар хĕрĕ тата ытти халăхсен çамрăк сăвăçĕсем тăрăшатчĕç. Халĕ вĕсем пурте ятлă-сумлă сăвăçсем.

Евгений Долматовский Аслă Отечественнăй вăрçăра малтанхи кунран пуçласах çапăçнă. Унăн пире ăс памалли нумайччĕ. Вăл пирĕншĕн çав-çавах юлташ пекчĕ, поэт пирĕнпе чун патне пымалла калаçатчĕ, пĕр тан юлташсемпе пупленĕн хăйĕн пĕлĕвĕпе пайлашатчĕ. Ку çеç те мар, хăйĕн çĕнĕ произведенийĕсемпе паллаштаратчĕ, паллашнă хыççăн сӳтсе явма ыйтатчĕ. Эпир хамăр сĕнӳсене калаттăмăр, мĕн пĕлнĕ таран тăрăшаттăмăр. Пĕр тĕслĕх: 1950 çулта Е.Долма-

товский сăвăллă пьеса çырса пĕтернĕччĕ. “Хальлĕхе пьесăн ячĕ çук-ха. Тен, пĕрле ят хурăпăр?!”, – терĕ вăл пьесине пире вуласа парас умĕн. Пьесăра çĕршыв моралĕн вăйне, мулçăсен икĕ питлĕ моральне уçса панăччĕ. (Анчах пьеса тем сăлтавпа сцена çине тухаймарĕ. Кăна пĕлместĕп.) Çав пьесăра:

Родина слышит,
Родина знает,
Где ее сын
В облаках пролетает, –

текен сăвă йĕркисем пурччĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, Д.Шостакович композитор ăна юрра хыврĕ. 1961 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнче Ю.Гагарин – пĕрремĕш этем, хамăр çын – тĕнче уçлăхне тухсан, çав юрра уçлăхра итленĕ. Кайран çак кĕвĕ Пĕтĕм Союзри радиопа паракан “Çĕнĕ хыпарсен” позывнойĕ пулса тăчĕ. Пьеси кун курмасан та, çав пьесăри сăвă тĕнче умне тухрĕ. Сăввине вара унăн семинарĕнче вĕренекенсем чи малтан итленĕ.

Пире, çамрăксене, чылай ăс паратчĕ: “Астăвăр, Литература институчĕ сăвă е роман çырма вĕрентмест. Сире вăл малалла мĕнле ĕçлемеллин меслетне, литература теорин вăрттăнлăхне уçса парать çеç. Малалли хăвăртан килет: ĕçлемелле, пурнăç ăшне шалтан шала кĕмеллине, институтра илнĕ пĕлулĕхе аталантарса тăмалла. Ĕçлемесен, тăрăшмасан, институтра илнĕ пĕлӳ те пĕтет, типет... Кĕскен çапла, юлташсем”, – тетчĕ поэт. Унăн сăмахĕн чăнлăхне, çулсем иртнĕ хыççăн аванрах та

аванрах туйма тытӑнтӑмӑр. Литература ӗҫӗ кӑткӑс. Кашни произведение ҫырма ҫӗнӗрен вӗренсе, ӑс пухса пуҫӑнатӑн. Кашни произведени хӑй евӗрлӗ. Ҫамрӑк авторсен шута илмелли нумай кунта. Тепӗр чухне эпир: "Эй, пӗрремӗш хут ҫыратӑп-и?" тесе ҫырса туратпӑр, анчах, малтанхи ӑнӑҫава шаннӑран, ӑнӑҫсах каймасть произведени. Вӗренӳ, ӗҫ, пурнӑҫпа тан пыни ҫеҫ пулӑшать ҫыракан ҫынна. Н.Заболоцкин "Душа обязана трудиться" текен сӑвӑ йӗркине час-часах аса илтеретчӗ пире Евгений Аронович Долматовский.

Е.А.Долматовский пире ӑс пама, чӑнах та, пултарнӑ. 1933-34 ҫулсенче вӑл комсомол чӗнӗвӗпе Мукаври метрополитен тунӑ ҫӗрте ӗҫленӗ. Кун пирки поэт "Добровольцы" сӑвӑллӑ романра аван ҫырса кӑтартать. Ку роман тӑрӑх кинофильм та ӳкернӗ. Поэт кун-ҫулӗ ӗҫре, фронтра, мирлӗ пурнӑҫра туптаннӑ. Ҫавӑнпа унӑн произведенийӗсенче паянхи ҫын сӑнарӗ тӗп вырӑнта тӑрать: рабочи-и, салтак-и, офицер-и е хресчен, – вӗсем пурте саманари ҫын чунне, хамӑр морале, хамӑр ҫыннӑн вӑй-халне уҫӑмлӑн кӑтартса параҫҫӗ. Сӑвӑҫ 1934 ҫулта пичетленме тытӑннӑ, ҫав ҫулах унӑн "Лирика" ятлӑ кӗнеки пичетленсе тухать, тепӗр ҫултанах "День" кӗнеки кун курать. Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче "Песня о Днепре", "Степная тетрадь", "Вера в победу", "Стихи издалека" сӑвӑсемпе поэмӑсен кӗнекисем тухаҫҫӗ, вӑл ҫулсенче ҫырнӑ "Пропал без вести", "Одна судьба" калӑплӑ

произведенисем те вулакан асне яланлăхах кĕрсе вырнаçнă.

1949 çулта поэта "Ыранхи кун çинчен сăмахăм" сăвă кĕнекишĕн Патшалăх премине параççĕ.

Май уйăхĕн 5-мĕш кунĕ. Журналистсемпе писательсемшĕн çак кун уявччĕ. Уявра эпир хамăрăн ĕç-пуçа пăхса тухатпăр, малашне мĕн тумаллине палăртатпăр. Пичет кунне çĕршы-вăмăр палăртатчĕ. Ку питĕ лайăх! Çак кун вара, 1915 çулта, Мускавра, юрист кил-йышĕнче, ырăссен хальхи вăхăтри паллă поэчĕ Евгений Аронович Долматовский çуралнă. Май уйăхĕн 5-мĕшĕнче поэт çуралнăранпа 70 çул тултарчĕ. Сăвăçа эпир çав ятпа саламлаттăмăр. Çакна асăнса хăвармасăр та май çук. Евгений Аронович хăй те 1937 çулта Максим Горький ячĕпе хисепленекен Мускаври Литература институтĕнчен вĕренсе тухнă. Вĕсем К.Симонов, М.Матусовский, М.Алигер тусĕсемпе пĕрле вĕреннĕ. Çав туслăха вĕсем куç пек упранă. Туслăх тивĕçне пулах Е.Долматовский поэт Литература институтне вĕрентме пырать, институтра вăл профессор ятне тивĕçрĕ. Çамрăк ăрăва пĕлу парас, ха-лăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетес ĕçре питĕ тăрăшса ĕçлет сăвăç. Литература инсти-тучĕ уншăн тăван килĕ пекехчĕ-тĕр. Инсти-тутра каласа ĕлкĕрейменнине студентсене уйрăммăн чĕнсе илсе ăнлантаратчĕ вăл. Çавна май эпĕ ун килĕнче (ун чухне вăл Лаврушкинский переулокра пурăнатчĕ) темиçе хут

та пулнӑ. Институтри туслӑх туйӑмӗ пире паян та пулӑшать. Чӑваш писателӗсем вара Литература институтӗнчен А.Артемьев, В.Садай, В.Бурнаевский, П.Ялгир, Г.Айхи тата ытти чылай юлташсем вӗренсе тухрӗҫ, пӗлӳ илсе ӑсталӑхне ӳстерчӗҫ. Вӗсем те Е.Долматовские тӗл пулнӑ, ӑна сывлӑх суннӑ, алӑ тытнӑ.

Тата ҫакна та каласа хӑварас килет. Студентсемпе пӗр тан тытатчӗ вӑл хӑйне. Акӑ, 1952 ҫулта ҫу уйӑхӗнче кӗҫнерникун (кунне лайӑх астӑватӑп: мӗншӗн тесен пултарулӑх семинарӗсем яланах кӗҫнерникун иртетчӗҫ) вӑл Цызен-Жап Жимбиевпа мана Новодевичий масарне пыма чӗнчӗ. Унта иккен В.В.Маяковский кӗлне пытараҫҫӗ. Чаплӑ поэта крематорире ҫунтарнӑ хыҫҫӑн ун ӳчӗн кӗлӗ крематорин колумбарийӗнче упраннӑ. Ӑна ниҫта та пытармасӑр усранӑ. Пӗрисем сӑвӑҫа часласа Кремль стени ҫумне пытарма сӗннӗ, теприсем – Новодевичий масарне, хӑшӗ-пӗри Грузие те илсе каяс ӗмӗтлӗ пулнӑ: ара, сӑвӑҫ унта ҫуралнӑ-ҫке.

Евгений Аронович ҫӑмӑл машинине кӗрсе ларатпӑр. Рульне хӑй тытса пырать Е.Долматовский.

Акӑ, машина масар патнелле ҫывхарса пырать. Темӗн асӑрхамарӗ пулас сӑвӑҫ: кӗҫех пӗр грузовик ҫумне пырса ҫапӑнаттӑмӑр. Тормозсем чуна ҫурса ҫихӗрнине ҫеҫ илтсе юлтӑм. Грузовикрен шофер темӗнле йывӑр япала йӑтса тухрӗ те пирӗн машина еннелле ыткӑнчӗ:

– Вĕлереп! – кăшкăрса ячĕ шофер хаяррăн. – Манăн виçĕ ача... Вăрçăра вилменнине кунта пуçа хурас-и. – Хăй сиксе чĕтрет.

Е.Долматовский ун патне лăпкăн тухрĕ. Хăй камне каларĕ. Шофера ыталаса илчĕ.

– Эпĕ те фронтовик, – терĕ кĕскен. Иккĕшĕ кĕтмен çĕртен ыталашрĕç. Унтан пĕрне-пĕри алă пачĕç.

Çырлахрĕç çапла. Çын кăмăлне çавăрма пĕлетчĕ Евгений Долматовский.

В.Маяковский кĕлне чиперех пытартăмăр.

Евгений Аронович юлашки çулсенче прозăлла произведенисем те çырма пуçларĕ. Эпир унăн икĕ томлă "Было" кĕнекине аван пĕлетпĕр. Кунта хальхи çын кун-çулне, паттăр салтаксен сăнарĕсене куратпăр. Авторпа пĕрле савăнатпăр, унпа пĕрлех хурланатпăр та. Саманапа çынсен сăнарне хăй пурнăçĕпе шăпи урлă аван сăнлать сăвăç. Тинтерех çеç тухнă "Зеленая Брама" документлă повĕçне ялран ямасăр тенĕ пек вулатпăр мар-и. – Е.Долматовский хăйĕн кĕнекисенче чăваш салтакĕсем çинчен те ырăпа асăнса çырать. Чăваш салтакĕсем поэтпа çыхăну тытаççĕ, хăйсен фронтри ĕçĕ-хĕлĕпе паттăрлăхĕ çинчен каласа параççĕ. Вĕсемпе поэт тусла калаçать, салтак нушипе савăнăçне çурмалла пайлать. Кунтан пахи мĕн пултăр пурнăçра, сăвăç пурнăçĕнче.

Сахал юрланă-и эпир "Ленинские горы", "Сормовская лирическая", "Любимый город", "Если бы парни всей земли", "Марш бригад

коммунистического труда” тата ытти юррисене. “Песнь о лесах”, “Над родиной нашей солнце сияет” кантатăсене итлесе савăнман-и. Çак кантатăсен кĕввине Д.Шостакович композитор çырнă. Вăл вăхăтри чаплă композиторпа ĕçлеме çăмăлах пулман-тăр поэта. Вĕсем пĕр чĕлхе, пĕр ĕç çемми тупнă. Ăнăçлă произведенисем çапла çеç çуралаççĕ, вара халăхăмăр хушшине саланаççĕ.

Е.Долматовский сăвăç кăна мар, вăл обществăлла деятельччĕ те. РСФСР тата СССР писателĕсен Союзĕсен правлени членĕ, Пĕтĕм Союзри Мир Комитечĕн председателĕн заместителĕччĕ, Мускаври издательствăсен худсовечĕсенче ĕçлетчĕ – пур çĕре те ĕлкĕретчĕ, пур ĕçне те тĕплĕ тăватчĕ.

Унăн “Песня мира” юрринче çапла йĕркесем пур:

Наши нивы цветут,
Мы отстояли весну,
Наши силы растут,
Мир победит войну, –

тет сăвăç. Пысăк шанчăкпа калана. Апла пирĕн çĕршывăмăр, тĕнчере миршĕн кĕрешекенсем çĕнтерессе поэтпа пĕрле шанатпăр, ĕненетпĕр. Шел, сăвăç вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Поэт хăйĕн сăвви-юррипе халăхăмăр хушшинче чĕрĕ пек туйăнать.

# ЧӐВАШ ТĔНЧИНЕ ТЕЛЕЙ ЯНӐ КУН

Андриян Николаев пĕрремĕш хут тӳпене çĕкленессе 3 уйӑх маларах пĕлтĕм. Мана, “Ялав” журналӑн тĕп редакторне, обкомра сӑн ӳкерчĕк тыттарчĕç. Хайхи чӑваш кӑйкӑрĕ сӑнланнӑ унта. “Ан çухатӑр. Ку – чӑваш каччи. Кĕçех космоса çĕкленме тивĕç вӑл. Çĕнĕ хыпара радиопа илтсенех журналӑн хуплашки çине çак портрета кӑларӑр. Хальлĕхе никама та ан шарлӑр, унсӑрӑн хӑлхуна касса яратпӑр”, – терĕç.

Каланӑ – тунӑ: ĕçе çитсенех сӑн ӳкерчĕке сейфа, хутсен айне чиксе хутӑм. Кĕтнĕ вӑхӑт çитрĕ-çитрех. Андриян тĕнче уçлӑхне хӑпарнӑ кунах Иван Григорьев техредактор хайхи портрета илчĕ те Хусана кайрĕ (ун чухне тĕслĕ клишесене Шупашкарта туман). Эпир ĕçре кунĕпе шӑнкӑрав йышӑнтӑмӑр. Ӑçтан кӑна саламламарĕç пуль пире, космонавт ентешĕсене, çак пулӑмпа!

...Ĕç пӳлĕмне Чӑваш писателĕсен союзĕн яваплӑ секретарĕ Илпек Микулай кĕчĕ. “Атьӑрха телефон патне, сирĕнпе Мускавран калаçасшӑн”, – тет вӑл. “Литература и жизнь” хаçатран шӑнкӑравлаççĕ иккен. Андриян Николаев пирки сӑвӑ çырма ыйтаççĕ, ыранхи хаçат валли кирлĕ теççĕ. Сӑввине йĕркерен (у.к.подстрочник) куçарма сĕнчĕç.

Эпĕ, виççĕмĕш космонавт чӑваш каччи пулнӑран ыттисем пекех кунĕпех хавхаланса

çӳрекенскер, тепӗр сехетрен хатӗр сӑвва телефонпа вуласа çыртартӑм. Малтан – чӑвашлине, кайран – куçарӑвне. Çапла тепӗр кун манӑн сӑвӑ центрта тухакан хаçатра тупрӗ. Çав кунах Тимофей Фандеев кӗвӗлерӗ ӑна: Чӑвашрадио касхи кӑларӑмӗнче Мефодий Денисов çӗнӗ юрра шӑрантарчӗ.

Мӗн тери пысӑк савӑнӑç, хавхалану кӳнӗ А.Николаев ун чухне ентешӗсене! Чӑваш писателӗсем митинга тухрӗç. Пурте чунри савӑнӑçне палӑртасшӑн. Валентин Бурнаевский çапла калани асра: "Эпӗ те космонавт пулӑттӑм. Тулӗк манӑн – икӗ ача. Вӗсене хӑварма шел".

Халӑхра кӑвак хуппине виççӗ куракан телейлӗ тенӗ. Пирӗн Андриян шӑпах виççӗмӗш пулчӗ те тӳпере – вӑл чӑнах та телейлӗччӗ-тӗр. Хай кӑна мар, вӑл мӗнпур чӑваш халӑхӗн шӑпине телей парнелерӗ. Шел, уйрӑлса кайрӗ пирӗнтен. Пӗтӗм чӑваш чунӗнче хурлӑх çуратрӗ вӑл вилнӗ кун. Мухтавлӑ ентешӗмӗр ӗмӗр-ӗмӗр пирӗн чӗрере пулӗ.

## АЧАРАНАХ...

*Килчӗ ырӑ çуркунне,*
*Килчӗ ячӗ ӑшӑтса.*
*Хӗвел савать тӗнчене,*
*Хӗл ыйхинчен вӑратса...*

Çак йӗркесене кашни шкул ачиех, шкулта вӗреннӗскер, кашни вата-вӗтӗ астӑвать пулӗ тетӗп эпӗ. Тен, хӑшӗ-пӗри çак сӑвӑ йӗркисене тӳрех кам çырнине пӗлмесен те пултарать,

мĕншĕн тесен вĕсем халăхра сарăлнă та – халăхăн пулса кайнă. Чăн-чăн поэзи çапла çав вăл. Вăхăт иртнĕ майăн халăх чĕлхи çинче юлаççĕ те – халăх асĕнче ĕмĕрлĕх юлаççĕ, ăруран ăрăва куçаççĕ. К.В.Иванов çырнă "Нарспи" çавăнпах хăйĕн вилĕмсĕрлĕхĕпе тĕлĕнтерет. Вăл йăхран йăха, ламран лама ылттăн кĕмĕркки пек куçать. Астăватăп-ха: "Нарспи" кĕнекене анне çÿпçере усратчĕ. Иккен, ăна Чĕмпĕрте вĕренекен Марфа Николаева илсе килнĕ те – манăн аннене парнеленĕ. Хĕллехи вăрăм каçсенче, каçа кĕскетсе, "Нарспие" йышпа вулани те халĕ те-ха куç умĕнчех. Эпĕ вара, сас палли палламан ача, хăлха тăратса итлеттĕм Нарспипе Сетнер шăпи çинчен.

Ун чухне эпĕ ытларах çут çанталăк илемĕсемпе киленеттĕм. Ара, К.В.Иванов "Нарспире" тавралăхри илеме питĕ тĕплĕн те курăмлăн сăнласа кăтартса парать-çке. Сăнарсем пурте чĕррĕн курăнаççĕ. Çапла сăнарласа пама чăн-чăн ăста кăна пултарать.

Хăшпĕр тĕслĕхсене илсе пăхар-ха:

Çулте пĕлĕт айĕнче,
Тăри юрри илтĕнет,
Çемçе курăк çийĕнче
Путек-сурăх сиккелет.
Хăй кĕтĕвĕ патĕнче
Ача шăхличĕ калать,
Хырăмĕ пит выçнипе
Силпи ялнелле пăхать.

Пĕр ытлашши сăмах та çук вĕт! Пурте вырăнта. Çитменнине витĕмлĕ панорама тухса

тăрать ума. Пĕр ăста ÿнерçĕ тÿрех чаплă ÿкерчĕк тума пултарать. Акă тепĕр сăн:

Авă кĕпер çиййĕнче
Старик ларать вăлтапа:
Йăпăрт-йăпăрт пуллине
Улталасшăн ăманпа.

Тÿрех пурте куç умне тухса тăрать. Вырăссен художникĕн В.Г. Перовăн "Пулăçă" картини те уçăмлăн курăнса каять. Пултаруллă çынсем улăм пĕрчине ылттăн йĕп пек туса кăтартма пĕлеççĕ çав. Тура пани пулсассăн, хут çине ыра сăнарсем кĕмĕл калемпе çырнăн сăнланаççĕ.

Кун евĕрлĕ ÿкерчĕксене пĕр вĕçĕмсĕр илсе кăтартма пулать "Нарспирен". Кун пирки диссертаци те ним мар çырма пулать.

Халĕ аса илетĕп те – сăвăсем çырма тытăннă вăхăтри К.В.Ивановăн пултарулăхĕн витĕмĕ епле пысăк пулнă пирĕнте. "Çуркунне", "Кĕркунне", "Вăрманта", "Пулăра", "Юхан шыв", "Çырлара" евĕрлĕ сăвăсем мĕн чухлĕ çырман-ши? Хальхи çамрăк сăвăççем те, – "Çилçунат", "Тантăш" страницисем çине çеç пăхар-ха, – çут çанталăк илемĕпе, ырлăхĕпе киленни çинчен пĕрмаях çыраççĕ. "Нарспи" витĕмĕ вĕт ку!

К.В.Иванов пултарулăхĕнче çын шăпипе кун-çулĕ, телей тата укçа хăвачĕ пирки шухăшланисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Этеме пысăка хурать сăвăç.

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен,

Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать, –

тесе хавхалануллăн та мăнаçланса сăвăлать сăвăçăмăр. (Хăшпĕр критиксем Максим Горький каланипе хавхаланнă сăвăç тесе пăхрĕç: "Человек – это звучит гордо!" Çавах та К.В.Ивановăн хăйĕн те шухăшĕ пулнă ĕнтĕ!) Этеме çапла хăватлă мухтанă хыççăн пирĕн классикăмăр малалла мĕнле сăвăласа кайнине эпир сайра асра тытатпăр. Вулар-ха:

Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчине пăхăнать.
Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать.

Акă мĕнле иккен?! "Укçапала эрехех..." Паян, халĕ çырнă пекех янăрать вĕт. Укçашăн çынна вĕлереççĕ, сутаççĕ. Пуянлăх хуçаланать тĕнчере. "Шуйттан чури" трагедире (ăна поэт çырса пĕтереймен) пиччĕшĕ шăллĕне укçашăн вĕлерет. Вара акă мĕнле калаçма тытăнать:

Мана мĕн пит кирлĕччĕ?
Укçа, укçа – акă вăл!
Укçа пулсан, мул та пур,
Унтан урăх мĕн кирлĕ?
Ылттăн-кĕмĕл манăн вăл,
Ялти пуян эпĕ вăл!

Çапла, укçашăн чуна шуйттана та сутаççĕ: тăванлăх та, туслăх та, сăпайлăх та, илем те çук. Пурне те сутăн илме майĕ пур. К.В.Иванов çакна туйнă, пĕлнĕ: йăлтах хăй чунĕ-чĕри витĕр кăларнă. Сăвăç ачашшăн янăракан сăвă йĕркисенче, чăваш çепĕçлĕхĕнче

пысăк философи! К.В.Иванов çырнисене тĕплĕн, сарă тутă мăйăра курланкăран шĕкĕлченĕ евĕр, шухăшласа-тĕпчесе вуламалла. Эпĕ çапла шухăшлатăп.

1960-мĕш çулсен варри... М.Я.Сироткинпа, литература тĕпчевçипе, Ялтăри А.П.Чехов ячĕллĕ пултарулăх çуртĕнче канатпăр, ĕçлетпĕр. М.Я.Сироткин "Тăван Атăл" журнал валли Я.Ухсай пултарулăхĕ пирки калăплана статьяпа вăй хурать. Çавăн чухне эпĕ çапла калаçу пуçартăм:

– Михаил Яковлевич, Ивановăн "Тăлăх арăм" юмахĕнче çапла йĕркесем пур:

Ĕмĕр-ĕмĕр йĕрсен те,
Чĕрĕлес çук куççульпе.
Вара тăваттăмĕш кун
Çакăнчĕ те, пĕтрĕ чун,
Хăй упăшки çуçĕпе,
Виçĕ ылтăн пĕрчипе.

"Виçĕ ылтăн пĕрчи" мĕне пĕлтерет-ши? Мĕнле пĕлтерĕш пытарăнса тăрать? – ыйтрăм эпĕ аслă юлташран.

– Георгий, кăткăс ыйту ку. Шухăшламалли пур кунта, – хуравларĕ мана Михаил Яковлевич.

Çавăн чухне эпĕ хамăн шухăша пĕлтертĕм.

– Ман шутпа, Иванов "Виçĕ ылттăн пĕрчи" тесе Шăпа, Кунçул, Телей пирки каламасть-ши? – тесе ыйтрăм. – Ара, Нарспи Шăпа, Кунçул, Телей пĕтнишĕнех çакăнса вилмест-ши? Тăлăх арăмпа Нарспи шăпи пĕр мар-ши? Телей пĕтсен, Кунçул пĕтет. Телейпе Кунçул пĕтсен, Шăпа ăнмасть.

Ахальтен мар Сетнер Нарспие: “Хам телейĕм çук-тăр çав”, тет...

– Тĕпчевçĕ пекех калаçатăн эсĕ, Георгий, – терĕ çеç ун чухне М.Я.Сироткин.

Кайрантарах çакăн пиркиех эпĕ паллă литературоведпа В.Я.Канюковпа та сăмах хускатнăччĕ. Вăл питĕ кăсăкланса ӳкнĕччĕ. Çырас кăмăлĕ те пурччĕ унăн. Тен, çырниййĕ критик хучĕсем хушшинче пур та пулĕ, тен, çырса хурайман та? Вăхăтсăр çĕре кĕчĕ те... Каллех Шăпа, Кунçул, Телей... Шухăша ярать ку мана...

Тăван халăх пуласлăхĕ пирки те хытă пуçне ватнă аслă сăвăçăмăр. “Хальхи самана” сăввинче ку уйрăмах палăрса тăрать. Илерха çак йĕркесене.

Пурăнатпăр хуллен çеç
Аслă çынсен ăсĕпе.
Вĕсем пире юратса,
Хăй шухăшне хăварса
Халăх ĕçне тăваççĕ,
Халăх хуйхипе çунаççĕ...

Çапла вăл вăхăтра та, хальхи кунсенче те халăхшăн çунакансем, тăрăшакансем çителĕклех. Вĕсем пек çынсен ячĕсене хăварах куратăр-пĕлетĕр, вулаканăмăрсем.

Анчах чăваш хушшинче
Чунĕ хытнă çынсем те
Тапаланма пуçларĕç,
Тăрса çапла каларĕç:
“Чаплă вырăн тупасчĕ,
Часрах улпут пуласчĕ”.

Тĕрлĕ çутă туммешĕн
Тĕнки тухать ав лешĕн
Чăвашла та калаçмасть,
Тăванне те астумасть:
Чĕри шăнса кайнă çав,
Чĕрĕ виле пулнă çав.

Акă мĕнле иккен! Ку йĕркесене паянхи кун та никам та сивлеймĕ. Аслă сăвăçсем ĕмĕрсем урлă та пурăнаççĕ, вĕсем çырнă йĕркесем нихçан та кивелмеççĕ. Чăн-чăн поэзи вăрăм кун-çуллă!

К.В.Иванов пултарулăхĕ – пĕртте кивелмен. Унăн кашни йĕрки пирĕншĕн сăваплă, пархатарлă. Эпир, сăвăçсем, ун пултарулăх çуначĕ айĕнче вăй илнĕ, унăн чĕрĕлĕх çăл куçĕн шывне ĕçсе вăй пухнă. Чăваш чĕлхине унăн таса сăввисен йĕркинчен вĕреннĕ, тăван чĕлхемĕр сĕткенĕпе киленнĕ, таса техĕмне тутаннă, чĕреваррине илнĕ.

Аслă сăвăçăмăр пултарулăхĕ вилĕмсĕр. Мĕншĕн тесен – вăл чăн-чăн ăста. Ăстасен ĕçĕ-хĕлĕ – ĕмĕрлĕх.

Кĕскен çапла манăн сăмахăм. Калассисем малта-ха, умра. Аслă поэт мана ачаранах ăс-хакăл, вăй-хал парса тăрать.

*2000 ç.*

## УНРА – ПĔТĔМ ХАЛĂХ ЧУНĔ

Çеçпĕл Мишши çĕр пек аслă, тӳпе евĕр çуллĕ, тинĕс пек тарăн. Çавăнпа та унăн пултарулăхне тĕпченĕçемĕн тĕпчемелле. Тĕпченĕ

май кашни вулакан хăйне валли çĕнĕрен те çĕнĕ пулăмсем, çĕнĕ шухăшсем уçать, – çакăнта ĕнтĕ поэт аслăлăхĕпе тарăнăшĕ, унăн пултарулăхĕн иксĕлми вăйĕ.

Унăн сăввисенче пурнăç, вилĕм, чăвашлăх, тăван чĕлхемĕр пирки шухăшлани, тăван Шупашкаршăн тунсăхлани, – çаксем пурте паллă поэтăмăр – Çеçпĕл Мишши – пултарулăхĕнче витĕмлĕн палăрса тăраççĕ. Сăвăç сăмахĕсемпе каласан:

Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх йăранĕ
Ирĕкпе çĕнелнĕ пурăнăçран тарĕ,
Чĕрере ачашшăн çунĕ, çулăмланĕ
Тантăшлăх, тăванлăх, юрату кăварĕ.

Питĕ вăйлă та ĕненмелле, чуна çунтарса çырнă. Çакна сăвăç ĕненнĕ. Çавах та эпир çаплах Çеçпĕл калани патнелле талпăнатпăр. Вăл ĕмĕтленни патне çитме ĕмĕрсем витĕр, кун-çул урлă ĕçпе, хĕçпе, юн тăкса тата яланах тăнăçлăхра пурăнмалла пулĕ çав. Çавах еслă сăвăçăмăр хăйĕн тăван халăхне шаннă, ĕненнĕ. Унсăрăн унăн сăввисем паянхи куна çитеймен пулĕччĕç. Вĕсем çитнĕ ав, янăраççĕ, паян çырнă пекех чуна çатăрласа тытаççĕ.

Паянхи пекех астăватăп: 1937 çулхи чӳк уйăхĕн 6-мĕш кунĕнче, уява чысласа, ялти пултарулăх ушкăнĕ ял ĕçченĕсене концерт кăтартрĕ. Григорий Петров учитель сĕннипе эпĕ çав концертра Çеçпĕл Мишшин “Пурнăçпа вилĕм” сăввине вуласа патăм. Çав сăвва вуланă хыççăн ман патăма ялти ватă Трахвин пычĕ. “Аван вуларăн, ачам. Хирти пĕр пĕччен

тĕмескесене курмалла ан пултăрах сана...” терĕ те, урăх нимĕн те чĕнмерĕ, хăй вырăнне пусăрăнчăклăн кайса ларчĕ. Паллах, ун чухне эпĕ унăн сăмахĕсене тĕплĕн ăнлансах пĕтереймен-тĕр, – нумай çул иртсессĕн ку сăвва эпĕ темиçе те вуланă. Вара, акă, мĕн патне илсе çитерчĕ шухăшăм. Малтан Çеçпĕл сăввин йĕркисене илер-ха:

Хирте пĕр тĕмеске пĕр-пĕччен...
Тăпри çине пуснă вĕлтĕрен.
Вилнĕ çын тăпри вăл – çак тăпра,
Ырă çынни вилнĕ вăрçăра.
Ĕç ачи вăл. Çĕнĕ пурнăçа
Сыхласа вилнĕ вăл – çапăçса.
Чухăнсемшĕн хăйĕн кун-çулне,
Çамрăк ĕмĕрне вăл хĕрхенмен,
Коммунизм Хĕрлĕ Ялавне
Чун тухиччен çĕре ӳкермен.

Акă камăн тăпри иккен “пĕр-пĕччен тĕмеске”... Ăна “вĕлтĕрен пуснă”. Вăл – “ĕç ачи”. “Коммунизм Хĕрлĕ Ялавне чун тухиччен çĕре ӳкермен” пулсан та тăпра-тĕмеске пĕр пĕччен... Вĕлтĕрен пуснă. Çĕнĕ пурнăçа сыхласа вилнĕ пулсан та... ăна чыс çук, – тирпейлемеççĕ. Кайран, Аттелĕх аслă вăрçинче çав “пĕр-пĕччен тĕмескесем” кăна-и, тăванлăх масарĕсем мĕн чухлĕ юлнă-тăр? Палли пур-и халĕ вĕсен? Ара, ялсенче обелисксем, стелăсем лартаççĕ-ха, çĕре кĕнĕ салтаксен ячĕсене те çыра-çыра хураççĕ. Çавах та пăхаççĕ-и вĕсене? Вĕлтрен те çум курăкĕ. Халăхшăн кĕрешекенсен чысĕ мĕншĕн çук? Акă, ăçта

илсе çитерет шухăш, Çеçпĕл сăвви. "Пурнăçпа вилĕм" сăвă вĕçĕ мĕнле хурлăхлă тата?

Çĕр иртет те... килет çутă ир...
Анчах ĕмĕр пĕччен тăлăх хир.
Вĕлтĕрене тайса çил вĕрет,
Вилнисене асăнса йĕрет...

"Çĕнĕ пурнăçа сыхласа вилнĕ вăл"... Халĕ вырт тăлăххăн вĕлтĕрен пуснă çĕр айĕнче. Паттăрсене çапла чыслатпăр иккен эпир! Çулсем витĕр епле çивĕччĕн курнă Çеçпĕл Мишши!.. Кашни сăвви шухăша ярать поэтăн.

Эпĕ сăвăсем çырнине пĕлнĕ хыççăн Григорий Петров учитель мана Çеçпĕл Мишшин "Сăвă çырассипе ударени правилисем" статйине тĕплĕн вулама сĕнчĕ: "Çамăл чĕлхепе тата пурте ăнланмалла çырнă", – терĕ вăл мана ун чухне. Тавах вĕрентекенĕме!

Хальхи хăшпĕр çамрăк авторсем Çеçпĕлĕн çак статйине пĕлмеççĕ те, курман та пекех туйăнать.

Сăвăç пурне те тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать.

Ку сăвă хайлассин, чăваш чĕлхин чăнчăн университечĕ. Çак статья хальхи чăваш поэзийĕн хăватне çĕкленĕ. Çак статьяна пула эпир А.Пушкина, М.Лермонтова, Байрона, Шекспира тата ыттисене те çав авторсен ударенийĕсемпе чăвашла куçаратпăр, ритмикăна çирĕп тытса пыратпăр. Çеçпĕлĕн ăстănĕ шухăшласа çитнĕ çав статьяна тăван халăха парнелеме. Ку статья тавлашу та хускатнă, çавах та хальхи чăваш поэзийĕ

Çеçпĕл çулĕпе кайнă. Эпир, паллах, “Нарспин” сăвă виçине те хисеплетпĕр. Хамăрăн пуянлăха тăрăшсах упратпăр.

Эпир пурсăмăр та: “Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ... Чăваш чĕлхи кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ” тенисене пĕлетпĕр пулĕ тетĕп. Çеçпĕл ĕненнĕ. Çавах та хăшпĕр чиновниксемпе нигилистсем чăваш чĕлхине хĕстересшĕн-ха. Анчах та вĕсен ĕçĕ тухмĕ! Ĕмĕрсем урлă, хĕн-хур айĕнчен хăтăлса тухнă чĕлхе сивĕ чунсен сивлеклĕхĕн юрĕ айне пулмĕ, хупланмĕ! Эпир Çеçпĕлĕн шанчăкĕпе ĕмĕрлĕхех авăрланнă.

“...Тĕп Чăваш пурнăçĕ пуçланса кайĕ, йĕри-тавра чăваш чĕлхи анчах илтĕнĕ... Чиркусенче хамăр чĕлхепе кĕлтуса савăнса юрлăпăр...” (Халĕ, чăнах та, чиркусенче чăвашла кĕлтунине илтетпĕр. Малалла та аталансах пытăрччĕ. Чиркуре чăвашла кĕлтуни чăвашлăха хисеплени, И.Яковлев ĕçне малалла тăсни!) “Пирĕн вăй” пĕчĕкçеç статьяра мĕн чухлĕ шухăш! “Словам тесно, мыслям просторно...” – тенĕ Н.А.Некрасов. Апла Çеçпĕл Мишши те вырăссен классикĕсемпе пĕр тан поэт пулнă. Паллах, Çеçпĕл тĕнче поэзине питĕ тĕплĕ пĕлнĕ. Çакă ăна хăйне те тĕнче умне хăюллăн та ирĕклĕн тухма вăй-хал панă.

Çеçпĕл Мишшин кĕске пурнăçĕ асаплă та хĕн-хурлă пулнă. Çавах ун шухăшĕ, ĕмĕчĕ, тăван халăха юратни, уншăн пăшăрханни, çĕнĕ кун-çул килессе ĕненни сăвăçа хăват панă. Çавăнпа хăйĕн сăввисемпе вăл халăха

чĕннĕ, йыхăрнă. Çапла тума ăна кун-çул ирĕк панă. Çавăнпа вăл:

Кăвар чĕрем – пин çын чĕри.
Эп пĕр çын мар – эп хам пин-пин,
Эп пин чăваш, эп пин-пин çын!
Чĕрем юрри – пин çын юрри, – тет.

Кунтан вăйлă калама та çук пулĕ. Çавăнпа Çеçпĕл пĕтĕм чăваш ячĕпе хĕрӳллĕн калаçать. Вăл хăйне халăх ачи пек туять, – апла унра пĕтĕм халăх чунĕ, чăваш чĕри. Çакăн евĕр чун-чĕреллĕ сăвăç кирек хăçан та, кирек хăш саманара та пурăнать.

Çавăнпа ĕнтĕ пурсăмăр та юратакан сăвăç çуралнăранпа 100 çул çитнине аслă çĕрĕм-шывăм уявлать. Сăвăçсем çуралнă куна уявлакан халăх – ĕмĕр чĕрĕ, вăй-халлă, пурнас ĕмĕрĕ те – вăрăм. “Икĕ пинмĕш çулсенче чăваш чĕлхи пĕтмĕ-и?” – тесе ыйтаççĕ хăшĕ-пĕри. Пĕтмест! Çеçпĕл Мишши “Чăн чĕрĕлнĕ!” тенĕ пулсан, эпир чĕрĕлсех, çĕнелсех пыратпăр. Ан тив, халлĕхе пурнăçĕ нушаллă пултăр. Эпĕ çакна пĕлетĕп: чăваш нушана çĕнтерме пĕлет, чăваш – ĕмĕтлĕ, унăн шанчăкĕ сӳнмен-ха! Çав шанчăк чун варринче пурçăнпа чĕркенсе выртать, йĕритавралла – ĕнчĕ харшă. Çеçпĕл Мишши вара пире çапла: “Хастарлă, хыт утăмлă пулăр, Çĕршывăн хастар ачисем...” тесе йыхăрать. Эпир çапла утатпăр та...

*1999 ç.*

## АС ИЛТЕРЧӖ КИВӖ САН ӲКЕРЧӖК

1944 ҫул. Аслӑ Аттелӗх вӑрҫи пыратчӗ-ха. Вӑл хӗрсе ҫитнӗччӗ кӑна. Сталинград патӗнче паттӑрла кӗрешнӗ хыҫҫӑн пирӗн маттур совет салтакӗсем йӗксӗк те сӗмсӗр тӑшмана Хӗвел анӑҫнелле куллен-кун хӑвалама тытӑнчӗҫ. Вӑрҫӑ Ҫӗнтерӳпе пӗтессе пӗтӗм халӑх шанатчӗ.

Ҫак вӑхӑтра Чӑваш республикинче ҫӗнӗрен виҫӗ район (Чурачӑк, Муркаш, Советски) йӗркелерӗҫ. Ҫак районсенче ӗҫлеме ҫӗнӗ кадрсем кирлӗ.

Эпӗ ун чухне Ӑваспӳрт Кипеч вӑтам шкулӗнче вӗренеттӗм. Шӑхасан районӗнчи "Вайлӑ тыр-пулшӑн" хаҫата, республикӑри "Чӑваш коммунине" (халӗ "Хыпар") час-часах ҫырса тӑраттӑм. Кун ҫинчен пӗлнӗ пулӗ ҫав. Пӗр кунхине мана, шкултан таврӑнсан, ял Канашне чӗнтерчӗҫ. Анне ман ҫине шикленсе пӑхать: "Мӗн туса хунӑ-ха ӗнтӗ эсӗ, шӑпӑрлан", – тенӗн. "Чиперех, анне", – терӗм те тухса уттартӑм.

Ҫитрӗм. Ял Канашӗнче пӗр палламан ҫын ларать. Хайхи манран шкулта мӗнле вӗренни пирки, сывлӑх ҫинчен ыйтма тытӑнчӗ, ҫавӑнтах: "Ачи маттур-ха эс", – тесе хушса хучӗ. Ку мана хавхалантарни пулчӗ-тӗр.

Унтан пӳлӗм шӑпланчӗ. Сывлӑш ҫавӑрса илесшӗн пулчӗ-и манпа калаҫакан ҫын, е сӑмах пуҫарса яма меллӗ вӑхӑт шырать. Унтан:

– Акă мĕн, Георги, – пуçларĕ сăмахне. – Пĕлетпĕр, эсĕ халĕ вĕренетĕн... Шухăшла: Чурачăкра шкул пур. Района ĕçлеме пĕлекен çынсем кирлĕ... Кадрсем çитмеççĕ... Çынсем фронтра... – Çапла чылайччен тытăнчăклăн ăнлантарчĕ вăл мана. Каярахпа тин: – Акă мĕн, Георгий. Эпир сана Чурачăкри "Çĕнтерӳшĕн" хаçатра ĕçлеме сĕнсе пăхасшăн... Ну, мĕнле; – аллисене çӳлелле çĕклерĕ хайхискер.

Çавăнтах ял Канашĕн председателĕ:

– Килĕш, Георгий, – терĕ васкавлăн. – Хамăрăн яла та чапа кăларăн. Ахальлĕн пирĕн çинчен ниçта та çырмаççĕ. Эс малтанхи пулăн! – те шӳтлет вăл, те чăннине калать – пĕлме çук.

– Аннене каламалла-ха, вăл мĕн тейĕ, – аптăравлăн персе ятăм эпĕ.

– Аннӳпе калаçнă!.. – хыттăнах пĕлтерчĕ районтан килнĕ çын.

Эпĕ килтен тухнă чух анне мĕнле тăрса юлнине аса илтĕм. "Калаçман вĕт", – чупса иртрĕ пуçра шухăш. Вăл манăн шухăша сисрĕ-ши:

– Атя, аннӳ патне, Георги... – мана хулран тытрĕ вăл. Унтан тавçăрса илчĕ пулмалла. – Мана Краснов тесе чĕнеççĕ. Сан патна килтĕм эпĕ. Хаçат редакторĕ Васильев та кĕтет... Комсомолец вĕт эсĕ!

– Анне патне каяр мар... Ĕçе хăçан пымалла; – хăюллантăм эпĕ.

– Паянах... халех. Лаша пур манăн! – хавхаланса ӳкрĕ Краснов.

...Тепĕр куннех Чурачăка çитрĕм эпĕ. Тӳрех калам: редактор, Петр Васильевич, мана хаваспах йышăнчĕ. Ара, редакцире тăр пĕчченпе пĕрех. Набора ямалли материалсене те алă вĕççĕн çырса ларать. Чăнах та, сас паллисем шăрçа пек.

– Тытăнтăмăр ĕçе! – тетчĕ ĕçе пуçăнас умĕн. Вăл района юлатчĕ. Мана материалсем пухма колхозсене кăларса яратчĕ. Вăл каланипе таçта та çитеттĕм эпĕ. "Пĕр тухсан пух материал, çын ĕçĕпе чунĕ çинчен çырни час кивелмест", – тетчĕ. Эпĕ çапла тăваттăм та.

Пĕррехинче Петр Васильевич командировкăна каймалли пирки пĕлтерчĕ.

Чкаловран (ун чух Патăрьел енче çапла ятлă район центрĕ пурччĕ) пичетлекен машина турттарса килмелле. Пилĕк лавпа тухса кайрăм.

Ку Чурачăкри типографин никĕсĕ пулчĕ. Нумай вăхăт иртмерĕ: Шупашкара çитрĕм. Шрифтсен хуçалăхне йĕркелесе ямалла. Хут та çителĕклĕ таран турттарса килмелле тĕп хуларан.

– Капла пулсан, Георги, хамăр хаçата эпир Çĕрпӳре мар, тепĕр икĕ-виçĕ уйăхран Чурачăкра пичетлеме тытăнатпăр, – хăйпе хăй хавхаланатчĕ Петр Васильевич.

Унпа пĕрле эпĕ те савăнаттăм.

Ара, танкка-ха Чурачăкран Çĕрпĕве. Ун чухне транспорт çукчĕ. Пуçлăхсем те ял-ял тăрăх лашапа çӳретчĕç. Вăхăчĕ йывăрччĕ çав. Çавах найкăшман. Шаннă, ĕмĕтленнĕ. Тата вăл вăхăтра халăх туслă пурăнатчĕ. Туслăх вăй-хал парса тăратчĕ.

Акă типографи çуртне тупса пачĕç. Илсе килнĕ пичетлемелли машинăна вырнаçтарса лартрĕç. Шрифтсем пур (ун чухне алăпа наборлатчĕç. Компьютер çинчен аса та илмен. Аса илме мар, тĕлĕкре тĕлленмен.) Хучĕ çителĕклех пирĕн. Пичетле те пичетле.

Эпĕ ĕнтĕ вĕренсе çитрĕм. Ĕçлетĕп саркаланса. Чурачăк районĕнче вăл вăхăтра маттур колхоз председателĕ Георгиев пурччĕ. Вăл Чăрăшра вăй хуратчĕ. Редактор мана ун пирки пĕр полосалăх материал хатĕрлеме хушрĕ. Кайрăм, председатель питĕ тараватх кĕтсе илчĕ. Халĕ фронтран тин çеç аманса таврăннă пулин те, ăна колхоза ертсе пыма суйланă. Чăнах та, çирĕп колхозчĕ. Ĕç кунĕ пуçне икшер килограмм тырă валеçетчĕç. Вăл колхоз пирки пĕтĕмĕшле статья çырчĕ. "Кайран редакцилен", – терĕ. Эпĕ пуçлăхсемпе калаçрăм, икĕ хастар колхозник пирки материал хатĕрлерĕм. Правлени çуртĕнче çĕрĕпе тенĕ пекех тăрăшрăм. Ир енне çеç тĕлĕрсе кайнă.

Георгиев мана Чурачăка çитиех лашапа лартса ячĕ.

Тепĕр эрнинче, хаçат тухсан, редакцине кĕчĕ. Вăл редактора ман пирки:

– Лайăх ача тупнă эсĕ, тавçарулăскер, – терĕ.

Ку ĕçри малтанхи савăнăçăм пулчĕ.

Ĕçлемелле те вăй хумаллаччĕ-ха манăн "Çĕнтерӳшĕн" хаçат редакцийĕнче. Анчах июль уйăхĕн юлашки кунĕсенче "Чăваш коммуни" хаçатра пĕлтерӳ вуларăм. Унта чăваш академи

театрĕ артиста вĕренме çамрăксене илесси çинчен каланă. Виçĕ çул вĕренмелле иккен.

Артист пулас ĕмĕт манăн чунра тахçанах çуралнăччĕ. Уйрăмах артистсем яла спектакльпе килсен çунатланса каяттăм. "Лиза Короткова", "Сержант Ванюшин" спектак-льсене курнăччĕ ĕнтĕ. Е.Шорникова, Л.Семе-нов, Г.Фадеев, О.Ырзем вылянисем чĕрене çатăрласах тытнăччĕ. Çак пĕлтерĕве вуласан хама çĕрпе пĕлĕт хушшинчи пекех туйрăм. "Каятăп!" – тĕв турăм ăшра.

Ку шухăша аннене пĕлтертĕм.

– Ĕçĕ аванччĕ-ха, ачам, – терĕ анне. – Анчах ĕмĕтне татма пултараймастăп... Тата, Георги, мĕнпе пулăшăп эпĕ сана; Çĕр улми пур ĕнтĕ...

Анне хирĕç мар!

Кирлĕ документсем хатĕрлерĕм те театр студи адресĕпе Шупашкара ăсатрăм. Кун пирки редактора çăвар уççи-хуппи туманччĕ-ха. Редакцире Совет Союзĕн картти çакăнса тăратчĕ. Петр Васильевич карттă патне пырса информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, йĕп çине ситцăран тунă хĕрлĕ ялав пек туса тиретчĕ, кашни ирех хамăр çар малалла кайнине пĕлтерсе, çав йĕпсене малалла шутаратчĕ. Хĕрлĕ çар, чăнах та, 1944 çулта Анăçалла ыткăнатчĕ кăна. Ку тылра ĕçлекенсене хавхалантаратчĕ, хăпартлантаратчĕ. Чĕлхе çине "Çĕнтерӳ" сăмах час та часах килме пуçларĕ.

Çакăн пек тапхăрта пуранна эпир. Хавхаланăвĕ калама çук пысăккăн куранна. Тĕллев умра çуттăн ялкăшнă.

Ака экзамена чёнсе хут килчĕ. Çакăн пирки эпĕ редактора тин пĕлтертĕм. Шупашкара каймалла-çке: ĕçре пулмастăп.

Манăн редактор савăнас вырăнне артистăн пурнăçне хурлама тытăнчĕ:

– Артист пурнăçĕ, Георгий, пурнăç мар. Пĕрмай ялсем тăрăх çуремелле... Чикансем пек. Çирĕп шутласа пăх, шăллăм...

Эпĕ çине тăтăм. (Халĕ эпĕ редактора ăнланатăп. Унăн мана, ĕçе хăнăхса çитнĕскере, ăсатас килмен. Каллех çĕнĕ çын тупмалла.)

Çитрĕм Шупашкара. Калана çурта шыраса тупрăм.

Пӳлĕмре экзамена килнĕ çамрăксем пĕр вуннăн пулĕ.

Малтан актер ăсталăхĕпе экзамен тыттарчĕç. Этюдсем тутараççĕ. Кунта тавçăрулăх кирлĕ. Пурнăçри пулăмсене сăмахсăр, ӳт-пӳ хусканăвĕпе кăтартса пама пĕлмелле. Мана çапла этюд тутарчĕ: эпĕ çывăрса выртатăп иккен, çав хушăра пӳлĕме шыв илме тытăннă. Кун пек чух мĕн тумалла; Эпĕ вăранатăп: урана урайнелле пусма тăратăп. Урана шыв йĕпетет. Урасене тӳрех çĕлелле çĕклетĕп, унтан, ăнланса илсен, пӳртрен тухма хатĕрленетĕп... Çав урасене çӳлелле çĕклени килĕшрĕ пĕр экзаменаторне. Ку – театр тĕп режиссерĕ Л.Родионов пулнă иккен. Кайран вăл мана: “Хаçатран тухса артист пулас тетĕр-и; Шел мар-и;” – тесе ыйтрĕ. “Манăн артист пулас ĕмĕт пысăк”, – хуравларăм ăна. “Юрĕ, курăпăр”, – кĕскен çеç каларĕ

Л.Родионов. Унтан тăван чĕлхепе, çав куннех историпе экзаменсем тыттарчĕç. Кайран: “Вĕренме илнĕ”, – тесе хут çырса пачĕç, сентябрĕн 1-мĕшне çитме хушрĕç.

Вунсакăр кун кая юлса çитрĕм эпĕ. Редактор ĕçрен час хăтармарĕ. “Халĕ эсĕ кая юлтăн ĕнтĕ”, – тесе те пăхрĕ вăл. Эпĕ çаплах çине тăтăм. Вара редактор ĕçрен хăтарчĕ, çав кунах Шупашкара тухса вĕçтертĕм.

Вĕренме тытăнтăм вара театр студийĕнче.

Актерсем хатĕрлекен студире мĕнле вĕренни пирки çырса тăмăп, – вăрăма кайма пултарать.

Халĕ кивĕ сăн ÿкерчĕк пирки калаçар. Ку сăн ÿкерчĕке 55 çул каялла ÿкерттернĕ. Кунта – 16 студент. Пирĕнпе виçĕ вырăс вĕренетчĕ. Вĕсем пĕрле тăрас мар тенĕ-ши; Халĕ татса калаймастăп.

Сулахайран сылтăмалла пăхса каяр-ха. Чи хĕрринче – Вера Голубева. Чăвашра ăна пĕлеççĕ, уйрăмах ачасем. Чăвашрадиопа вăл “Асанне юмахĕсене” каласа парать. Вера Голубевăпа эпĕ И.Максимов-Кошкинскин “Çĕмĕрт çеçки çурăлсан” музыкăллă комедийĕнче тĕп рольсене вылярăмăр. Йĕпреçри колхоз театрĕнче. Çамрăк пулнă мар-и; – юрланă та ташланă. Залра ларакансем ман пата сцена çине хут çырса пăрахатчĕç. Пĕри: “Санпа пĕрре юнашар кăна утса курасчĕ”, – тесе çырнăччĕ. Ку, паллах, чуна савăнтарнă. Аван вылятчĕ В.Голубева. Куракансем хапăлласах йышăнатчĕç ăна. Кайран В.Голубева Шупаш-

карти çамрăксен театрĕнче, Пуканесен театрĕнче вылярĕ. Вера Ивановнана РСФСР тава тивĕçлĕ артистки хисеплĕ ят парса чысланă. Халĕ те вăй çитнĕ таран ĕçлет-ха.

Унпа юнашарах Л.Фадеев. Ăна Йĕпреçри театртанах Совет çарне илсе кайрĕç те – унтах юлчĕ. Вăл офицера вĕренсе тухăччĕ. Халĕ ăçта Л.Фадеев, – пĕлместĕп.

Каçарăр-ха, эпĕ тӳрех Йĕпреçри колхоз театрĕ çинчен сăмах пуçларăм. Пире, вĕренсе пĕтерсен, пурсăмăра та тенĕ пекех çав театра ячĕç. Шупашкара Д.Столяровăпа С.Бубновăна хăварчĕç.

Л.Фадеев çумĕнче Андрей Мосин ларать. Ăста артистчĕ. Куракансем ăна хисеплетчĕç. Йĕпреçри театр директорĕнче ĕçлерĕ. Кайран Йошкар-Олари пединститутран вĕренсе тухрĕ те шкулта тăрăшрĕ. Унтан чире пула вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Ун çумĕнче – театр студийĕн илемлĕх ертӳçи, чăваш халăх артисчĕ Л.Н.Родионов. Хăй ĕмĕрне Чăваш академи театрĕнче ĕмĕрлерĕ. Унпа юнашар эпĕ – Георгий Ефимов. Хам пирки çырма аванах мар та... çавах пĕлтерем. Литературăра ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата ăна аталантарнăшăн мана Чăваш халăх поэчĕ хисеплĕ ят пачĕç, “Халăхсен туслăхĕ” орденпа наградăларĕç, кăçал “Пĕрне пĕри савсан” кĕнекешĕн П.Хусанкай премийĕн лауреачĕ пулса тăтăм. Республикăри театрсемпе халĕ те çыхăну тытатăп. Вĕсен репертуарĕнче эп вырăсларан чăвашла куçарнă пьесăсем пур. Манран аяларах А.Барабанова. Вăл хăй ирĕкĕпе

студие ҫуретчӗ. Манпа ҫумманах Светлана Михайлова ларать. Чӑваш ҫӗрӗнче ӑна лайӑх пӗлеҫҫӗ. Тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ пулсан та, паян кун та концертсемпе тухать, сӑвӑ-калав вулать. Вӑл выляна рольсене куракансем халӗ те ас тӑваҫҫӗ. Вӑл "Салтак арӑмӗ", "Нарспи", "Кай, кай Ивана" пьесӑсенче выляни халӗ те куҫ умӗнчех. Урамра-мӗнре е троллейбусра ӑна тӗл пулсан: "Эсӗ ҫавӑ вӗт", – тесе ыйтаҫҫӗ. Калаҫса каяҫҫӗ вара пӗр-пӗринпе. Ку артисткӑшӑн пысӑк чыс. С.Михайлова-Ефимована Чӑваш халӑх артистки ятне панӑ. Акӑ Надежда Кириллова. Ӑшӑ кӑмӑллӑ хӗрарӑмсен сӑнарӗсене вылятчӗ. Ӑсталӑхӗ пысӑкчӗ. Шел, вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗчӗ. Унпа юнашарах Зоя Пущина йӑл кулса ларать. Маттур хӗрарӑмччӗ. Пит нумаях роль калӑплаймарӗ. Ҫавах ӑнӑҫлӑ вылятчӗ. Вӑл та пирӗнпе ҫук ӗнтӗ. Кунтах – Станислав Айзман. Ачаранах театрпа ҫывӑх пулнӑ вӑл. Унӑн ашшӗ – паллӑ драматург Николай Айзман. Йӗпреҫ театрӗнче нумай сӑнар калӑпларӗ. Театр хупӑнсан вӑл чӑваш ҫамрӑкӗсен театрӗнче вӑй хучӗ, унтан "Салют" кермен ҫумӗнчи халӑх театрӗн режиссерӗ пулса тӑрӑшрӗ. Ӑна Чӑваш республикин культура тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ хисеплӗ ятне пачӗҫ. С.Айзман та пирӗнтен ӗмӗрлӗхех уйрӑлса кайнӑ ӗнтӗ.

Тепӗр ретӗнче Евгения Моисеева тӑрать. Вӑл Калининӑри колхоз театрне кайрӗ. Унта питӗ тӑрӑшса ӗҫлерӗ. И.Краснов режиссер вӑл калӑпланӑ рольсене ырлатчӗ. Мӗн тӑвӑн,

хёрачасем качча каяççё. Вара "Сывă пул, театр!" Кайран вăл суту-илÿ системине куçрё. Унта ăна ырăпа çеç асăнаççё. Халё, тивёçлё канăва тухнă пулин те, Элёкри культура çурчё çумёнчи халăх хорне юрлама çÿрет, чунчёринче искусство хёлхемё сÿнмен Женян, вăл ман тăван. Юнашарах – И.Андреевпа В.Семенов. Театр ёçёнче вёсем хăйсен йёрёсене хăварсах каяймарёç. Акă Алексей Сергеев тăрать. Вăл, чăннипех те, деятельччё. Чăваш филармони пуçлăхёччё, юрăпа ташă ансамблёнче мён чухлё вăй хучё! Ăнăçатчё унăн ёçё. А.Сергеева РСФСР культура ёçченён хисеплё ятне панă. Пирёнпе çук ёнтё вăл. Шел. Мёнле кăмăллăн кулса тăрать Дарья Столярова. Унăн сасси халё те хăлхара илемлён янăрать. "Парнеллё туй", "Çёмёрт çеçки çурăлсан", "Виçё туй" музыкăллă комедисенче епле юрлатчё! Вăл операра та ним мар юрлама пултарнă. Çавах та Чăваш академи театрён сценине тивёçлипе илем кёртнё актриса. Ăна Чăваш халăх артистки ятне питё выранлă панă. Мăн тăвăн. – вăл та çук ёнтё. Ун çумёнче – В.Шамитова. Колхоз театрё хупăнинченех сцена çинче вылярё, кайран качча кайрё те – ялта вăй хума пуçларё. Ун çумёнчи – Зоя Ванюшина. Мён çёре кёричченех сцена çинчен каймарё.

Çакă пысăках мар йышран ятлă-сумлă çынсем тухни мана питё савăнтарать. Апла академи театрё çумёнчи артистсем хатёрлекен студире талантлă çамрăксем пулнă. Çав çам-

ракçем чăваш культуринче хăйсене тивĕçлĕ пысăк йĕр хăварнă пулĕ тетĕп.

Халĕ шухăшласа кайсан тĕлĕнетĕп. Вăрçă кĕрлесе тăнă вăхăтра пирĕн чăваш пуçлăхĕсем чăваш культури пирки хытă шухăшланă иккен. Яланах çапла пулсанччĕ...

Шухăша кайсассăн мана çакă тĕлĕнтерет: Чурачăк район хаçатне ĕçлеме пыман-тăк, эпĕ театр студине вĕренме лекеттĕм-ши; Кайран вара, кайран...

Эпĕ Мускава Максим Горький ячĕллĕ Литература институтне вĕренме кайрăм.

Ку урăх калаçу. Институтри ĕç-пулăм çинчен сире тепĕр хутĕнче каласа парăп.

Ас илтерчĕ кивĕ сăн ӳкерчĕк
Пĕтĕмпех ман çул пуçламăшне.
Чунăм çунатне сарса çĕкленчĕ
Вĕççĕр-хĕрсĕр аслă тӳпене –
Ырă тапхăр... Манмăп ĕмĕрне!

## “ТАВТАПУÇ!”

Туслăн та кăмăллăн калаçса ларнă вăхăтра сасартăк кӳренсе ӳкесси, тарăхса каясси те сиксе тухать-мĕн.

Ун чухне Григорий Краснов-Кĕçĕнни “Тăван Атăл” альманахра ответлă секретарьте ĕçлетчĕ. Унăн ĕç пулĕмĕнче Сергей Ялавин ларать. Вĕсем питĕ килĕштерсе те шăкăл-шăкăл калаçаççĕ.

Сергей Васильевич Ялавин альманах валли критикăлла статья илсе пынă-мĕн.

– Статйу мана килĕшрĕ, редактор вуласа тухтăр та – эпĕ набора антарса ярăп ăна, – шантарать ентешне Г.Краснов-Кĕçĕнни.

С.Ялавина çакă çеç кирлĕ те – статья набора кайтăр.

Унтан тăнăçлă калаçу, шут тапранчĕ.

Акă, С.Ялавин кĕтмен çĕртен Г.Краснов-Кĕçĕннине ыйту парать:

– Эсĕ, Кĕркури, çав "Пуширэп" псевдонима пуçпа шутласах сăввусен айне лартаттăн-и? Е ку çамрăк чухнехи вĕçкĕнлĕх?

– Сергей Васильевич, нимĕнле вĕçкĕнлĕх те çук, – пулет вăл Ялавина. – Пиччене, Краснов-Аслине лартман-тăк, эпĕ çакăнта санăн алçырăвĕпе чакаланса ларман пулăттăм, – ĕненсе те çирĕппĕн калаçать сăвăç.

– "Пуширэп" мĕн пĕлтерет, пĕлтерĕшĕ пур-и çак псевдониман? – ыйтатăп эпĕ калаçăва пулсех.

– Эсĕ пĕлместĕн-и вара? – çăмăллăн кулса илет С.Ялавин. – Пĕл эппин: Пушкинпа Шекспиртан та иртĕп эп. Çамрăк чух каппайланасси пулать вăл...

– Каппайчăк-и эпĕ ?! – ура çине тăчĕ Г.Краснов-Кĕçĕнни. Унтан С.Ялавин умне пычĕ те: – Пĕлессу килсен, Лев Толстойăн "Война и мир" романне, эпĕ редакциленĕ пулсан, çурри таран кĕскетсе пичете параттăм... Шывлă роман. – Ĕненсех калать-ши куна сăвăç?

– Пурнепе пĕлĕте тĕксе шăтараймăн, Кĕркури. – шутлеме пăхрĕ С.Ялавин.

– Манӑн, Ялавин юлташ, санпа калаҫассӑм та килмест, ҫӑвар тутине сая яни ҫеҫ. Хусанкай пек каласан, “маншӑн Ялавин ялав-им?” Кала-ха, кам эсӗ чӑваш литератуинче? Никам та мар вообще, вырӑсла каласан, “Останешься ты в литературе как какой-нибудь Чехов”.

Пукан ҫинче ларакан С.Ялавин сиксе тӑчӗ те Г.Краснов-Кӗҫӗннине пуҫ тайса:

– Спаси-и-бо! Тавтапуҫ! – терӗ кӑмӑллӑн.

Ҫапла хӑйне евӗрлӗ сынччӗ Г.Краснов-Кӗҫӗнни сӑвӑҫ. Ун пеккисем те кирлӗ пуль тӗнчере?

## “ЫРАН РЕДАКЦИЕ ЁҪЕ ТУХАТӐН...”

Ҫиччӗмӗш теҫетке ваклакан, нушине те, савӑнӑҫне те курнӑ сыннӑн аса илмелли пурах ҫав. Эпӗ Хасан кӳлли патӗнче ҫапӑҫнӑ паттӑрсене те, Маннергейм ҫирӗплетӗвӗсене аркатнине те, Хӗвеланӑҫ Беларуҫпа Хӗвеланӑҫ Украинӑна ирӗке кӑларнӑ вӑхӑтсене те астӑватӑп. Гитлер сынҫиенӗсемпе кӗрешнӗ тапхӑр чуна ӗмӗрлӗхех йӗр хӑварчӗ. Сталин вилнӗ хыҫҫӑн мӗн-мӗн курса тӳсмерӗмӗр-ши? Эй, мӗн каласси!

Ҫавах та манӑн халӗ пӗрле ӳснӗ, пӗрле пурӑннӑ, 70 ҫул тултаракан “Ялав” журнал ҫинчен сӑмах-юмах пуҫарас килет. Ҫакна та каласа хӑварасшӑн: “Ялавпа” иксӗмӗр пӗр уйӑхра ҫуралнӑ. Вӑл – манӑн пичче. Ку журналӑн малтанхи ячӗ – “Сунтал”. “Сунтала”

пуçласа эпĕ тăван ялти вулав çуртĕнче курнă, пуçламăш хут унта вуланă. Мĕншĕн тесен журнала киле парса ямастчĕç. Çухатасран шикленнĕ-ши е, киле парса ярсан,килти вĕтĕр-шакăр аллине лексен, çурасран-мĕнрен асăрханнă-ши? "Сунтал" журнал питĕ хисепреччĕ вăл вăхăтра. Унта М.Данилов-Чалтун, С.Элкер, Я.Ухсай, П.Хусанкай, А.Эсхель, Е.Еллиев, Л.Агаков сăвви-калавĕсем пичетленетчĕç. Мĕн чухлĕ çамрăк автор произведенийĕсене вулаauthor-ши тата?

Пиллĕкмĕш класаĂваспӳрт Кипечри вăтам шкула вĕренме кайсан литература кунĕсенче "Али-паттăр" юмаха йышпа вулани халĕ те асра. Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен К.Лазарев тăван халăхăмăрăн культуришĕн питĕ тăрăшатчĕ, вĕренекенсен чунĕсене асамлă тăван сăмах юратăвĕн хĕмĕпе хĕмлентеретчĕ.

Çакăн хыççăн "Сунтал" журнал килессе хытă кĕтеттĕмĕр. Мĕншĕн "кĕтеттĕмĕр" тетĕп-ха? Ун чухне укçа хакĕ, сумĕ пысăкчĕ. Эпир виç-тăватă ача пуханса журнал çырăнаттăмăр та, кайран черетпе вулаттăмăр.

Шел, Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан, "Сунтал" тухма пăрахрĕ. Вăрçă хыççăн, 1945-мĕн çулта, вăл "Ялав" ятпа тухма тытăнчĕ.

Ун чухне А.Эсхель чăваш писателĕсен Канашĕн председателĕнче ĕçлетчĕ. КПСС Тĕп-комне "Сунтал" журнала каларма тытăнасси пирки калаçма Мускава кайсан: "Сунтал" тени аслă Çĕнтеру хыççăн нимĕнех те пĕлтерместь, журнал валли урăх ят тупăр", теççĕ

Тĕпкомра. "Ялав" пултăр эппин", тет А.Эсхель, Çĕнтерÿ ялавне асра тытса.

Тухма тытăнать вара "Ялав" журнал. Малтанхи кăларăмĕсене А.Эсхель хăй редакцилет.

Çапла тапранса каять "Ялав" кун-çулĕ.

Аслă Çĕнтерÿ хыççăн Шупашкара Александр Алка сăвăç таврăнать. Ăна турех лава кÿлеççĕ: "Ялав" журнал редакторĕ пулма çирĕплетеççĕ. Хăшне-пĕрне "çирĕплетеççĕ" тени хальхи саманара ăнланма та йывăр-тăр. Ун чухне редактора ларма КПСС Чăваш обкомĕн бюровĕ витĕр кăларатчĕç. Пурне те витĕр куçлă парти асăрхаса, пĕлсе тăнă.

"Ялавра" вăл вăхăтра ытларах тин чăраннă вăрçăри çапăçусем, салтаксен паттăрлăхĕпе кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ пирки çыратчĕç, юратăва та манса хăвармастчĕç. Акă, Л.Агаковăн "Атăл хĕрĕ" повеçĕ пичетленме тапратать. Анчах ăна писатель тĕрлĕ сăлтавсене пула ниепле те çырса пĕтереймерĕ. "Ялав" редакцине ку повесть пирки вулакансенчен чылай çыру килчĕ. Вăл çырусенче автора та сăмах тиветчĕ. «Мĕнле-ха пуçланă повеçе вĕçне çитермелле мар?!" Çавах та писатель ĕçĕ малалла каяймарĕ. Пурнăçра пулать ун пекки.

Акă, салтакран тин çеç таврăннă Александр Артемьевăн "Пĕчĕк Лийăн пысăк савăнăçĕ" калавĕ пичетленсе тухать. Писательсем те, çыракансем те ку калава турех асăрхаççĕ. Чăваш литературине пултаруллă автор килчĕ!

Çапла татăклă сăмах каларĕç пурте. Кайран, унăн "Ан авăн, шĕшкĕ" калавĕ тухсан, А.Артемьев чăваш литературинче çирĕпленмеллипех çирĕпленчĕ.

Ку çулсенче "Ялавра" В.Алентей, В.Сатай, М.Хури, А.Воробьев, С.Аслан, А.Афанасьев, Н.Евстафьев, И.Вашки, М.Кипек тата ытти прозаиксемпе поэтсен ячĕсем тăтăшах тĕл пулма тапратрĕç. Ун чухне вĕсем писательсен Союзĕн членне кĕрейменччĕ-ха. Пурте пысăк ĕмĕтлĕ те ĕçченччĕ. Халăха каласа памалли нумайччĕ вĕсен, курни-илтни, сăнани-пĕлни чун тулличчĕ. Çав çулсенче повеçсемпе поэмăсем, пьесăсем йышлăн çуралатчĕç, "Ялав" страницисем урлă вулаканăмăр патне çитетчĕç те халăх хушшине саланатчĕç.

1946-мĕш çулхи "Ялав" журналăн 10-мĕш номерĕнче манăн хамăн та икĕ сăвă пичетленсе тухрĕ. Пĕлесчĕ сирĕн журналта тÿрех икĕ сăвă тухни чĕрене епле савăнăç кунине! Акă ĕнтĕ эпĕ халĕ журнала вуласа тăракан çеç мар, унăн авторĕ те. Çак кунран пуçласа хама "Ялав" журнал ытамĕнче туятăп. А.Алка редактор çапла хавхалантарчĕ мана, чăваш литературине кĕме çул уçрĕ. Кайран мана А.Алкапа А.Эсхель Мускаври Литература институтне вĕренме каймашкăн хистерĕç, ăс пачĕç. Кун пирки хамăн пĕр асаилÿре çырса кăтартнăччĕ, – çавăнпа чарăнса тăмастăп.

Мĕн калăн, çапла манăн пурнăçăм хулленхулленех "Ялавпа" çыхăнса, çывăхланса пычĕ.

Куншӑн эпӗ литературӑри аслӑ юлташӑмсене ҫӗре ҫити пуҫ таятӑп.

"Ялав" чысӗ, хисепӗ А.Артемьевӑн "Саламли" повеҫӗ пичетленсе тухнӑ хыҫҫӑн татах ӳссе кайрӗ. писатель ятне пур ҫӗрте те ырӑпа асӑнма пуҫларӗҫ. Унтан М.Ухсайӑн "Кӑра ҫилсем" романӗ пичетленме тытӑнчӗ. Пин ҫурӑ экземплярпа тухакан журнал 6 пине ҫитрӗ. Лайӑх произведение вулакан хӑвӑрт туйса илет ҫав! "Ялав" журнал авторитечӗ вулакансем хушшинче ӳснӗҫемӗн ӳсме пуҫларӗ. Журналта ӗҫлекенсене ку тимлӗнрех ӗҫлеме, яваплӑха туйма вӗрентсе пычӗ.

1955 ҫулхи чӳк уйӑхӗ. Эпӗ – писательсен Канашӗнче литература ыйтӑвӗсемпе ӗҫлекен консультант. Ӗҫе хӑнӑхса ҫитнӗччӗ ӗнтӗ. Ман патӑма ҫамрӑк авторсем йышлӑн ҫӳретчӗҫ. Юрий Скворцов ун чухне сӑвӑсем ытларах ҫыратчӗ, ҫавна май пӗррехинче эпӗ ӑна Г.Хирбю композиторпа паллаштартӑм. Ун хыҫҫӑн мӗн чухлӗ юрӑ ҫырчӗҫ вӗсем. Ваҫлей Игнатьев ман патӑма "Пӗчӗк акӑшсен ташши" калавне илсе пычӗ. Вуласа тухрӑм та – килӗшрӗ. Калава тӳрех "Ялав" журнала сӗнтӗм. Ун чух журнал редакторӗнче М.Романов ӗҫлетчӗ. Вӑл та В.Игнатьев калавне килӗштерчӗ. Ҫапла килӗштерсе ӗҫлеттӗмӗр эпир "Ялав" журналпа. Шел, халӗ ҫак йӑла сисӗнсех каймасть. Ҫамрӑк авторсем халӗ тӳрех журнал редакцийӗсене ҫул хываҫҫӗ.

Ун чух писательсен Канашӗн председателӗнче Алексей Талвир ӗҫлетчӗ. Юрий Петров

çамрăк сăвăçпа ун сăввисене тишкерсе ларат-тăмăр. Ĕç пӳлĕмĕн алăкĕ яр-р! уçăлса кайрĕ те А.Талвир хыттăн:

– Георгий! – терĕ. – Эпĕ приказ çыртăм, эсĕ паянран – "Ялав" редакторĕ! – урăх нимĕн те каламарĕ, мана хăйĕн пӳлĕмне чĕнчĕ.

Мĕн тăвăн, пуçлăх чĕнсен – каймалла.

Кĕтĕм. Диван çинче хĕрĕнкĕ М.Романов ларать. Ĕç вăхăтĕнче сыпакансене А.Талвир юратмастчĕ, вăл вăхăтра ĕçес-тăвас пирки хытă тытатчĕç.

– Приказа вуласа тух та алă пус, – сĕнчĕ мана А.Талвир.

Эпĕ ăна хам писательсен Канашĕн членне кĕрсе ĕлкĕрейменни тата аслă писательсем кăмăлсăр пулма пултарни çинчен пĕлтертĕм.

– Эсĕ Литература институтĕнчен вĕренсе тухнă, аслă пĕлӳ илнĕ, – пулчĕ мана председатель.

Тӳрех калатăп: эпĕ "Ялав" журналăн редакторĕ пуласси пирки асра та тытман. Вăл выранăн маншăн ун чухне Казбек тăвĕ тăррине хăпарассинчен те йывăррăн та хисеплĕн туйăннă. Ятлă-сумлă писательсем ларнă-çке журнал редакторĕнче. Сăмахран: С.Элкер, А.Эсхель, А.Алка...

– Ыран ирхине ĕçе "Ялава" тухатăн... Консультантра ĕçлеме çын тупăпăр, – кĕске пулчĕ калаçу А.Талвир пӳлĕмĕнче.

Ун чухне "Ялавра" виççĕн ĕçлеттĕмĕр: Геннадий Пласкин, Иван Григорьев...

Каçхине, ĕçрен тавраннă хыççăн, ман пата Александр Алка шăнкăравларĕ. Çĕнĕ ĕçе лартнă ятпа саламларĕ, ăнăçлă ĕçлеме сунчĕ. Эпĕ ăна тав турăм.

Ирхине "Ялав" редакцине ĕçе пырсан, пĕр икĕ сехет лартăм-и, çук-и – ман патăма хĕрĕнкĕ пĕр юлташ пычĕ (ятне-шывне асăнмастăп). Вăл мана: "Ахалех журнал редакторне лартăн, эпир сана, çулталăк та кунта ĕçлеймĕн, редактортан кăларса ыватăпăр", – тесе хучĕ. Эпĕ ăна: "Юрать. Тăрăшăр", – терĕм лăпкăн. Кайран çак хĕрĕнкĕ килнĕ юлташ каçару ыйтрĕ, çавах та унăн сĕмсĕрлĕхне манаймастăп, малтанхи кун çынна хавхалантарас вырăнне вăл чулпа печĕ.

Александр Артемьев вара (ун чухне Муркаш районĕнчи пĕр ялта пурăнатчĕ) Н.А.Некрасов кĕнеки çине çапла çырса пачĕ: "Георгий! Некрасов хăй журналĕ тавра чи пултаруллă, çивĕч äслă, хăюллă çынсене пуçтарнă. Пушкинран илсе юлнă ялава çӳле çĕкленĕ, укермен: сана та çапла ĕçлеме ырă сунатăп, хам та хамăр Ялав айне тăратăп". Куна вуласан, кăмăл çĕкленчĕ. "Ялавра" ĕçлес хал çирĕпленчĕ.

Журнал портфелĕнче мĕн-мĕн пуррипе пĕр эрне хушшинче паллашса тухрăм. Вулакансен чунне хускатакан произведенисем сахал иккен.

Эпĕ А.Эсхеле, Л.Агакова, А.Лазаревăна, В.Алакере, А.Алкана, А.Артемьева, В.Алентее, В.Сатая, Г.Харлампьева, В.Элпие тата ытти çыравçăсене çĕнĕ произведенисем журнал валли ятарласа çырма тархасласа ыйтрăм.

Чи малтан А.Эсхель “Çĕнĕ пӳрт” ятлă калав çырса пачĕ, ăна эпир çийĕнчех пичетлесе кăлартăмăр.

Журнала çĕнĕ повеçсемпе калавсем, поэмăсемпе сăвăсем, пьесăсем киле пуçларĕç.

Редколлегире журналăн сăн-питне лайăхлатас тата унăн тиражне ӳстерес пирки каласрăмăр. “Ялав” хуплашкине нумай тĕслĕ кăларма йышăнтăмăр.

“Ялав” хуплашкине нумай тĕслĕ кăларас тесен, Хусана çӳремелле иккен. Техредакторта ĕçлекен Иван Григорьев тытăнчĕ Хусанти типографие хутлама. Тăрăшатчĕ пирĕн техредактор. Кашни уйăхрах ик-виçĕ кун Хусанта пурăнма тиветчĕ унăн. Свердловск хулине те темиçе хут кайса килнĕччĕ вăл.

Хуллен-хуллен “Ялав” тиражĕ ӳсме пуçларĕ. Вăл çулсенче эпир В.Алакерăн “Çул юппинче”, А.Артемьевăн “Ахманеевсем” повеçĕсене, А.Талвирăн “Никĕс” романне пичетлерĕмĕр. Вулакансем хапăлласа йышăнчĕç вĕсене. Çав вăхăтра Чăваш халăх писателĕ А.Емельянов калавĕсем те “Ялавра” кун курнă, халăх умне тухнă.

Л.Агаковăн “Юманлăхра çапла пулнă” детективлă повеçне вара, халĕ тĕлĕнетĕп, авторĕ çырса пĕтермен пулсан та – пичетлеме тытăнтăмăр. Писатель кашни номер валли пĕрер сыпăк çыра-çыра паратчĕ. “Атăл хĕрĕ” пек пулса ан тухтăр ку повеç”, – тесе асăрхаттарсах тăраттăмăр эпир Л.Агакова. “Юманлăхра çапла пулнă” повеçе вулакансем

хапăлласа йышăнчĕç, редакцие çырусем нумай килчĕç.

Кайран журналта Мĕтри Кипекĕн "Кайăк тусĕ" романĕпе "Тăлăх ача" повеçне пичетлерĕмĕр.

"Ялав" тиражĕ ӳснĕçем ӳсме тытăнчĕ. А.Воробьевăн "Хрисан", А.Юманăн "Телей сăпки", А.Алкан "Асамат кĕперĕ", "Сĕрме купăс" поэмисене ырăпа асăнас килет.

Паян кун та савăнатăп. "Ялав" журналта пуçласа пичетленнĕ çамрăк авторсем хальхи вăхăтра – Чăваш литературин никĕсĕнче, вĕсен ячĕсем тĕнче умĕнче.

Ĕç кал-кал пынă чухне татах та тăрăшатăн. Кĕçех "Ялава" Петĕр Львова ĕçе илтĕмĕр. Çамрăксем тăрăшаççĕ, çамрăк сăн параççĕ журнала. А.Пушкин сăввин йĕркипе каласан: "...И жизнь, и слезы, и любовь". Каярахпа пирĕн редакцие икĕ çын хушса пачĕç. Вĕсем те çамрăксем пулчĕç: А.Лукинпа В.Бурнаевский.

Ăнăçу хавхаланăвĕпе пирĕн йыш "Ялав" библиотеки" кăларма тытăнать. Тĕллевĕ: çамрăк авторсене кĕнеке кăларма пулăшасси, вĕсен пултарулăхне аталанма парасси...Ялав" библиотекин" пĕрремĕш кăларăмĕ – В.Игнатьевăн "Пĕчĕк акăшсен ташши". Кайран А.Галкин, Г.Орлов, А.Воробьев, Ю.Петров, В.Урташ, А.Лукин, Ю.Скворцов, В.Бурнаевский, П.Львов, И.Вашки, М.Кипек, А.Каттай тата ыттисен кĕнекисене пичетлерĕмĕр. Ун чухне çак авторсем пĕри те писательсен

Союзĕн членĕсем пулман. Вĕсене каярахпа Союз членне йышăнчĕç.

Туслăх кĕнекисем те кăларнă: М.Бажан, О.Ющенко, Ангел Тодоров...

Н.Янкаспа Н.Шупуççынни кĕнекисене те асăнас килет. Вĕсен ячĕсене КПСС çирĕммĕш съезчĕ хыççăн тӳрре кăларчĕç.

"Ялав" библиотекине" пилĕк çул кăлартăмăр. Кайран ăна пĕчĕк чунсем ура хучĕç.

Йывăр та кăткăсчĕ "Ялавра" ĕçлеме. Çавах савăнăçĕ нумайрах пулнă-тăр. Акă, журнал тиражĕ 32500 çитрĕ. Епле савăнмăн? Чăваш писателĕсен черетлĕ съездĕнче мана чăваш писателĕсен Союзĕн ответлă секретарьне суйларĕç. Вара ирĕксĕрех пĕрле ӳснĕ, пĕрле пурăннă журналтан кайма тиврĕ. Çапах та чун-чĕре яланах "Ялав" журналăн ытамĕнче!

Ман хыççăн "Ялав" редакторне Георгий Орлов сăвăçа лартрĕç.

Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, аталанать, малалла ăнтăлать... "Ялав" журнал çитмĕле çитет. Вăл халĕ вăйпитти те çирĕп ăс-халлă. Апла ăнăçтăр унăн ĕç-хĕлĕ!

*1994 ç.*

## ЭПĔ "ЯЛАВРА" ÇИТĔННĔ

"Ялав" журнал – манăн савăнăç та хурлăх, манăн телей те асап, "Ялав" журнал – манăн пултарулăх çăл куçĕ. Çирĕм çичĕ çула кайсан, мана çак журналăн тĕп редакторне лартрĕç. Журнал вулакансем патне çичĕ уйăх кая юлса çитетчĕ, ун чухне "Ялав"

журнал тиражӗ те аран-аран 6 пин урлӑ каҫнӑччӗ. Редактора лартнӑ чухне: "Журнал тиражне ӳстерессе шанатпӑр, эсӗ ҫамрӑк, санӑн вӑй-хал пур, пӗлӳ те ҫителӗклӗ", – терӗҫ аслӑ юлташсем.

Кӳлентӗм ӗҫе. "Ялав" журнал сунтӑхӗнче алҫырӑвӗсем ҫукпа пӗрехчӗ. Эпӗ ятлӑ-сумлӑ писательсемпе поэтсене, критиксене, драма ӑстисене ятарласа сӗнӳсем патӑм. Хӑшӗ-пӗри манӑн сӗнӗве хаваспах йышӑнчӗ, теприсем вара "редакторта те ӗҫлейӗн-ха" тенӗ евӗрлӗ те пӑх-каларӗҫ. Ҫак журналта эпӗ тӗп редактор пулса тӑхӑр ҫула яхӑн ӗҫлерӗм. Чӑнах та, "Ялав" журнал тиражӗ те 32 пинрен иртсе кайрӗ. Мана писательсен черетлӗ съездӗнче союзӑн ответлӑ секретарӗнче ӗҫлеме суйласан, эпӗ журнал ӗҫне Георгий Орлова парса хӑвартӑм. Ҫавах та "Ялав" журналпа ҫыхӑну таталман манӑн, таталма-и? – ҫирӗпленсех пынӑ. Эпӗ журнал редколлегийӗнче вӑй хунӑ, халӗ те тӑрӑшатӑп. "Ялав" журнал 80 ҫул тултарать кӑҫал, эпӗ вара 76 ҫул. Вулама вӗреннӗ кунранах "Сунталта" эпӗ С.Элкерӗн "Хӗн-хур айӗнче" поэмине, Н.Шупуҫҫыннин "Еркӗн" поэмине, Хумма Ҫеменӗн калавӗсемпе пьесисене, Н.Патманпа М.Данилов-Чалтун, В.Алакерӑн калавӗсене вӗҫӗмсӗр вуланӑ. "Сунтал" журналта пичетленекен писательсемпе сӑвӑҫсене, драматургсемпе критиксене асӑнса та пӗтереймӗн. "Сунтал" авторӗсем каярахпа хальхи чӑваш литературин ҫирӗп никӗсне хываканнисем пулса тӑчӗҫ. Аса илер-ха: С.Элкер, А.Алка, Мӗтри Кипек, А.Эсхель, Л.Агаков, П.Ху-

санкай, Я.Ухсай, П.Осипов, А.Емельянов, Н.Терентьев, Ю.Скворцов, хальхи ӑрури Ю.Айташ, Н.Теветкел, А.Ильин, А.Юман... – эй, хушаматсене каласа каяс-тӑк, астӑвӑм кӗнеки пулса кайӗччӗ.

Ҫапла, вӑй хунӑ, тӑрӑшнӑ чӑваш ҫыравҫисем! Аслӑ Аттелӗх вӑрҫине Ҫӗнтерӳпе вӗҫленӗ хыҫҫӑн, "Сунтал" ятпа тухакан журнала ҫӗнӗлле, "Ялав" тесе чӗнме тытӑнтӑмӑр. "Ялавӑмӑр" ӗнтӗ пирӗн орденлӑ. Куна вӑл ҫирӗп те туслӑ ӗҫпе тивӗҫнӗ, чӑваш чӗлхине аталантарнӑшӑн, ҫамрӑк авторсене пулӑшнӑшӑн тивӗҫнӗ! "Ялавпа" пӗрле аталанать, аслӑ ҫул ҫине тухать чӑваш литератури. Журналта пичетленнӗ произведенисем Мускаври издательствӑсенче вырӑсла ҫапӑнса тухаҫҫӗ, ют ҫӗршывсене ҫул хываҫҫӗ. Чӑваш писателӗсемпе поэчӗсем ҫырнисем мӗнле кӑна чӗлхепе пичетленсе тухман пулӗ: Лондон, Париж, Рим... тата ытти те.

"Ялав" журналта манӑн поэмӑсемпе сӑвӑсем, повеҫсемпе калавсем, пьесӑсем, статьясемпе аса илӳсем пичетленсех пыраҫҫӗ. Журнал мана 1946 ҫулта ҫут тӗнче кӑтартнӑ та – унтанпа хӑй ытамӗнчех тытса тӑрать. "Ялав" журналта ҫитӗннӗ эпӗ. Вӑл панӑ пилпе манӑн 24 кӗнеке вырӑсла пичетленсе тухнӑ, вӑтӑр виҫӗ кӗнеке – чӑвашла. Литература аслӑ хирне кӑларнӑ "Ялава" тавах! Журнал ӗмӗрӗ вӑрӑм пултӑр. Эпӗ ун 100 ҫулне уявлаймасан та, унӑн чыслӑ кӗрекинче пуласса шанатӑп. Эппин, ҫапла пултӑр!

*2004 ҫ.*

## АЛЕКСЕЙ ТАЛВИР МĂШĂРЛАННИ

1950 çул. Авăн уйăхĕн юлашки кунĕсем. Алексей Филиппович Талвир писатель Мускавра çӳрет. Вăл чăваш литературипе культура кунĕсене Мускав хулинче ирттерес тĕлĕшпе тăрăшать. Чук уйăхĕнче Шупашкартан тĕп хуламăра питĕ йышлă ушкăн çитмелле. Малтанхи кунĕ Колоннăллă залра иртмелле. Вăл вăхăтра Колоннăллă зала лекме питĕ хĕнччĕ. Унта пурнех те кĕртсе каймастчĕç. Кĕртес пулсан та – тĕрĕслев çине тĕрĕслев. Чăвашсене ку пысăк чыс кӳрет.

Алексей Талвир мана, Максим Горький ячĕллĕ Литература институтĕнче вĕренекенскере, хатĕрлев ĕçне явăçтарчĕ. Манăн Пысăк театрăн типографийĕнче йыхрав хучĕсене пичетлемелле. Тата йыхрав хучĕн текстĕнче пĕр йăнăш та пулмалла мар. Эпĕ пичетлемелли хутсене типографие леçсе патăм. Çавăн хыççăн мана А.Талвир “Ыран мар тепĕр кун ман пата пĕр 9 сехет тĕлне” çитме хушрĕ. Эпĕ килĕшрĕм. Институт завучне пĕлтерсе хутăм. (Ун чухне хальхи пек чыслă ятсем çукчĕ: институтра – директор, вĕренӳ пайĕнче – завуч.)

Вăхăтĕнчех çитрĕм эпĕ Неглинная урамĕнчи “Европа” хăна килне. Шăнкăравларăм. Пӳлĕмрен “Кĕрĕр!” тени илтĕнчĕ. Кĕретĕп. Куç умне тӳрех апат-çимĕç лартса тултарнă тулăх сĕтел курăнса кайрĕ. Эпĕ нимĕн чĕнме те аптăрарăм. Алексей Филиппович çакна сисрĕ пулмалла.

Лăпкăн кăна:

– Хĕртен арăм тума йывăр çав, Георгий, – терĕ. – Хĕрне эсĕ пĕлетĕн – Надежда. Тин çеç ашшĕ-амăшĕ патне Саратова ăсатса таврăнтăм, – кăмăллăн пĕлтерчĕ вăл мана.

Чăнах та, Надежда Бабенкăна пĕлетĕп эпĕ. Вăл Атăл леш енче тухтăрта ĕçлетчĕ. Унта эпĕ Талвирпе литература каçĕ ирттернĕччĕ. Надежда Талвиртан пĕр 20 çул çамрăкчĕ пулас. Тата эпĕ А.Талвир вăл вăхăтра Шупашкарта пĕр столовăй заведующийĕпе килĕштерсе пурăннине пĕлеттĕм. Кĕçех: "Вăл мĕнле вара?" тесе персе яраттăм. Тавах çăвара, – вăл уçăлса ĕлкĕреймерĕ.

– Çапла, Георгий, ĕнер Мускавра хут уйăрттартăмăр. Ку – туй сĕтелĕ пулчĕ-тĕр. Шавлă ирттерес мар терĕмĕр... – Унтан кăштах чарăнса тăчĕ те сăмаха урăх еннелле пăрчĕ: – Эсĕ ирхи апат тунă-и?

– Чейпе булка çинĕччĕ, – кĕске пулчĕ ман сăмах.

– Апла, кил, кăштах апатланар, – чĕнчĕ мана сĕтел хушшине ларма. Эрехпе ирхи апат турăмăр.

...Чук уйăхĕнче Мускавра чăваш литературипе культура кунĕсен эрни иртрĕ. Вăл, чăнах та, Колоннăллă залра пуçланчĕ. Чаплă кунсен ларăвне Александр Фадеев сăмах каласа уçрĕ. Чăваш сасси кĕрлерĕ çеç çав кунсенче Мускавра! А.Талвир писатель те кил-йышлă пулса тăчĕ...

## ХĂÇАН АЛĂ ПАМАЛЛИНЕ ТЕ ПĔЛМЕЛЛЕ

Илпек Микулайĕ писатель алă пама, тытма çав тери юрататчĕ. Калăпăр, сана вăл виççĕмĕш хутра тĕл пулса сывлăх суннă пултăр, тăваттăмĕш хута хăпаратăн кăна – унта Илпек Микулайне каллех куратăн. Вăл нимĕн пулман пек, нихăçан та курман пек хаваслăн алă тытать, сывлăх сунать.

– Николай Филиппович, эпир паян санпа миçемĕш курнăçатпăр ĕнтĕ? Эсĕ пур, çаплах алă паратăн, сывлăх сунатăн, – тетĕн Илпеке куларах.

Вăл сана çавăнтах:

– Сывлăх сунни, алă тытни сăтăр туни мар, усал сунни мар, – тесе хурать те çийĕнчех алă тытать.

Мĕн тăвăн? – çынни çавнашкалччĕ.

Николай Филиппович Илпек “Ялав” журналта ĕçлерĕ пĕр хушă. “Ялав” журнал пӳлĕмĕнче чиперех ĕçлеселаратчĕ писатель. Çав вăхăтра ун патне унăн мăшăрĕ Вера Федоровна пырать. Темĕнле васкавлă ĕç сиксе тухнă пулĕ ĕнтĕ. Мăшăрне пӳлĕмрен коридора чĕнсе кăларма ыйтать Вера Федоровна. Илпек Микулайĕ ĕç пӳлĕмĕнчен сиксе тухать те васкавлăн, арăмне курсан:

– О, Вера, – тет те, – “здравствуй” тесе алă тытать.

Мăшăрĕ аптăраса ӳкет. Вара ӳпкевлĕн:

– Что ты, Николай, мы ведь недавно вместе позавтракали, – тесе хурать те куç-

çулĕпех йĕрсе ярать. Ара, çынсем темĕн шутлама та пултараççĕ терĕ-ши? "Килте çĕр касман та упăшкине шырама ĕçленĕ çĕре килнĕ", тесе шутлама майĕ пур.

Илпек мăшăрне: "Мăштах пул", терĕ те айккинелле илсе кайрĕ. Унта мĕн калаçнă вĕсем, никам та пĕлмест. Тата Илпекĕн арăмĕ вырăсчĕ. Типтерлĕ те меллĕскерччĕ. Сасси илемлĕччĕ, уявсенче, сĕтел хушшине ларсан, юрăсем шăрантаратчĕ. Сăмах май каласа хăвартăм.

Çапла çав. Хăçан çынна алă парассине те, сывлăх сунассине те аван пĕлмелле иккен.

## ЧĔЛĔМ ПАРĂМĔ

Ун чухне шăматкунсем те ĕçлетчĕç-ха. Канмалли кун умĕн тесе Василий Алакĕр, Александр Алка тата эпĕ сăра сыпма тесе ĕçрен тухрăмăр.

Урамра пире Михаил Кондратьевич Костин тĕл пулчĕ те:

– Ăçталла çул тытать виçĕ йĕкĕт? – тесе ыйтрĕ (М.Костин "Коммунизм ялавĕ" хаçатра ĕçлетчĕ).

Эпир, – ĕç пĕтнĕ-çке, – пĕр пытармасăрах:

– Сăра ĕçес кăмăл пур-ха, – терĕмĕр.

– Апла мана та хăвăр йыша илĕр, – йăл кулчĕ Костин.

Малалла уттартăмăр.

Пире Илле Тукташ тĕл пулчĕ.

– Таçталла каяççĕ ĕнтĕ тăваттăн тан? Костин юлташ кун пек ушкăнпа çўрекен

марччӗ-ҫке? – те шӳтлесе, те чӑнласа калать Илле Тукташ.

– Ҫынсенчен пӑрӑнса ҫӳреме сӑлтавӗ ҫук пуль унӑн? Хаҫат ҫынни яланах халӑхпа пулмалла, – хуравлать ӑна Александр Алка.

– Мана курсассӑнах халӑх хушшине кӗрсе ҫухалать, – ӑшшӑн кулчӗ Тукташ. – Парӑмне парса татасшӑн мар. Вӑт, пӗлнӗ пулӑр, тӑвансем.

– Ну, Илья Семенович, вӑл парӑма эпӗ сана ҫирӗм пилӗк ҫул паратӑп ӗнтӗ, – пирӗн ҫинелле хӳтлӗх шыранӑн пӑхрӗ Костин. Унтан: – Каччӑ чухне, ҫамрӑк чух мухтанас килнӗ-ши?.. Эпӗ Тукташран кукӑр пуҫлӑ чӗлӗм илтӗм... Халь вара мана курмассерен "Чӗлӗм парӑмӗ" ыйтать, ҫынсем умӗнче "намӑслантарать". Атя, Илья Семенович, пирӗнпе, пӗр стакан хӗрлӗ эрех илсе парам сана, – Тукташ хулӗнчен тытрӗ Костин.

– Эпӗ вӗсем умӗнче эрех ӗҫсе тӑрам-и пӗччен?! Вӗсене те пайсӑр ан хӑвар ӗнтӗ. – Илемлӗн кулса ячӗ Тукташ.

Чӗлӗм парӑмӗ хакла ларчӗ ҫав кун Михаил Костина.

## "ЭСӖ, АК, ХУСАНКАЙ ПРЕМИНЕ ИЛӖН..."

1969 ҫул. Кӗркунне. Чӳк уйӑхӗ. Гагарин урамӗнчи Чӑваш филармонийӗнче халӑх лӑк тулли. Мӗнле уяв-ха кунта? Ҫеҫпӗл Мишши ҫуралнӑранпа 70 ҫул ҫитнине уявлать Шупашкар. Тата ҫак кун ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем

тунăшăн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премие параççĕ.

Çеçпĕл Мишшине чысласа доклад турĕç, сăвăçсем поэта халалласа сăвăсем вуларĕç, Çеçпĕл сăввипе хывнă юрăсене юрларĕç. Унтан Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премие илнĕ хисеплĕ çынна сăвăç сăнне ӳкернĕ медальсемпе дипломсем пачĕç. Çĕнĕ лауреатсем – Çеçпĕл лауреачĕсем – тав сăмахĕсем каларĕç. Кайран пухăва ертсе пыраканĕ малалла пысăк концерт пуласса пĕлтерчĕ те 20 минутлăх тăхтав пулассине пĕлтерчĕ.

Залра ларакансем кĕшĕллĕн тухрĕç, эпир те – президиумра ларакансем – фойенелле тухма тытăнтăмăр. Эпĕ П.Хусанкай хыççăнах пыраттăмччĕ. Вăл чирлĕ пулни паллăччĕ, çири пиншакĕ шалпарланнăччĕ, таса сăнĕ те туртăннăччĕ. Петĕр Хусанкая кăшт хыçаларах пыракан Стихван Шавли хыттăнах:

– Петр Петрович, пĕтĕм премисене илсе пĕтертĕн, пире валли хăвармаллаччĕ, – терĕ. (Чăнах та П.Хусанкай К.В.Иванов ячĕллĕ премие илнĕччĕ ĕнтĕ. Кайран ку премие Патшалăх премийĕ теме пуçларĕç.)

Петр Петрович хыçалалла çаврăнчĕ, пĕр иккĕленмесĕр, çирĕппĕн:

– Сире, акă, Хусанкай премине парĕç, – терĕ.

Шавли нимĕн те шарламарĕ.

Шел, кун хыççăн чăваш халăх поэчĕ нумай пурăнаймарĕ. 1970 çулта пуш уйăхĕн 4-мĕш кунĕнче пирĕн йышран ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.

Петĕр Хусанкай пророкла каланă иккен. 2002-мĕш çултан Чăваш писателĕсен профессионаллă Союзĕ литературăри çитĕнÿсемшĕн П.П.Хусанкай ячĕллĕ преми пама пуçларĕç. Малтанхи лауреатсем пур та иккен. Вĕсем – Геннадий Юмарт, Георгий Ефимов, Анатолий Юман... Татах та пулĕç-ха.

Çапла сăвăçсем чылай чухне чăннине çеç калаççĕ. Ахальтен мар поэтсене "витĕр куçлă, инçе курать", теççĕ.

## А.ЛАЗАРЕВА ЭКЗАМЕН ТЫТАТЬ...

Александра Назаровна Лазаревана чăваш вулаканĕсем пурте тенĕ пекех пĕлеççĕ пулĕ тетĕп эпĕ. Унăн "Малтанхи юрату" повеçĕ Аслă Аттелĕх вăрçи умĕнех пичетленсе тухнă. Çапах та вăл повеç паян кун та пурăнать. Кайран "Чипер Анна", "Тоня юрланă чух", "Ырă ĕмĕт", "Çутă пĕве", "Савăнтар çынсене" тата нумай кĕнекине юратса та савăнса вулаттăмăр.

Ĕçлетчĕ, вăй хуратчĕ писательница. Анчах вăхăтсăр çĕре кĕчĕ.

Эпĕ писателĕн пултарулăхне пĕтĕмлетесшĕн мар, унпа пулса иртнĕ пĕр кăсăклă ĕç-пулăм пирки çеç аса илесшĕн.

А.Лазарева вĕçев шкулне вĕренме каять. Летчица пуласшăн вăл, – тÿпере, уçă сывлăшра ярăнса вĕçесшĕн. Акă, экзамен тытма кĕрет çамрăк чăваш хĕрĕ. Вырăсла та лайăх тĕшмĕртеймест ĕнтĕ. Вырăс литератури вĕççĕрхĕрсĕр: ĕмĕрне те вуласа пĕтереймĕн...

А.С.Пушкинăн “Евгений Онегин” романĕ пирки каласа памалла хĕрĕн. Калать-калать – экзамен тыттаракансем ун çине тĕлĕнерех пăхаççĕ. Пĕр экзаменаторĕн чăтăмĕ пĕтсе çитнĕ курăнать, – вара ыйту парать:

– Калăр-ха, Татьяна Онегина мĕнле хурав парать роман вĕçĕнче?

Александра Лазарева вăрах шутласа тăмасть, ырăсла çапла çавăрттарса хурать: “Одному дала, другому не дам...”

Экзаменаторсем ахăрсах кулса яраççĕ. Вĕсенчен пĕри çавăнтах: “Довольно.. Она прекрасно ответила”, – тет йăл кулса.

А.С.Пушкин романĕнче Татьяна, чăнах та, Онегина: “Но я другому отдана, Я буду век ему верна”, тесе хуравлать.

Çапла экзамен тытать А.Лазарева вырăс литературипе. Вĕçев училищинче те чиперех вĕренет. Кайран чăвашсен паллă художникĕ Юрий Зайцев “Летчица” картина ӳкерет. Питĕ аван ӳкерчĕк: А.Лазарева сăнарĕ чĕррĕн куç умне тухса тăрать. “Вĕçеве яланах хатĕр” тенĕнех туйăнать.

Писательница хăй те кулатчĕ иртнинчен, хăйĕнчен хăй вăтанатчĕ, пичĕ çине именчĕклĕ хĕрлĕ тухатчĕ. Пулнă та-ха...

## ЫВĂЛĔ

Унăн пĕртен-пĕр ывăлĕ, Ухвине инке калашле, пĕртен-пĕр тĕпренчĕкĕ, шанчăкĕ тĕп хуларан – Мускавран – аслă пĕлӳ илсе, дипломпа таврăнчĕ. Унăн ĕçлесси çеç юлчĕ, тĕпленсе пĕр вырăнта лайăх ĕçлесси çеç юлчĕ.

Çапах та Ухвине инке (кӳршӗ-аршисем пурте çапла чӗнеççӗ те – эпӗ те çаплах калас терӗм) ывӑлне пӗр уйӑх тӗплӗн канса вӑй пухма сӗнчӗ. Ара, çавӑн чухлӗ экзамен тыт-ха, диплом хӳтӗле-ха. Канма калас.

Ывӑлне амӑшӗн сӗнӗвӗ килӗшрӗ. Шупашкар тӑрӑх çӳрет вӑл, Атӑлта шыва кӗрет. Рехмет. Килте пурте хатӗр: ӗçме-çиме янтӑ.

Пӗррехинче çак ывӑл килтех кун ирттерме шут тытрӗ: хула тӑрӑх çӳресе те ывӑнтарать. Акӑ, комод еннелле пӑхать çак ывӑл. пӑхас, тӗпчес – мӗн упрать анне. Акӑ, кивӗ ридикюль выртать. Мӗн тума çапла чыслӑ вырӑнта выртать ку япала?

Уçать, пӑхать ридикюль туприне. Унта квитанцисем выртаççӗ. Чӑнах, квитанцисем... Мӗнлескерсем? Курах каять ывӑл хӑй хушаматне: Бобовникову...

Кур-ха, мӗн чухлӗ квитанци?! Пурте ун патне амӑшӗ Мускава укçа куçарса панӑ хутсем! Пуçра амӑшне тав тӑвас шухӑш мар, йӑлтах кутӑнла шухӑш пырса кӗрет: "Ха, ку анне!.. Кайран манран ку укçана, тен, судпа шыраса илесшӗн?.."

Ывӑлӗ Ухвине инке ӗçрен таврӑниччен кафене кайса эрех сыпать: аннепе калаçма çӑмӑлтарах пултӑр...

Таврӑнать Ухвине инке ӗçрен. Курать – ывӑлӗ кӑмӑлсӑр.

– Мӗн пулчӗ, ачам? – шеллевлӗн ыйтать амӑшӗ.

Ывӑлӗ ура çине тӑрать, пулӗмре кӑштах уткаланӑ хыççӑн:

– Анне, эсӗ ҫак хутсене мӗншӗн ҫак таранччен упратӑн, усратӑн?! Кайран мана суда пама-и? – хаяррӑн пӑхать ывӑл.

– Ара... ара... мӗнле суд? Ӑспах калаҫатӑн-и эс? – Амӑшӗ тарӑннӑн сывласа ярать те: – Тав тунӑшӑн тавах, ачам... – тесе ҫеҫ ӗлкӗрет, аллипе чӗри тӗлне тытса, чӗлхи айне валидол хурать. Диван пружини ҫеҫ пӑнн! тесе янӑраса каять йывӑрлӑха тӳсеймесӗр.

*27.06.04.*

## С.ШАВЛИ ХӐНАЛАТЬ

Ку 1949 ҫулта пулса иртрӗ. Эпӗ кӑрлач уйӑхӗн вӗҫӗнче, институтра пӗрремӗш семестршӑн экзаменсем тытнӑ хыҫҫӑн, Шупашкара таврӑнтӑм.

Ун чухне “Ялав” журналта Александр Алка редакторта вӑй хуратчӗ. Унпа пӗрле Василий Алакӗр ӗҫлетчӗ. Иккӗшех журнал кӑларатчӗҫ, вӗсем питӗ туслӑччӗ. Эпӗ журнал редакцине кӗретӗп. Вӗсем Мускаври пурнӑҫ пирки ыйтса пӗлчӗҫ, экзаменсене мӗнле тытнине тӗпчерӗҫ. Кӑштахран А.Алка Василий Осипович еннелле пӑхрӗ те:

– Вася, эпӗ ҫапла шутлатӑп: каникул вӑхӑтӗнче Георги журналта ӗҫлетӗр. Кӑштах укҫи те пулать, журнал ӗҫне те хӑнӑхать... Эсӗ мӗнле шутлатӑн, Вася? – тесе ыйтрӗ.

В.Алакӗр нумай шутласа тӑмарӗ:

– Эпӗ санпа пӗр кӑмаллӑ. Пире те пулӑшу... – терӗ. Кӗске пулчӗ ун сӑмахӗ.

– Апла приказ ҫыратӑп...

Ҫапла эпӗ "Ялав" журналта практикӑра ӗҫлеме пуҫларӑм. Редактор приказӗ ҫаплаччӗ.

"Ялава" килекен сӑвӑ-калавсене вуласа тухатӑп та эпӗ, ҫав ҫыру авторӗсене хуравлатӑп. Корректура та вулаттараҫҫӗ. Эпӗ хаваспах ӗҫлетӗп.

Акӑ, пӗррехинче "Ялав" редакцине Стихван Шавли сӑвӑҫ пырса кӗчӗ. Сывлӑх сунчӗ, пире алӑ пачӗ. Унтан ларчӗ те А.Алка еннелле пуҫне пӑрса:

– Редактор юлташ Александр Алка, пӗлтерсемӗр, манӑн сочиненисемпе паллашса ӗлкӗртӗр пулӗ тетӗп, хӑш номере чиксе яма кӑмӑл тӑватӑр? – тесе ыйтрӗ.

– Пичете сӗниччен турлетмеллисем пурха, сӑвӑҫ юлташ. Редколлеги членӗсем кӑранташпах вуласа тухрӗҫ сирӗн сочиненисене, – Шавли евӗрлӗрех каласа хучӗ А.Алка. В.Алакӗр пӗр сӑмах чӗнмесӗр итлесе ларать.

– Парӑр-ха алӑ ҫырӑвне, пӗлем: мӗн килӗшмен-ха сирӗн редколлеги членӗсене?..

А.Алка сӑвӑҫ ал ҫырӑвне сӗтел сунтӑхӗнчен кӑларчӗ те Шавлие пачӗ. С.Шавли уҫкаласа пӑхкаласа ларчӗ, унтан вӑрахчен чӗнмесӗр ларчӗ, вара ура ҫине тӑчӗ, пулӗм тӑрӑх утса ҫаврӑнчӗ, чарӑнса тӑчӗ те хыттӑн:

– Вы, сволочи фронтовики, захватили журнал и жить не даете! – тесе паклаттарса хучӗ.

Ҫав хушӑра, ҫак сӑмахсене илтсен, Александр Алка сӗтелӗ хушшинчен мӗнле майпа сиксе тухнине те сиссе юлаймарӑмӑр, каланккӑ

кӑмака ҫумӗнчен вут сыппи хӑш самантра аллине ярса илнине те сисмен, – йӑлтах ҫиҫӗмле хӑвӑртлӑхпа пулса иртрӗ, – лутра Алка вӑрӑм Шавлине ҫав сыпӑпа хӑмсарчӗ:

– Эпир, фронтовиксем, сволочсем апла... Эсӗ эпир ҫӗнтерессе кӗтсе арӑмпа ӑшӑ вырӑн ҫинче канлӗн ҫывӑрнӑ! Ярап!..

Алакӗр те Алкан вут сыппиллӗ аллине тахӑш вӑхӑтра ярса илчӗ... – салтаксем ҫапла вӑр-вар иккен! Вӗсем пӗр-пӗриншӗн тӑма, пӗр-пӗрин хутне кӗме вӗреннӗ ӗнтӗ.

Стихван Шавли йӑлтах шурса кайнӑ. Вут сыппи витӗмлӗнех лекме пултарнӑ...

Эпӗ: – Тӑвансем!.. – теме ҫеҫ ӗлкӗртӗм.

А.Алка ҫав вӑхӑтра С.Шавлие:

– Вон отсюда!.. – кӑшкӑрса ячӗ шалтан тухакан шеллевлӗ сасӑпа. – Ӑна, кур-ха, фронтовиксем пурӑнма памаҫҫӗ. Ӗҫлес вырӑнне пӑспа хӑратасшӑн!..

Шавли пӳлӗмрен сассӑрран тухса шӑванчӗ.

...Ҫапла пулса иртнӗ хыҫҫӑн пӗр-икӗ сехетсем иртсе кайрӗ пулӗ, – пӳлӗме каллех С.Шавли килсе кӗчӗ.

– Юлташсем!.. – терӗ вӑл алӑка хупсассӑнах. – Каҫарӑр, чӗлхен чаракӗ ҫук ман... Арӑм та ятласа пӗтерчӗ. Халӗ, юлташсем, Ульха (хӑй арӑмне ҫапла чӗнетчӗ Шавли) тутлӑ апат хатӗрленӗ, эпӗ сире пурсӑра та илсе кайма килтӗм. Чӗркуҫленсе ларатӑп... – Чӗркуҫленме хатӗрленчӗ. Ҫавӑнтах:

– Ҫын чӗркуҫленсе ларнине курас килместь ман, – ҫирӗппӗн каларӗ А.Алка. – Сӑваҫ пул, Шавли!.. – хушса хучӗ унтан.

Пулӗмре шăп. (Çак вăхăтра вулакана пӗлтерем: ун чухне Пичет çуртне вутăпа хутатчӗç. Çавăнпа вут сыппи тупăннă.)

Хăнана каяс пирки чылай калаçрӗç. Вара В.Алакӗр татăклăн каласа хучӗ:

– Хӗрарăм тăрăшнине хисеплес пулать...

Хăйсемпе пӗрле мана та чӗнчӗç. Ара, эпӗ свидетель-çке.

Сӗтел çине аван пуçтарнăччӗ. Тăварланă хăяр та, йӳçӗтнӗ пан улмипе купăста та пурччӗ. Гуляш та пур. Кăлпассисем... Шуратса пӗçернӗ çӗр улми...

С.Шавли мăшăрӗ куççулӗпе каçару ыйтрӗ: “Вăл манăн çапласкер, тӳрккес, чӗлхин чаракӗ çук...” – терӗ.

– Эпир пӗлетпӗр. Стихван чире пула фронтра пулаймарӗ... Шел... Çавах та салтаксене хăртма юрамасть... – кӗске пулчӗ Василий Алакӗр сăмахӗ.

Сывлăхшăн та, юратушăн та, телейшӗн те, кил-йышшăн та сыпрăмăр.

– Ульха, аван вӗт ман юлташсем, – ытла йăпăлтатнăн каларӗ Шавли каярахпа.

– Эпӗ сана тахçанах ун пирки систернӗ, – çирӗплетрӗ Ульха.

Çапла хăналантăмăр эпир С.Шавли сăвăç патӗнче. Урама тухсан, А.Алка пирус чӗртсе янă май:

– Йăпăлтатни килӗшмест мана, Вася, – тесе хучӗ.

Эпир пӗрне-пӗри алă патăмăр та кăмăллăн уйрăлса кайрăмăр...

*30.06.04.*

## ЭПИР – ПĔР ВĂХĂТРИСЕМ

Пулать ҫке-ха ҫавăн пек: акă, кун пуҫланнă ĕнтĕ, ҫавах ниепле те уҫăлса-амаланса каяймасть, – тупе ăмăр, унти пĕлĕтсене хальлĕхе ниепле те сирсе яма майĕ ҫук пек туйăнать. Ҫак вăхăтра таҫтан уҫă варкăш килет те – талккишĕпе тăракан ăмăрлăха сирет, пĕр тĕлте пĕлĕт уҫăлса каять те – унăн хушăкĕнчн яр уҫă хĕвел пайăрки шăтарса тухать. Вара кун ҫуталса каять, тавралăха кĕтмен-пĕлмен ырă сăн ҫапать. Александр Спиридонович Артемьев та чăваш литературине ҫав ҫутă пайăрка пек уҫăлăхпа ҫутăлăх илсе кĕрет. Ку манăн шухăш. Унăн пултарулăхĕ тӳрех литературăмăрта хăйне евĕрлĕхпе, хăйĕн курăмĕпе, ăсталăхĕпе палăрăмлă пулса тăчĕ. Александр Артемьевпа иксĕмĕр 1946-мĕшпе 1947-мĕш ҫулсенче “Ялав” журналта сасă патăмăр. Чăваш республикин пичетĕнче пуҫласа пĕри сăвăпа, тепри калавпа тухнă. А.Артемьевăн “Пĕчĕк Лийăн пысăк саванăҫĕ” калавĕ ҫутă кун курсассăнах, чăваш илемлĕ литературине ҫĕнĕ ҫын килсе кĕни ҫинчен калаҫма тытăнчĕҫ. Уйрăмах “Ялав” редакторĕ Александр Алка саванатчĕ, Василий Алакĕр “Чăн-чăн талант килчĕ”, тетчĕ.

Ҫак калав хыҫҫăн А.Артемьев хăйне валли малашшăн ҫул уҫрĕ. Умлă-хыҫлă тенĕ пекех “Ан авăн, шĕшкĕ”, “Пĕрле ӳснĕ тантăшсем”, “Юрату юррисем”, “Ҫул уҫă”, “Чаплă хушамат” ятлă калавĕсем вулакан патне ҫул хыврĕҫ. А.Артемьев хăй те вулакансемшĕн,

уйрӑмах ҫамрӑксемшӗн, кумир пулса тӑчӗ. Эпӗ "кумир" сӑмахран шикленместӗп. Тӗслӗх-семпе ҫирӗплетсе пама пултаратӑп. Вӑл вӑхӑтра Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнче А.Канюкова, В.Канюков ҫамрӑк ӑсчахсем ӗҫлетчӗҫ. Вӗсене М.Я.Сироткин хистесех тӑратчӗ. Института йыхравлатчӗҫ пире ҫамрӑксемпе, студентсемпе тӗл пулма. (Шел, халӗ ҫак тӗлпулусем сӗвӗрӗлсе кайрӗҫ.)

Пӗррехинче Александр Артемьевпа иксӗмӗре чӗнчӗҫ пединститута. Кайрӑмӑр. А.Артемьев ӗҫ планӗсемпе паллаштарчӗ, кайран хӑй ҫырнӑ сӑвӑсене вуласа пачӗ. (Вӑл сӑвӑсем те ҫыратчӗ.) Ҫав тӗлпулу хыҫҫӑн студентсен пӑшӑлтатӑвне илтрӗм: "А.Артемьев пулас Лев Толстой, Г.Ефимовӗ – Константин Симонов"... Паллах, ку сӑмахсем чун ҫине услам ҫу сӗрнӗ пекех ӗнтӗ. А.Артемьев ҫавӑн чухне мана: "Калаччӑрах, тен, чӑна тухӗ", – терӗ йӑл кулса. Шупашкар урамӗнче те А.Артемьева вулакансем курсан ҫаплах савӑнӑҫлӑн калатчӗҫ.

Ку вӑхӑтра, Аслӑ Аттелӗх вӑрҫи пӗтнӗ ҫулсенче, чӑваш ҫӗрӗнче талантлӑ ҫамрӑк авторсем ҫырма тытӑннӑччӗ. В.Урташ малтан калавсен кӗнеки кӑларчӗ, кайран сӑвӑсем кӑлӑплама пуҫларӗ, чаплӑ сӑвӑҫ пулса тӑчӗ. А.Анат, Н.Урпай, А.Клементьев, В.Алентей... Ятсем йышлӑччӗ. Сахалӑшӗ литературӑн вӗтӗ али витӗр тухрӗҫ. Каярахпа Александр Артемьев калӑплӑ япаласем пичетлеме пуҫларӗ. 1950 ҫулта "Саламли" повеҫӗ "Ялав" жур-

налта номертен номере пичетленсе пычĕ. Ку повеçе вуламан çын юлнă-ши вăл вăхăтра? Çук пулĕ. Çак çулсенче вăл Октябрина ятлă хĕрпе паллашрĕ. Кайран вĕсем мăшăрланчĕç. А.Артемьев сĕрме купăс калатчĕ. Çакă та хĕр кăмăлне çаварчĕ пулĕ.

Повесть анăçăвĕ А.Артемьева çĕклентерсе ячĕ пулмалла. Вăл "Хаклă хăна", унтан "Ахманеевсем" повеçĕсене вулакансем патне çитерчĕ.

Ырă ят илнĕ хыççăн ĕçлеме те кăмăллă. Ырă ята çĕклесе çуреме те йывăр. Мĕн тăвайăпăр: нуша пулсан та йăлтах тӳсес пулать. Курмаллине курмалла.

1958 çулта пире А.Артемьевпа иксĕмĕре пĕр çуртах, çитменнине пĕр подъездах хваттерсем пачĕç. Йывăр пулчĕ ятлă-сумлă писателе çав хваттере кĕме. Ун чухне КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарĕнче П.А.Чичикин ĕçлетчĕ. Çав юлташ арăмĕн ялĕнче пурăнакан (Хорнуй ялĕ, Муркаш районĕ) А.Артемьев пирки: "Его на пушечный выстрел не надо допускать к Чебоксарам", – тесе персе ячĕ. Килсĕр-çуртсăр писатель сыпкалатчĕ çав. Юрĕ. Пулнă – иртнĕ. Анчах та хаярран каланă сăмахсем асран тухасшăн мар иккен. Пурнăçăн кукри-макри нумай, вĕсене тӳрлетсе пĕтерме пирĕн ĕмĕр кĕскерех çав...

Александр Артемьев питĕ нумай вулатчĕ. Хăй вуланине конспектлатчĕ те писатель. Н.И.Ашмарин словарьне вара питĕ тăрăшса та юратса конспектланă вăл. Çавăнпах писа-

тель чăваш чĕлхин сĕтекне чухлатчĕ, сăмах тупсăмне те, пĕлтерĕшне те, вăйне те питĕ аван пĕлетчĕ. Писательпе калаçса ларни те хăйне евĕрлĕ университетчĕ. Паллах, юлташла ларнă чух сыпкаласси те пурччĕ. Хăшпĕр чухне вара Александр Артемьев "Как Есенин элегантен, как Байрон красив" тесе каласа хуратчĕ. Халĕ шутлатăп та – писатель хăйне тытма та, хăйĕн хакне те аван пĕлнĕ.

Мускавра вăл Максим Горький ячĕллĕ Литература институтĕнче куçăн мар майпа вĕренетчĕ. Çавăн чухне вăл, вăхăчĕ çук пулсан та, концертсене, чаплă театрсене çÿретчĕ. Çапла майпа вăл Воронеж хорĕнчи юрăçпа – Г.В-па – паллашнăччĕ. Юрăçĕ чиперскерччĕ. Пĕррехинче Переделкинори К.Тренев дачинче эпĕ экзамена хатĕрленсе выртатăп. Общежити çавăнтаччĕ пирĕн. Манăн пÿлĕм аялти хутраччĕ, чÿречесем уçăччĕ. Кĕтмен çĕртен, уçă чÿречерен, урайне темĕн кĕмсĕрт! ÿкрĕ. Шарт! сиксе пăхатăп – урайĕнче А.Артемьев выртать. Г.В-шăн ăна икĕ йĕкĕт хăваланă иккен...

Чипер хĕрсемшĕн темĕн те, тÿсĕн çав. Ара, хăй те чиперччĕ ĕнтĕ Саша Артемьев.

Вăл çырнисене вырăсла та куçарса кăларатчĕç. "Салампи" повеçне С.Трегуб куçарса Мускавра пичетлерĕ. Анчах унăн куçарăвĕ писателе çырлахтараймарĕ. Çĕнĕрен куçарттарас пирки шухăшлатчĕ ăста писатель.

А.Артемьевăн "Çăкăр хакĕ" повеçĕ пичетленсе тухсан, эпĕ рецензи çыртăм. Рецензи ăна килĕшнĕччĕ. "Эпир ахальтен Литература

институтӗнче вӗренмен!" – терӗ вӑл ун чухне хаваслӑн.

Маларах каланӑччӗ: писатель сӑвӑ та ҫырнӑ. Унӑн сӑввисемпе Г.Хирбю, Ф.Лукин, А.Токарев, А.Орлов-Шуҫӑм композиторсем юрӑсем те хайланӑ. "Ӑшӑ ҫумӑр" юрра Т.Чумакова чунпа шӑрантаратчӗ. Радиопа халӗ те итлетпӗр.

Александр Артемьев чӑваш литературине лирикӑллӑ туйӑм, лирикӑллӑ сӑнарсем кӗртнӗ. Чӑваш чӗлхине вӑл чӗрӗлӗх панӑ. Чӗлхе тасалӑхне унран вӗренмелле – асӑрхӑр-ха, пуплевре унӑн пӗр ытлашши сӑмах та ҫук. Чӑваш чӗлхи тасалӑхӗшӗн вӑй хунӑ вӑл, ҫӳпӗлекенсене хивре сӑмахсемпе питлетчӗ писатель. Ҫамрӑк ҫыравҫӑсемшӗн – вӗсемшӗн ҫеҫ-и?! – А.Артемьев тӗслӗх. Унран вӗренмелли нумай.

Пирӗнтен уйрӑлса кайнӑ пулсан та, вӑхӑт хӑй шутне манмасть. А.Артемьев акӑ 80 ҫула ҫитрӗ. Апла вӑл пирӗн йышрах: пӗрлех вӑй хурать. Ҫакӑ – чи пахи.

Писателӗн нумай енлӗ пултарулӑхӗ пирки вӗҫӗмсӗр ҫырма пулать. А.Артемьев ячӗ чӑваш литературинче пурри – хӑех пирӗншӗн телей. Чӑваш чӗлхи сывӑ-чӗрӗ чухне чӑваш халӑх писателӗн чыслӑ сумӗ пире халӑхӑмӑршӑн чыслӑ та типтерлӗн ӗҫлеме йыхӑрса тӑрӗ. Куна эпӗ шанатӑп. Писательпе пӗр вӑхӑтра вӑй хума тивӗҫлӗ пулнӑшӑн саванатӑп.

## ЫРĂ ТĔВĔ

Аслă Аттелĕх вăрçи хыççăн Аслă Çĕнтерӳпе çĕкленнĕ халăхăмăр – выçă-и, тутă-и – пысăк хавхаланупа пурăнатчĕ. Халăхра пĕрлĕх туйăмĕ пысăкчĕ, пĕрне-пĕри пулăшасси тĕпреччĕ. Нимелĕхе, авалтан килекен йăлана, упраттăмăр; вăл халĕ те пур-ха, çапах та сĕвĕрĕлсе пынă пек сисĕнет. Ку хальхи пурнăçран та килет-тĕр: ытларах укçа хуçаланма тапратрĕ пирĕн куç умĕнче. Шел те, нимĕн те тăваймăпăр хальлĕхе...

Вăрçă кунĕсемпе Аслă Çĕнтерӳ тапхăрĕнче пурăннă вĕт эпĕ. Çамрăклăх, яшлăх вĕресе тăнă кашнин чĕринче. Пурне те ăша илме, йăлтах асра тытса малашлăх валли упрама тăрăшнă.

Ун чухне эпĕ чăваш академи театрĕн çумĕнче актерсем хатĕрлекен студире вĕренеттĕм. Ĕмĕтсем пысăкчĕ, çунат сарнăччĕ. Çĕнтерӳ кунĕ хĕвеллĕччĕ, тӳпе тасаччĕ. Çав куна эпĕ паянхи пек ас тăватăп.

Аслă уяв тăнăçлăхĕпе çĕр çине хĕвел пайăркисемпе пĕрле тӳперен канăçпа савăнăç, телей аннăччĕ. Çын хăй хуйхи-суйхине, çухатăвне хуллен манса пыма пуçларĕ, ялсенче, туйĕсем шавлах мар пулсан та, çĕнĕ мăшăрсем утма пуçларĕç, тин çеç çуралнă ача сасси чуна çĕнĕ хăват кĕртме тытăнчĕ. Ку çеç-и? Поэтсемпе прозаиксем, драматургсем тĕнче çине таса куçпа пăхса çĕнĕ поэмăсем, повеçромансем, пьесăсем çырма тапратрĕç, пурнăçри йывăрлăхсене сăнласа парса малашалла йыхăрма пуçларĕç. Çĕкленӳччĕ чун-чĕресенче.

Ака, Чăваш патшалăх академи театрĕнче 1945-мĕшпе 1946-мĕш çулсенче виçĕ çĕнĕ спектакль сцена çине кăларчĕç. Куракансем йышлăччĕ, курав залĕнче пĕр пушă вырăн та пулман. Турех калам: спектаклĕсене Иван Вашки çырнă “Салют хыççăн”, Аркадий Эсхелĕн “Çĕрпе кăвак тӳпе”, Петр Осиповăн “Тăван çĕршывра”, Н.Айзманăн “Хĕвеллĕ кунсем” пьесисемпе лартнăччĕ.

“Салют хыççăн” аван спектакльччĕ. Салтаксемпе офицерсен чысĕпе юратăвĕ, вĕсен тавракурăмĕ çинченччĕ вăл. Василий Михайлов артист вылякан офицер сăнарĕ халĕ те куç умĕнче тăрать, хăлхара сасси çаплах янăрать. Ку спектакле кăмăлласа Л.Агаков прозаик пысăк статья çырса кăларнăччĕ 1946 çулта.

Çак вăхăтра паллашрăм эпĕ Иван Никифорович Вашки драматургпа. Унпа паллашма мана Л.Родионов режиссер пулăшрĕ. “Эсĕ сăвăсем çыратăн пулсан Иван Вашкипе паллаш-ха”, – терĕ.

Иван Вашки сăвăсем çырнине эпĕ пĕлеттĕм-ха. Унăн “Малтанхи парне” кĕнекине те вуланă. Ун патне эпĕ хăйса пытăм-пытăмах. Вăл Л.Родионов патне пынăччĕ пулас, режиссер “Салют хыççăн” пьесине лартать-çке. Иван Никифоровича эпĕ хамăн сăвăсен тетрадьне сĕнтĕм. Тетраде сăвăç хайĕнпе пĕрле илсе кайрĕ. Каялла ыра кăмăлпа таварса пачĕ. “Çыр, вĕрен...” – терĕ мана. Çыракан çамрăка хавхалантарни яланах кирлĕ. И.Вашки хăй, тен, кун çинчен манса та кайнă?

Эпӗ, авӑ, ырӑ тунине ас тӑватӑп. Иван Никифорович сӑввисем "Хатӗр пул", "Сунтал" (хальхи "Ялав"), "Ҫамрӑк большевик" журналсемпе хаҫатсенче пичетленетчӗҫ. Унӑн сӑввисенче Тӑван ҫӗршыв, тӑван тавралӑх, юрату сӑпатланатчӗ. Таса та кӑмӑлӑччӗ унӑн сӑввисем.

Ҫав вӑхӑтра эпӗ Леонид Родионовран Иван Вашки И.С.Максимов-Кошкинский ӳкернӗ "Атӑл пӑлхавҫисем" фильмра вылянине, сӑнар калӑпланине те пӗлтӗм. Ҫапла сӑвӑҫ киноартист та пулнӑ. Вӑл Шупашкарти театр техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ. 1933-1935-мӗш ҫулсенче Ҫамрӑксен театрӗнче вылянӑ. Ҫав театртанах 1936 ҫулта Хӗрлӗ ҫара кайнӑ. Артист сцена ҫинче яланах чунпа вылянӑ. Вӑл калӑпланӑ сӑнарсене куракансем яланах хапӑлласа йышӑннӑ.

Каярахпа эпӗ Иван Вашкипе театр студийӗнчен тухсан "Тӑван Атӑл" редакцийӗнче курнӑҫнӑ. Унта Валентин Урташпа пӗрле кӗнӗччӗ. В.Урташ "Тӑван Атӑл" альманахра "Адельзян" очерк пичетлесе кӑларнӑччӗ. Ку очеркӗ фронтри паттӑр салтаксем ҫинченччӗ. Тата вӑл ҫӗнӗ сӑвӑсем те илсе пынӑччӗ. И.Вашки ҫак альманахра поэтӑн "Тухӑҫран хӑпарсан шурӑмпуҫ" сӑввине пичетлесе кӑларчӗ те, ҫав сӑвӑ ӳрех юрӑ пулса тӑчӗ. Кӗвви Ф.Лукинӑнччӗ. Акӑ, мӗнле ырӑ тӗвӗ туса хурать И.Вашки. Сӑвва пичетлет, кайран сӑвӑ композитор аллине лекет те юрра хывӑнать. Ҫакӑ мар-и ӗнтӗ вӑл юлташа халӑх умне тухма пулӑшни?! Мӗн калӑн – сӑвӑҫа сӑвӑҫ яланах ӑнланать.

Иван Вашки “Тăван Атăл” альманахра пичетлеме Н.Мранькккан “Ĕмĕр сакки сарлака” романăн пĕрремĕш кĕнекине редакцилесе ларатчĕ, вăй хуратчĕ. Тимлесе ĕçлени ал çырăвĕ çине пăхсассăнах питĕ аван курăнатчĕ. Ĕçе тĕплĕ тăватчĕ И.Вашки.

Анчах та 1946 çулхи кĕркунне писательсемпе поэтсене, драматургсене синкер илсе килчĕ. ВКП (б) Тĕп Комитечĕ “Звездапа” “Ленинград” журналсем пирки анлă йышăну кăларчĕ. Çĕршывĕпех сутсе явма тытăнчĕç ку йышăнăва. Акă, чăваш çĕрĕнче те хускалса кайрĕ шăв-шав, ВКП (б) Чăваш обкомĕн ячĕпе А.Вишняков доклад турĕ. Тустарчĕ вара çав çын чăваш писателĕсене: уйрăмах П.Хусанкая лирикăлла сăввисемшĕн, Иван Вашкине “Салют хыççăн” пьесăшăн, П.Осипов, А.Эсхель, Н.Айзман драматургсене те “патак” лекрĕ. (Пьесăсен ячĕсене эпĕ çулерех асăннăччĕ.) Юрать-ха авторĕсем чĕрĕ-сывă юлчĕç, малалла та ĕçлеме вăй-хал тупрĕç. (ВКП (б) Тĕп Комитечĕн йышăнăвне 1980 çул пуçламăшĕнче пăрахăçларĕç.) Влаçра ĕçлекенсемпе хăш-пĕр çынсем чалăшшăн пăхрĕç пулин те, Иван Вашки чăваш литературинче ĕçлеме вăй çитерчĕ, ытти юлташсем те парăнмарĕç. Юрăри пек каласан: “Партия наш рулевой...” пулса тăчĕ вара пирĕн пурнăçра. Писательсем цензура еннелле çирĕппĕн пăхма пуçларĕç, çыру сĕтелĕ хушшинче автор хăй çурăмĕ хыçĕнче редактор тăнине сисме тытăнчĕ. Çаплаччĕ çав, çаплаччĕ...

Каярахпа эпĕ И.Вашкипе пит тĕл пулсах каяйман, Йĕпреçри колхоз театрĕнче ĕçленĕ, унтан Мускаври М.Горький ячĕллĕ Литература институтне вĕренме кайнă.

1953 çулта, Литература институтĕнчен вĕренсе тухсан, эпĕ Чăваш кĕнеке издательствинче ĕçлеме тытăнтăм.

Иван Никифорович кунтах ĕçленĕ-мĕн. Эпир авалхи пĕлĕшсем пек тĕл пултăмăр. Пĕлĕштантăша калама, ăна хапăллама пĕлет-чĕ вăл.

Çак çулсенче И.Вашки "Пăрлă пĕлĕт айĕнче" ятлă нумай пайлă драма çырать, çав хушăрах куçару енĕпе тăрăшса ĕçлет. Акă, сăвăç-драматург А.Кондратенкăн "Курск пĕкки", В.Кочетовăн "Журбинсем" романĕсене чăваш вулаканĕсем патне куçарса çитерет. Çав вăхăтрах чăваш театрĕсем валли А.Н.Островский, А.Крон пьесисене куçарса парать. Куçару вăл пархатарлă та йывăр ĕç. С.Михалков, К.Хетагуров, С.Маршак, М.Исаковский сăввисене те ăнăçлă куçарать И.Вашки. Сăвăç-драматург пĕр ĕçрен те пăрăнман. "Пултараймастăп" сăмах тухнине илтмен эпĕ ун çăварĕнчен.

Чăваш кĕнеке издательствинче ĕçленĕ чухне И.Вашки манăн сăвăлла иккĕмĕш кĕнекене, "Çамрăклăх" ятлине, кăларма пулăшрĕ. Тавах ăна уншăн.

Иван Никифорович, манăн аттепе анне Шупашкара килсен, ятарласах хăналани те пулнă. Ун чухне вăл Ленинград урамĕнчи йывăç çуртра пурăнатчĕ. (Халĕ ку çурт çук ĕнтĕ.)

Каярахпа И.Вашки прозӑлла произведенисем те ҫырма тытӑнчӗ. “Чун ҫути” ятлӑ калавсен кӗнекине 1973 ҫулта ҫутӑ кун кӑтартрӗ. Унтан кӗҫех “Шурӑ акӑш” роман ҫырса пӗтерчӗ. Ку романа “Тӑван Атӑл” журналӑн икӗ номерӗнче пичетлерӗҫ. Пултарулӑх каҫалӑкӗ анлӑ Иван Вашкин.

Иван Никифорович Вашки Куславкка районӗнчи Тури Куснар ялӗнче чӳк уйӑхӗн 7-мӗш кунӗнче 1914 ҫулта ҫуралнӑ. Ку тӑрӑхра писательсемпе поэтсем чылай. Трубина Мархвипе Мария Ухсая ҫеҫ аса илер.

Манӑн ҫакна та каласа хӑварас килет. И.Вашки кун-ҫулӗ театрпа литература хушшинче иртнӗ. Литература писателе ытларах хӑй ытамне илнӗ те – хӑй ытамӗнчен вӗҫертмен.

Ҫулӗсем чылай пулин те И.Вашки нумаях пулмасть “Тӑван Атӑлта” сӑвӑсен ҫӗнӗ ярӑмне кӑларчӗ. Сӑвӑсенче чӗре ҫулӑмӗ амаланса тӑни ҫирӗп палӑрать. Апла сӑвӑҫ чунӗ ҫамрӑклӑх хӑвачӗпе тапсах тӑрать-ха. Куҫару ӗҫӗнче те маххӑ памасть.

“Ялав” журналта та поэт Федор Тютчев сӑввисене пичетлесе ҫутӑ кун кӑтартрӗ. Ф.Тютчев сӑввисене чӑвашла куҫарма хӗн. И.Вашки шикленсе тӑман. Пултарулӑх хӑвачӗ иксӗлменха писателӗн. Хӑйӗн 90 ҫулне вӑл ҫыру сӗтелӗ хушшинче кӗтсе илет. Ручка тытма ӳркенмен алли ҫаплах шурӑ хута тӗрлет-ха. Пурнӑҫра та ҫаплах ырӑ тӗвӗ хӑварма тӑрӑшать.

Вăрăм пултăр пултарулăх ĕмĕрĕ, тапсах тăтăр пултарулăх таса çăл куçĕ!

Ыталатăп сана, ырми-канми ĕçтешĕм!

## "ХĔРЛĔ МĂКĂНЬ ЧЕЧЕКĔ..."

Пирĕн ялта ун пек туслă хĕрачасем халиччен те çук пулĕ. Чăнах. Вĕсем хирĕçнине, çын умĕнче пĕрне-пĕри кӳрентернине курман. Пĕр урамрах пурăнатчĕç хăйсем. Урамĕ вăрăмччĕ вара: ним мар пĕр çухрăм çурă пулать.

Пĕрне – Укçине, тепĕрне – Литюк, виççĕмĕшне Ухвине тесе чĕнетчĕç. Яланах пĕрлеччĕ вĕсем: ташăра та, ĕçре те, вăйăра та. Пурччĕ-ши вĕсен каччисем? Ял çине хыпар-хăнар тухман.

Укçине пĕр çулхине, утă çулнă чухне, кӳршĕ ял каччипе паллашать. Ĕçĕ-пуçĕ вĕсен чиперех ăнса пырать пекчĕ. Пĕр каçхине Алюш, Укçине каччине çапла чĕнетчĕç, ăшĕ вăйăра ташласа питĕ пăшăхнă-ши? – Укçинерен çенĕкрен пĕр курка шыв илсе тухса ĕçтерме ыйтать.

Укçине:

– Ай-пай турух, анне вăрансан, мана тĕпĕ йĕрĕпе хăртса пĕтерет вĕт, Алюш, – тесе хурать.

– Аннӳ çав териех хаяр-и вара? – ыйтать каччă.

– Шăл хушшипе вут тухать, – шӳтленçи пулать Укçин.

– Апла тусĕп, Укçин, – тет те Алюш, кăштахран, хĕре алă парса, хапха айĕнчен пăрăнать.

Шăпи çапла пулнă-ши Алюшăн, ăна хăйсен тĕлĕнче пĕчченех тăракан Ухвине курăнса каять. Алюш хăй йĕркипе калаçу пуçарать те – унта хĕртен пĕр курка шыв илсе тухса пама ыйтать. Ухвине калаççа-туса тăмасть – хапха леш енче çухалать. Кĕçех пы-ысăк шуç куркапа шыв илсе те тухать.

Алюшăн, чăнах та, шыв ĕçесси питĕ килнĕ-тĕр. Виçĕ хутчен канса тăрсах куркана пушатать. Унтан:

– Шывĕ питĕ техĕмлĕ. Пĕтĕм шăмшака уçса ячĕ, – тет.

– Пирĕн çăлкуçĕнчи шывсем симпыл пекех, – хуравлать йĕкĕте хĕр.

– Апла эпĕ сирĕн патăра шыв ĕçме каççерен çÿреме тытăнатăп, – те шÿтлет каччă, те чăннине калать?

– Килĕр, килĕр, – хуравлать Ухвине куларах.

...Çапла, ял ваййинчен хĕре пĕр-иккĕ ăсатса янă хыççăнах Алюшпа Ухвине çырăнса та каяççĕ.

Кайран Ухвине Укçине хĕр-тантăшне: "Каçар ĕнтĕ, эпĕ санран икĕ çул аслăрах та... "вата хĕр" ятне илтесрен шиклентĕм çав, мерекке..." тесе каланă пулать. Куна никам та курман, илтмен. Мĕнле калас, ял тăрăх сăмах çÿретчĕ.

Вăхăт хăйĕннех тăвать. Укçинепе Паклак Павăл çÿренине асăрхама тытăнаççĕ çынсем. Паклак Павăл салтака та кайса килнĕччĕ. Кăсăк этем вăл Павăл. Куршĕ ачи Хветĕр унран пĕррехинче:

– Кала-ха, Павăл. Чăваш чĕлхине пăхă-нас-тăк, санăн хушма яту Паклак мар, Пуклак пулмалла, – тесе перет ярать.

Паклак Павăл аптраса ӳкмест, Хветĕре тӳрех:

– Ку – ди-а-лект, – тесе хурать сăмаха сыпăкăн-сыпăкăн. – Хамăрла каласан “местый ковор”, – шакка парать Хветĕре Паклак Павăл. – Эс ман тавра çӳрекеле, ăс пухсах пырăн, – хушать йĕкĕт ачана.

Çав пĕлмен сăмах туслаштарсах ячĕ вĕсене.

Мĕнле калас, Паклак Павăл çав хушăра Укçине пуçне çавăрнине те тавçăрса илет Хветĕр.

Акă, пĕр ирхине Паклак Павăл патне Хветĕр пырса кĕрет. Павăл пысăк тĕкĕр умĕнче хырăнса тăрать. Çакна курсан Хветĕр (вăл тавçăрулла ача) Паклак Павăла:

– Хĕр çураçма каясшăн мар пулĕ те?.. Ирех капăрланан, – тесе хурать.

– Молодец, Хветĕр! Сисĕмлĕ çын эсĕ!.. Пĕлетĕн-и?! – пӳрнипе тĕллет Хветĕр еннелле: – Кĕçĕр эпĕ авланатăп!..

Урăх пĕр сас-хура та илтĕнмест пӳртре. Çак шăплăха Хветĕр сирет:

– Вара, Павлуша, манпа пачах калаçма пăрахатăн-и?

– Ан пăшăрхан, Хветĕр. Яланах пуплĕ-пĕр... – кĕскен калать Паклак Павăл.

Хветĕр каç пуласса аран-аран кĕтсе илчĕ. Вара Паклак Павăлăн картишне кĕчĕ те хапха хыçне меллĕн пытанса ларчĕ. Ара, Паклак Павăл пулас арăмне çакăнти калинк-керен илсе кĕрет пулĕ ĕнтĕ.

Пĕр çурçĕр тĕлнелле:

– Павăл, чарăн... Ан аташ-ха, – тени илтĕнсе кайрĕ. Кăтăш пулса кайнă Хветĕр вăранчĕ те хăлхине яшт! тăратрĕ.

– Уçтин, туртăшса ан тăр ĕнтĕ... Сĕтел çи хатĕр манăн... Аттепе анне пĕлеççĕ... Санăн аннӳне Хветĕр мик чĕнсе килет... – сăмахĕсене тепле каласа ĕлкĕрет Паклак Павăл? – Эпĕ сана качча илетĕп... Мăшăрланатпăр!.. – Калинкксене уçасшăн пулчĕ Павăл. Çав вăхăтра:

– Туйсăрах мăшăрланатпăр-и? – хыпаланса ӳкрĕ Уçтине, – анне туяпах хĕнесе вĕлерет мана...хама...çакăнтах. – Уçтинен йĕрмĕшӳллĕ сасси илтĕнчĕ.

– Тусĕм çук манăн, Уçтин!.. Эсĕ мана халех кирлĕ... Эпĕ çулăмпа çунатăп... Эпĕ пенсин пички пек... шăрпăк çутсанах çурăлса каятăп... Ăнлан, Уçтин... Эсĕ манăн матка пулатăн!...

– Туйсăрах-и? – йĕрмĕшет хĕр. – Анне çакăнтах çапса вĕлерет...

– Вĕлерейместь... Аннӳ çитнĕ çĕре эпир упăшкипе арăмĕ пулатпăр!..

– Çапла хăвăрт-и?.. Туйсăрах-и?

– Туй вăл ворма анчах!.. Эпир..эпир...

Çак вăхăтра темĕн çатлатрĕ. Те çупкă лекрĕ Паклак Павăла?.. Унтан çын чупса кайни илтĕнчĕ...

Апла Уçтине тарса хăтăлчĕ.

Хапха умĕнче пĕр хушă питĕ шăп тăчĕ.

Унтан кĕçех Павăл пăлханчăклă-савăнăçлă сасăпа хыттăн каласа хучĕ:

– Литюк?! Ку таранччен ăçта çуренĕ эсĕ?..

– Аппа кĕрсе тухма каланăччĕ те...

– Пит аван, Литюк... Пит аван... Эсĕ маншăнах кая юлнă! Литюк, качча тух мана... Эпĕ çунса кĕллениччен качча тух!.. Сĕтел çи хатĕр манăн... Аттепе анне пĕлеççĕ!.. – Литюка алă вĕççĕн çĕклерĕ пулас Паклак Павăл... Калинкке алăкĕ яр! уçăлса кайрĕ те – Павăл картишне кĕрсе тăчĕ.

Хветĕр çиçĕмле хăвăртлăхпа çенĕк алăкне уçса ячĕ.

– Молодец!.. – хаваслăн янăрарĕ Паклак Павăл сасси.

...Çапла авланчĕ Паклак Павăл.

Уçтине-и? Нимĕн пулман евĕрех пурăнчĕ.

Çапах та кăштах улшăнчĕ. Каçа юлса таврăннă чухне "Хĕрлĕ мăкăнь чечекĕ" тесе юрла-юрла яма тытăнчĕ. Юррăн ытти сăмахĕсене никам та, нихăçан та илтмен... "Хĕрлĕ мăкăнь чечекĕ" тени илемлĕн илтĕнет.

Пурнăç-пурнăçах. Уçтине амăшĕ ӳпке чирĕпе ĕмĕрлĕхех куçне хупрĕ. Амăшне типтерлесе те чыслăн пытарчĕ. Ял-йышпа асăннă чухне кăна Уçтине: "Анне мана туйпа качча парасшăнччĕ... Параймарĕ. Мана хăр тăлăха хăварчĕ... Ӳпкелеместĕп. Эпĕ чĕрĕ... Пурăнăп-ха. Аннене асăнăп, вăл çеç пире ан асăнтăр", – тесе куççульпех йĕнĕ теççĕ.

Чăнах та, Уçтине пуçне усса çӳреместчĕ. Ĕçлетчĕ. Колхоз бухгалтерийĕнче тăрăшатчĕ. Ĕçрен таврăннă чух, кил патнелле çывхарса пынă чухне çеç час-часах "Хĕрлĕ мăкăнь чечекĕ" тесе юрласа яма пуçларĕ.

Çакна Тимуш çине-çинех асăрхама тытăннă. Вара вăл Уçтине хыççăн питĕ шăппăн йĕрлеме тĕв тунă. Пĕрре Тимуш, Уçтине хапха патнелле çывхарса пынă чух, хĕр çурма сасăпа: "Эх, ăçта-ши ыр арçын? Ăна эпĕ хĕрӳн ыталаттăм, пĕтĕм чуна параттăм... Хĕрлĕ мăкăнь чечекĕ!" тесе юрласа янă иккен.

Тимуш илтмĕш пулнă. Уçтине сывлăх суннă та хăй çулĕпе уттарнă. Тимушăн арăмĕ вилнĕччĕ. Пĕр çул та пурăнаймарĕ вăл çамрăк арăмпа. Мăшăрпа пурăнса курнă çын мăшăр шыратех ĕнтĕ.

Уçтине хыççăн сассăррăн та чĕмсĕррĕн пĕр уйăха яхăн çӳрекен Тимуш Уçтине хапхи патне çитессе кĕтнĕ-тĕр? Уçтине каллех: "Эх, ăçта-ши ыр арçын? Ăна эпĕ ыталăттăм, пĕтĕм чуна параттăм... Хĕрлĕ мăкăнь чечекĕ!" тесе хурлăн юрласа ярать. Çав вăхăтра Тимуш Уçтине умне яшт! тӳрленсе тăрать те: "Çавă ырă арçын эпĕ, Уçтин!.. Хĕрлĕ мăкăнь чечекĕ", тесе юрласа ярать хĕрӳллĕн.

– Эх, хĕрлĕ мăкăнь чечекĕ!.. Тимуш, уç, эппин, хапхана!.. – тет Уçтине Тимуша.

Халĕ, хăш-пĕр ăшă каçсенче, уçă кантăкран урамалла арçынпа хĕрарăм "Хĕрлĕ мăкăнь чечекĕ" тесе юрлани илемлĕн юхса тухать. Чăнах!

*02.09.04.*

## ТĔЛĔКЕХ-ШИ?

Мана операци турĕç. Вăл вăраха тăсăлнă пулас. Операци пӳлĕмĕнчен илсе тухнă чухнех эпĕ наркоз витĕмĕнчен хăтăлтăм. Куçа уçса ятăм. Сестрасем çакна сисрĕç те:

– Вăранчĕ!.. Апла театра каятпăр!.. – тесе ячĕç савăнăçлăн.

Эпĕ те:

– Каятпăр... каятпăр, – тесе персе ятăм вăйсăррăн.

Мĕншĕн театра-ха? Ман мăшăр артистка, – çавна аса илчĕç пулмалла медицина сестрисем.

Кĕçех мана реанимаци пӳлĕмне илсе кĕчĕç, кравать çине асăрханullăн тирпейлесе вырттарчĕç. Эпĕ каллех тĕлĕрсе кайнă. Çав вăхăтра реанимационнăйне анне кĕрсе тăчĕ. Вăл чĕп-чĕрĕ сăнлă, яр уççăн курăнать. (Вăл çĕре кĕни нумай пулать ĕнтĕ.) Ăна курсассăн эпĕ унран:

– Илсе кайма килтĕн-и? – тесе ыйтрăм.

Вăл мана:

– Георги, илсе каймастăп. Эсĕ мĕнле выртнине килсе курас терĕм, – шăппăн хуравларĕ вăл мана, унтан вăрах тăмарĕ, тухса кайрĕ, – "кайрĕ" сăмах вырăнсăр пулĕ – сывлăшра темĕнле майпа тĕтреллĕн çухалчĕ.

Куçа уçса ятăм. Сестра çывăхрахчĕ. Унран:

– Эпĕ калаçман-и? – тесе ыйтрăм.

– Çук-çке... Питĕ лăпкă выртрăр, – хуравларĕ вăл мана. Çак курăну пирки паян кун та шухăшлатăп. Ара, вилнĕ çын чĕрĕ пек реанимационнăйне кĕрет. "Илсе кай-

мастăп", тет. Апла мана анне пурнăç парнелесе хăварнă? Çакăн пирки юлташсемпе те, мăшăрăмпа та калаçса пăхнă: вĕсем те пурнасси пирки пуплеççĕ.

Тĕнчере эпир пĕлмен хăват пур-ши вара? Уççăн калама та хĕн, çапах та эпир пĕлмен вăй пурах.

Ара, пултăр-и? Кун-çул параççĕ вĕт... Эпĕ пурăнатăп.

*24.02.05.*

## ТУПМАЛЛИ

Сăвăсем. . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Поэмăсем . . . . . . . . . . . . . . . 95
Шухăш пайăркисемпе аса илÿ
тĕпренчĕкĕсем . . . . . . . . . . . . . . 149

Ефимов Георгий Андреевич

# ЛУЧЕЗАРНЫЕ МЫСЛИ

Стихотворения
Поэмы
Этюды из жизни

Под редакцией автора
Корректор Сидоров В.П.
Компьютерный набор Тихонова А.В.

Подписано к печати 25.05.2005.
Формат 60x84$^{1}/_{32}$. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Гарнитура Таймс.
Усл.печ.л. 6,25. Тираж 200 экз.

Издательство «Калем».
Лицензия ЛР № 030927 от 10.10.99 г. Госкомпечати РФ.

Отпечатано в типографии издательства «Новое время».



Александр Иванович Федотов Муркаш районӗнчи Сыпайкасси ялӗнче учитель кил-йышӗнче ҫуралса ӳснӗ. Чӑваш ял хуҫалӑх академийӗнчен вӗренсе тухнӑ.

Чӑваш Республикин ял хуҫалӑх министрӗнче тӑватӑ ҫула яхӑн вӑй хунӑ, унтан "Чувашхлебопродукт" генеральнӑй директорӗнче тӑрӑшнӑ.

Хальхи вӑхӑтра Александр Иванович Ҫӗнӗ Шупашкарти ҫӑкӑр завочӗн директорӗнче ӗҫлет. Унӑн икӗ ывӑл ача ӳсет.

А.И.Федотов – Чӑваш патшалӑх Канашӗн депутачӗ, чӑваш литературине питӗ юрататъ. Мана спонсор пулса тӑватӑ кӗнеке: "Ӗмӗр иртет – кун юлать", "Венчет ҫӗрри", "Хир-хир урлӑ каҫнӑ чух", "Шухӑш пайӑркисем" кӑларма пулӑшрӗ.

Ӗмӗрех тав А.И.Федотова!